Ч(Чув)
К 89
82.915-чув

ЯЛАВ
БИБЛИОТЕКИ

Владимир КУЗЬМИН

# АТТЕСЕН ÇУЛĔПЕХ

Национальная библиотека ЧР
4-032915

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К
С(чув)
К 89

«ЯЛАВ» библиотеки
3 (99) кӑларӑм

Владимир КУЗЬМИН

# АТТЕСЕН ҪУЛӖПЕХ

Повесть

ПРОВЕРЕНО
2010

РСФСР КП Чӑваш рескомӗн издательстви
Шупашкар — 1991



Владимир Прокопьевич Кузьмин Чăвашъенĕнчи Вăрнар районне кĕрекен Хурăнсур Çармăс ялĕнче 1937 çулхи сăпасра çуралнă. Колхозниксен çемйинче ашшĕ-амăшĕпе пĕрле ачаранах ялхуçалăх ĕçне хăнăхнă. Ялсем тăрăх кино та кăтартса çӳренĕ. Салтака кайса килнĕ хыççăн колхозра ĕçленĕ. Вăрнар район хаçатĕнче журналистика çулĕ çине тухнă. Йĕпреç райхаçачĕпе «Тракторострой» хаçат редакторĕ пулнă. Элĕк райхаçатĕнче, «Молодой коммунист», «Советская Чувашия» хаçатсенче, Чăвашрадиора вăй хунă. Юлашки çулсенче — «Капкăнпа» «Тăван Атăл» журналсен тĕп редактор заместителĕнче. Халĕ вăл мĕнпур чăвашсен «Вучах» хаçатне ĕçлеме куçнă.

Владимир Кузьмин ачаранах илемлĕ литература енне чунĕпе сулăннă, алăпа çырса журнал кăларнă. Майĕпен унăн очеркĕсемпе фельетонĕсем, калавĕсемпе шӳчĕсем пичетленме, эфирта янăрама пуçлаççĕ. Вулакансем ăна ытларах «Шурăмпуç çăлтăрĕ», «Виçĕ юман», «Хулăн тетрадь», «Шăратнă сыпă», «Юрату кăварĕ», «Çĕр пики» повеçсем, «Тип мунча», «Шухăшлама вăхăт пур-ха», «Картлашка», «Сава Савви савалать» кĕнекесем тата «Алари пӳрнесем те тан мар та...» ярăмпа çырнă калавсем тăрăх пĕлеççĕ.

Пĕлĕвне вăл И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш педагогика институтĕнче, партин Чулхулари аслă шкулĕнче тата халăхра вĕренсе ӳстернĕ. 1961 çултанпа — КПСС членĕ.

32015 чув

*Ашшӗпе ывӑлӗ пӗр урапапах чупаҫҫӗ.*

I

— Эй, ырӑ ҫынсем! Пулӑшӑр!

Хӗл куҫҫульне юхтарса пӗтерме пуҫланӑ Киремет ҫырминне хӑйӑлтирех вӑйсӑр сасӑ мӗскӗннӗн илтӗнет.

— Тархасшӑн, пулӑшӑр кам та пулин! Вилетӗп...

Тавралӑха чӗрӗлӗх уҫҫи кӗртнӗ ҫур хӑйӗн хӑватлӑ шавӗпе хӑпартланса ним пулман пекех тулли савӑнӑҫпа ашкӑнать. Этемӗ, выльӑх-чӗрлӗхӗ, вӗҫен кайӑкӗ. хурт-кӑпшанки — пурте, пурте ҫутҫанталӑк тапхӑрӗн ҫурӑлса чечекленекен аталану ытамӗнче. Такан чуччувӗ, тӗнче сехечӗ пек, вӑхӑт шутласа пӗр ҫеммӗн хӑйклатать. Миҫе шаккарӗ-ши вӑл. Турпан Пантелейӗ шутне те ҫухатре ӗнтӗ. Сукмакпа ҫырмана чиперех анчӗ. Шырлан урлӑ хунӑ яка пӗренерен ура ярт шуса кайрӗ те, аялалла шаллатнине сиссе те юлаймарӗ. Халӗ, лаппрана кӗрсе ӳкнӗскер, сивӗпе халран кайнине пула, ниепле те ура ҫине ҫӗкленеймест, кӑвакарнӑ кӗреҫе сухалне сарса хурӑн пӗренесем ҫине тӗмсӗлсе пӑхса выртать. Урисене шӑнӑр туртнипе йывӑррӑн ахлатса илет те, пӗтӗм вӑйне пухса, татах кӑшкӑрам пекки тӑвать:

— Эй, илтет-и кам та пулин? Ҫӑлӑр!

Ял та, хӑйсен Кереметкасӗ те йӑлтах ҫурхи имлӗхпе ирӗлсе кайнӑ-ши? Ма никам та унталла-кунталла утмасть-ши? Пӗр ҫын чунӗ пуласчӗ хӑть. Ҫапах та... Выртсан-выртсан, хӑлхана юрӑ сасси кӗнӗ пек туйӑнчӗ. Акӑ, ҫав сасӑ ҫывхарсах-ҫывхарсах килет... Турпан Пантелейӗ куҫне уҫса пӑхрӗ те сылтӑм ҫыранран ыталанса анакан ватӑ ҫынсене палласа илчӗ: Перун Пимӑнӗпе Усламҫӑ Прухӑрӗ.

Авӑннӑ хӑмла шалчи пек кӗлеткипе силленсе вӑраммӑн утасласа утать Перун Пимӑнӗ. Сухаллӑ янахне, шӑртлӑ мӑйӑхне сылтӑм аллипе шӑла-шӑла илет. Ҫӑра харшӑсем айӗнчи кушак аҫинни пек куҫсем чалтӑртатса хӗм сапрӗҫ. Яланхиллех, лапчӑк сӑмсин сулахай ҫунатти кӑлт-кӑлт сикет. Ӗҫсен ҫапла пулать унӑн.

Сылтӑм аллипе ӑна хулӗнчен Усламҫӑ Прухӑрӗ ҫатӑрласа тытнӑ. Каска пуканӗ пекскер, ун ҫумӗнче аран ӗлкӗрсе кӑл-

тăртатса пырать. Чалтăркка шĕвĕр сухалĕ кăвакарнă. Мăкăрăлса тухса тăракан питçăмартийĕсем шыçса хĕрелсе ларнă.

*«Эс те пуян, эп те пуян,*
*Эс те чее, эп те чее —*
*Иксĕмĕр те эпир пĕр ялтан.*
*Пирĕнтен пуянни, пирĕнтен чейи*
*Никам та çук»,* —

çырмана янраттарать хулăн сассипе Перун Пимăнĕ. Ун хыççăн Усламçă Прухăрĕ кашни сăмахне татса юрлать:

*Вĕлтрен хаяр, вĕлтрен хаяр,*
*Вĕлтрен хаяр тееççĕ.*
*Алпа тытмасан, таптамасассăн,*
*Вĕлтрен пĕртте хаяр мар...*

— Çапла пуль, Пимăн кум?»

Пĕрене кĕпер тĕлĕнче чарăнчĕç те вĕсем, Турпан Пантелейне асăрхаса, аллисене пĕр-пĕринчен вĕçертрĕç.

— Куратăн-и, кум?—Усламçă Прухăрне айăкран кăлт тĕртрĕ Перун Пимăнĕ.—Ха-ха-ха! «Пирĕн Пантелей—тур панă телей» турă панинех тупнă. Х-ха-ха!

— Хи-хи-хи! Епле çиет мăнкун пăттине Турпан пан. — ихĕрчĕ Усламçă Прухăрĕ. — Тавсье! Юрла пирĕнпе. Ĕлĕкрех мĕнле шăрантараттăнччĕ...

— Мăшкăлласа тăриччен, ална часрах тăсса парасчĕ, — хăйăлтатса тухрĕç халсăр çын çăварĕнчен пулăшу сăмахĕсем. — Ухху-ху-ху, шăнса кӳтрĕм...

Перун Пимăнĕ хурăн пĕрене çине хăпарса тăчĕ те, аялалла йĕрĕнчĕклĕн пăхса, шăл витĕр курайманлăх çумăрĕ пĕрĕхтерме пуçларĕ:

— Ха вăл, пулăшу ыйтать. Ак çакна тăсса памалла мар-и сана, антихриста? Чуркӳ чанне антарнăшăн турă çапла айăплаpĕ сана! Вырт шăнса! Киреметпе ытакланса! Вил çак Киремет çырми тĕпĕнче.

Айккинче кускаласа çӳрекене Усламçă Прухăрĕ çăтмаха лекнĕ пек хĕпĕртесе шăлне йĕрчĕ:

— Хи-хи-хи! Пурнăç... Шăпа... Акă вăл ăçта турă парни. Курать вăл çӳлти атте пире, курать кам мĕн тунипе туманнине. Пимăнпа Прухăра пĕтерсе тĕп тăватăп терĕн пуль. Çу-ук, çут тĕнчене вилме çуралман-ха эпир — Перуновсемпе Усламовсем. Ял чиркӳне хуптарса Пимăн кума ĕççĕр тăратса хăвартăн. Мана Масар тăвайккине чуллă çĕр çине хуса ятăн. «Пуппа единоличник — халăх тăшманĕсем!» — тесе сухăраттăн. Хи-хи-хи! Колхоз... Ху турăн ăна — хăвах пăч-

лантăн, акă, унпа. Мĕн усси унран — ял халăхне те, патшалăха та тăрантарайман ушкăн хуçалăхĕнчен?! Ушхуç-уçхуç-выçхуç. Çав выçхуç юхтаракан сысна лапринче выртатăн халĕ асапланса. Хи-хи-хи! Утмăл çул кĕтнĕ телейна тинех тупрăн иккен, кармаçăвар. Хи-хи-хи! Юрласа вырт халĕ хăвăн çамрăклăх юррине. Ай манса та кайрăн-и? Аса илтерес мар-и? Итле.

Турпан Пантелейĕ чĕнмерĕ, иккĕшне те куçĕпе хаяррăн пăха-пăха илчĕ çеç. Пулăшуçăсăр çынран Усламçă Прухăрĕ чунĕ каничченех мăшкăллас терĕ пулас, саркаланса, юрласа ячĕ:

*Кĕмĕлтен кĕпер хывтарăттăм,*
*Юписене пăхăртан лартăттăм.*
*Ылтăнран ăракатка тыттарăттăм.*
*Ылтăн ăракатка айккине*
*Ултă куçлă çăлсем чавтарăттăм.*
*Ултă куçлă çăлсем таврашне*
*Ултă улма йывăççи лартăттăм...*

— Çитет, кум,—чарчĕ ăна Перун Пимăнĕ. — Хăйĕн юррине юрласа пĕтернĕ вăл халь. Çўлти турă мĕн панипе çырлахтăр. Мĕн кĕтмеллине кĕтсе илнĕ: кĕмĕл кĕпер те хывтарнă, авă, колхозра, пăхăр юпа та ларттарнă, ылтăн ăракатка та тыттарнă, çăл алттарса улмуççи те ларттарнă... Куç умĕнчех пуянлăхĕ. Авă, кунçул кĕперĕ урлă каçса шăпа шăтăкне шăпах майлашăнса выртнă, коммунизм тăвакан. Савăн ĕнтĕ çĕнĕ пурнăç керменĕнче. Аминь.

Шырлан тепĕр енне каçнă туссем каллех ыталанчĕç те, хăйсен юррине малалла тăсса, çаврăнса пăхмасăрах тайкаланса уттарчĕç.

*Пире усал, пире усал,*
*Пире усал тееççĕ.*
*Тарăхтармасан, çиллентермесен,*
*Эпир пĕртте усал мар.*

— Эх, йытăсем... Çĕр ятне çĕртме çуралнăскерсем... А-ах, ыш-ы-ыш, — тарăхнипе ним тăваймасăр хăй тĕллĕн калаçрĕ Турпан Пантелейĕ, малалла туртăнса пăхрĕ, анчах кĕлетки итлемерĕ, аллисем те, çыхса янă тукмаксем пек, вырăнтан хускалмарĕç.

«Тăн çухатас марччĕ, пĕр-пĕр ырă чунлă çын килсе тухĕтухех», — тесе шухăшларĕ вăр çырана мекеçленсе хăпаракан путсĕрсем еннелле тинкернĕ май.

Киреметкассинчи чуччу çаплах вăхăт шутлать. Ахăртнех

ун ҫинче ярӑнакан каччӑпа хӗр пӗр-пӗрин куҫӗнчен ҫурхи ӑшӑ кулӑ сӑрхӑнтарса илсе чунӗсене кантараҫҫӗ пуль. Йӑмра айӗнче выляса-чупса ахӑракан яш-кӗрӗм кӗртлевӗ ҫырмана юхса анать. Ача-пӑча янрани вӗҫе-вӗҫе килет. Мӗн тӑвӑн, ҫутҫанталӑкӑн, унпа пӗрлех этемӗн те, хӑйӗн вӑхӑчӗ-ҫке. Ниҫта шӑнӑҫайми ҫӗклентермӗш кашнин чун-чӗрине чӗрӗ шыв сапса вӑратнӑ. Ӑҫтан-ха килте ларӑн, лӑпкӑн ҫывӑрӑн. Ҫав вӑхӑтӑн ҫыхӑнуллӑ тымарӗ тӑрӑх пӗтӗм чӗрӗ чуна, ӳсентӑрана ҫӗр сӗткенӗ йӑрласа хӑпарать. Никам тытса чарайми, никам ҫӗнтерейми хӑват кӗрлет пурнӑҫ тымарӗнче. Авӑ, Турпан Пантелейӗнчен инҫех мар, хытнӑ юшкӑна шӑтарса, симӗс курӑк сӑмсаланнӑ, вӗсем хушшинче — кукшапуҫ чечекӗ. Перун Пимӑнӗпе Усламҫӑ Прухӑрӗ атӑпа ҫӑрса иртнӗ тӗлте аманнӑ тунасем пусӑрӑнса лапчӑннӑ. Ҫӗр вӗсене те, ӑна та хӑй ҫумне ҫыпӑҫтарнӑ. Вӗсен те, унӑн та ҫӗртен уйрӑлса хӑпма вӑйхал ҫитмест. Нивушлӗ вӗсем те чӗрӗлеймӗҫ? Нивушлӗ вӑл та ҫӗкленеймӗ? Куҫра куҫҫуль пӗveленчӗ, ҫурхи шыв пек тулса ҫиелтен тӑкӑнса кайрӗ, шапӑр-р юхса анчӗ сысна лапри ҫине... Пите пӗҫертсе, сухала йӗпетсе хӑварчӗ те... типрӗ. Кӗрлесе тапса тӑмасть иккен ватӑ ҫын кӗлеткинче ҫӑлкуҫ.

Киремет ҫырминчи шӑплӑх, Киреметкассинчи шав Турпан Пантелейне ачалӑха, ҫамрӑклӑха, ӳссе аталанса ҫитнӗ вӑхӑта пӗтӗмпе-пӗтӗмпе тенӗ пекех аса илтерчӗҫ. Ҫыннӑн ҫут тӗнчепе сывпуллашас умӗн ҫавнашкал тертлӗ самант пулать тенине илтнӗскер вӑл, вилесрен хӑра-хӑрах, майӗпен кустарчӗ асӗнче хӑйӗн кунҫул урапине пурнӑҫ ҫулӗпе...

Турӑ сакунне вӗренсе йӑлӑхнӑ ачасем уҫӑ сывлӑша сирпӗнсе тухрӗҫ. Икӗ пуҫлӑ йывӑҫ чиркӳ умӗнчи анлӑ лаптӑкра чупма шикленчӗҫ. Чӳречерен пачӑшка курма пултарать. Сивӗ куҫлӑ, хаяр сӑн-питлӗ, хура ҫӑра сухаллӑ Ваҫҫили атте питӗ хӗрхенӳсӗр ҫын. Урокра тӳрӗ лармасассӑн та, мӗн ыйтнине тӗплӗн каласа памасассӑн та, кӗлле-мӗне ытахальтен тусассӑн та хӑлха пӑрма шутсӑрах ухутӑ. Прихххут шкулӗнче вӗренекенсем ҫавӑнпах унран вӑрттӑн Хӑлхапӑран тесе мӑшкӑлласҫӗ. Ывӑлӗ, Пимӑн та, хӑрать унран, ҫавӑнпа хушӑран ирӗксӗрех пӑрӑнма хӑтланать.

Тӑсланкӑ, хыткан Пимӑнпа лутака, куктӗриллӗ Прухӑр тата тӑлпан кӗлеткеллӗ, ҫӳллӗ Пантелей вӗренме пуҫланӑранпах пӗр вӑрӑм партӑ хушшинче лараҫҫӗ. Прухӑр — Усламҫӑ Ҫитӑрӗн ачи. Пантелей ашшӗ, Турпан Павӑлӗ, вӗсем патӗнче тарҫӑра ӗҫлет. Хӑйсем мӗнле тата хӑш вӑхӑтра туслашса кайнине чухламаҫҫӗ те виҫ шӗвӗр. кашни кун шкула

çӳреççӗ, выляççӗ, аташаççӗ, хушӑранӑ çапӑçса та илеççӗ. Пачӑшкӑпа лавккаçӑ хӑйсен ачисене чухӑн ачипе çӳреме чарса пӑхнӑ-ши, чарса пӑхман-ши, ӑна пӗлме хӗн, анчах туслӑхӗ вӗсен çулран-çул çирӗпленсе пырать. Ваççили атте вӗсене парттӑ хушшинчен уйӑрса лартмасть. Сивӗ чунлӑ пулсан та, вӑл пӗчӗкскерсен кӑмӑл-туйӑмне хуçма шутламасть пулас.

Шкул нушинчен ирӗкленнӗ туссем урам тӑрӑх чупрӗç. Çула май Прухӑр вӗсене, яланхи пекех, лавккана чӗнчӗ. Пӗрле Пантелее те шушкӑ-пӗремӗк е сахӑр-канихвет лекекенччӗ. Киремет çырминче выляма ирӗклӗ те, çавӑнпах Пимӑнпа Прухӑр ялан Пантелей пурӑнакан Кknown Киреметкассине туртӑнаççӗ. Лавккана кӗрсе тухнӑ хыççӑн вӗсем тӳрех ял хыçӗнчи çав хӑрах урамаваскарӗç. Киремет çырми урлӑ ӑмӑртмалла чупса каçрӗç. Пантелей малта, ун хыçӗнче Прухӑр, хыçалта Пимӑн пыраççӗ.

— Хурӑн шывӗ ӗçес килет-и? — ыйтрӗ Пантелей.

— Эс пурак лартса хӑварнӑ-им? — çырма хӗрринчи ватӑ хурӑн еннелле пуçне сӗлтсе кӑтартрӗ Прухӑр.

— Ирех çакнӑччӗ, хальччен тулса тӑкӑнса та кайнӑ пуль. Атьӑр!

Хуралса ларнӑ хытӑ хупӑллӑ хурӑн тӑрӑх пакша пек хӑвӑрт чакаланса хӑпарчӗ те Пантелей тулли пурака илсе антарчӗ, хӗрринчен сыпса пӑхнӑ хыççӑн, Пимӑна тыттарчӗ.

— Хи-хи-хи! Киремет хурӑнӗн юнне ӗçекен пуп ачи. Çылӑх, çылӑх пулчӗ сана, — мехлесе ӗçекен Пимӑнран сиккелесех кулма пуçларӗ Прухӑр.

— Выçлӑх, ӗçсе ярасран сехӗрленсе ӳкрӗн те, çавӑнпа хӑратан, — пурака Прухӑра тыттарчӗ Пимӑн. — Ме, кӳп. Ах, тутлӑ, çылӑхран темиçе хут сиплӗрех.

Прухӑр, хурӑн шывне лӑнкӑртаттарса ӗçсе ячӗ те, ме, çак тесе, пурака Пантелее тыттарчӗ.

Хӑрӑк тӑрӑллӑ хурӑнран инçех мар юман юпа çумне хӑмапа çапса тунӑ часавай пур. Шаймӑксем унта çитсе курмасӑр хӑвармарӗç.

— Ай-турух! Киремете мӗн чухлӗ парне панӑ мӑнкун ячӗпе?! — тӗлӗннипе куçӗсене чарса пӑрахрӗ Пимӑн. — Пирӗн чиркӳри пекех.

— Атьӑр тутанса пӑхар çатма икерчине, ман хырӑм выçать, — терӗ Пантелей. — Чӑкӑт та пур.

— Ха, вак укçа та пур... — куçӗсене йӑлтӑртаттарчӗ Прухӑр.

— Тытса хуçлатса лартать ак киремет е шăтăка сиктерет, — хăратрĕ Пимăн.

Вăл вăхăтра ĕнтĕ Пантелей кашнинех çатма икерчипе чăкăт, валеçсе пама ĕлкĕрчĕ.

— Çийĕр, ан хăрăр. Наркăмăшлă мар пуль, вĕлермĕ.

Пантелей çăвар тулли чăмлать. Ăна курса ыттисем те икерчĕпе чăкăта пĕтĕрттерчĕç.

— Каласа парас-и сире асаннерен илтнине, — хырăмне шăлса илчĕ Пантелей.

— Мĕн çинчен?

— Кала, кала.

Пантелей мăн çын пек пулса тусĕсене çапла ăнлантарчĕ:

— Тахçан ĕлĕк-авал çак çутра, икĕ çырма хушшинче, сĕм вăрман пулнă. Унта Турпан ятлă чăваш паттăрĕ пурăннă. Вăл пусмăрçăсенчен тарса килсе хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле вăрттăн çĕрте йăва çавăрнă, ял пуçарса янă.

— Пирĕн яла-и? — ыйтрĕ Прухăр.—Ма тата Турпан ятлă мар пирĕн ял — Хурăнсăр?

Пимăн ун карттусне куçĕ таранах пусса лартрĕ:

— Итлеме пар-ха. Шкулта та çавах эс, тулăксăр хăтланан.

Хăйне чарса лартнăшăн кўренме шутламарĕ те Пантелей, мĕн пĕлнине малалла びкаларĕ:

— Турпан чăваш йăваш пулман. Хăйсене тытма килнĕ патша тарçисене хирĕç вăрçă пуçарнă. Анчах кайран, салтаксем ярса, вĕсене аркатса тăкнă — кама вĕлернĕ, кама каторгăна янă. Турпан ялĕ вырăнĕнче вара ав çав хурăн çеç тăрса юлнă. Хăй паттăррăн çапăçса вилнĕ тĕлте Турпан чунĕ сыхланса юлнă. Çав чун халĕ те пурăнать, вăл питĕ хăватлă, тем тума та пултарать. Унран хăраса часавай лартнă. Ăна юрама тесе çынсем кунта апат-çимĕç, укçа йăтаççĕ, вилĕмсĕр чуна пуççапаççĕ.

— Ай, хăрушă кунта, усал сывлăш явăнакан çĕрте, — сехĕрленсе ўкрĕ Пимăн. — Киремет вăл — усал сывлăш вырăнĕ, тетчĕ атте те. Эс, Пантелей, Турпан киремет йăхĕнчен апла...

— Патшана хирĕç пынă чăваш киреметĕнчен тухнăскер, — саралнă сайра шăлне йĕрчĕ Прухăр.

— Эх, лĕпĕртисем! Эсир — хăвăр усал киреметсем, — парăнасшăн пулмарĕ Пантелей. — Пирĕн Турпан аслă асатте тĕрĕслĕхшĕн кĕрешнĕ. Тахçанах вилнĕ пулсан та, ячĕ юлнă унăн. Ун сывлăшĕ ячĕпе Киремет уйĕ, Киремет хурăнĕ, Ки-

ремет çырми, Киремет çăлкуçĕ пур. Киреметкасси те пур. Эх, пĕлместĕр-ха эсир...

— Мĕн пĕлместпĕр?

— Сирĕн кас çинчен-и?

— Паллах, — çĕнтернĕн пуçне каçăртрĕ Пантелей. — Ма та ма-а! туса тăратăр сурăхла? Итлĕр малалла. Салтаксем Турпан аслă асаттене вĕлерне хыççăн, ун ялĕнчен, Турпанран, юлнă çынсем çырма леш енне каçса тепĕр ял çавăрнă. Турпан пăхаттир нуши тек килсе ан çаклантăр тесе, çĕнĕ яла Хурăнсăр ят панă. Турпан йывăçне Киремет йывăçĕ теме пуçланă. Ялта унтанпа хурăн ӳстермен. Кайрантарах пирĕн асаттесем кунта куçса ларнă та урам пуçласа янă. Киреметкасси, теççĕ ăна. Елĕкхи ятпа Турпан теме те юрать. Ăнлантăр-и халь эпĕ мĕншĕн Киремет хурăнĕн шывне ĕçме те, часавайри çатма икерчипе чăкăта çиме те хăраманнине? Мĕншĕн тесен вĕсем пурте пирĕн Турпан аслă асаттен хăватлă сывлăшĕпе сывлаççĕ. Вăл паттăр çын пулнă. Асанне калать, çав ват хурăн имлĕх-сиплĕхĕпе эсĕ те пăхаттир пулăн-ха, тет.

— Эп çапах киреметрен хăратăп. Атте пĕлес-тăвас пулсан-и паян мĕн хăтланнине... — чĕтреме ерчĕ пуп ачи.

— Эй тата! — терĕ Прухăр. — Киремет усал сывлăш вырăнĕ çеç пулсан, мĕн хăрамалли! Сывлăш — çын-им? Икерчипе чăкăтне çисе ятăмăр — ни пуç шавламасть, ни вар ыратмасть. Вилмерĕмĕр. Нухратне те хăварар мар... Сывлăша ăна укçа мĕн тума кирлĕ? Аттене кайса парас та... — вак кĕмĕл укçасене йăпăр-япăр пуçтарчĕ те вăл шăлавар кĕсйине чăмтарчĕ.

— Сана, Прухăр, пурпĕрех çылăх пулать. — чышкă кăтартрĕ çывăх тусне Пимăн.

— Турă саккунĕ мĕн вĕрентнине мантăн-им? Вăрлани пулать вĕт ку? — хыпăнса ӳкрĕ Пантелей.

Аллине кĕсьерен кăларма хăраса тăракан Прухăр ахăлтатсах кулса ячĕ:

— Ухмахсем эсир! Камăнне вăрлатăп эпĕ?

— Киреметĕнне. Турпан аслă асаттенне! Хур кăларса хăй вырăнне укçана!

Прухăр тапса сикрĕ. Киремет çырми тĕпĕнче Пантелей ăна хуса çитрĕ. Иккĕшĕ тытăçса ӳкрĕç. Вăрçчанлах кĕрешрĕç. Парăннă Прухăр, сăмсине нăшлаттарса, Пимăн хыççăн сĕнкĕлтетрĕ, каялла çаврăнса чĕлхе кăларса кăтартрĕ:

— Хăвăр киреметӳех пуçна çитĕр санне!..

Пантелей Прухăр кĕсийинчен тухса ӳкнĕ вак укçасене пуçтарчĕ те çырма улăхĕнчи симĕс курăк çинче пĕр хушă хускалмасăр выртрĕ. Хăйсен несĕлĕн, паттăр чăвашăн, Турпан киреметĕн ырă сывлăшĕпе сывлас терĕ-ши? Ăна панă парнене усламçă ачинчен туртса илсе усăллă пĕр ырă ĕç тунăшăн хĕпĕртерĕ-ши? Укçасене вăл каллех часавая хăй выраннех кайса хучĕ.

Куçĕсем вăраххăн уçăлнă май, Турпан Пантелейĕ умĕнчи ачалăх тĕнчин сип-симĕс кавирне такам пуçтарса илчĕ. Пурте таçта вĕççе çухалчĕ. Ун умĕнче каллех — сысна лаприпе тулнă çырма. виçĕ хурăн пĕрене, тĕттĕм каç... Кĕлетке пĕлми пула пуçларĕ ĕнтĕ, çук пекех, темле, çĕрпе хутăшса кайса унăн уйрăлми пайĕ пулса юлнăн туйăнать, пуç мими çеç çивĕччĕн ĕçлет. пурнăç çулĕ тăрăх этем урапине малалла кăлтăртаттарать.

Çырмари кĕлет умĕнчи лаштра йăмра айне вăййа тухнă хĕрсем чечек карти пек куçа йăмăхтарса, пуçа минретсе хăйсем патне асамлă туйăмпа туртаççĕ. Кĕлет сакки çине ларнă Усламçă Прухăрĕ тальянкăна туртать-туртать те, сиксе тăрса, çинçе сассипе юрласа ярать:

*Атьăр вăйă пуçлар-и те*
*Вăй кĕввине калар-и?*
*Вăйă кĕвви пĕр сумлăх та,*
*Пирĕн вăйă çĕр сумлăх...*

Хур аçи пек каçăрăлса, шукăль тумĕ тăрăх куç айĕн пăхкаласа мăнкăмăллăн утса кĕрет вăйă картине Перун Пимăнĕ. Пĕр кана çăмăллăн ташласа илет те вăл вăрçăра вилнĕ Вар Варçунĕн Варварине вăр-вар кăна пилĕкрен çавăрса тытать. Хĕр вăтаннипе ниçта кайса кĕреймесĕр çухăрса ярать, каччăран вĕçерĕнесшĕн тапкалашать.

Урине çăпата сырнă, тăла йĕмпе пир кĕпе тăхăннă кашта пек йăрăс пӳллĕ Турпан Пантелейĕ таплаттарса çитет те хĕре, пуп ывăлĕнчен туртса илсе, каллех вăйă картине кĕртет Тутине тăснă Пимăн, шур куçĕсене çавăрттарса, вăкăр пек пăхать Пантелей çине, анчах урăх ашкăнма хăямасть, купăсçă çумне кайса ларать те чĕлĕм туртса ярать.

Лаштра йăмра яш-кĕрĕме хăй тавра çавăрать, сиктерет, хĕрсемпе каччăсен çепĕç юррине итле-итле тураттисемпе лăстăртатса ташлать. Вĕçĕ-хĕррисĕр анлă тӳпере уçă тĕнче вăййи йăлкăшать. Çав çĕрпе пĕлĕт хушшинчи çыхăнури савăк çемĕпе килĕшӳллĕн пĕр-пĕрин чĕри таппине туйса куçаççĕ Варварипе Пантелей те симĕс кавир тăрăх. Чĕнтĕрлĕ пир

кĕпе çийĕн çакнă хĕрлĕ сатин саппун, пурçăн тутăр, тĕрлесе çыхнă çăм нуски сăн курăнакан калуш... хушăран-хушă вăрт çаврăнса пăхнипе йăлкăшса çунакан хăмăр куççем, тӳрĕ сăмса, йăлл кулнипе шап-шуррăн тухса тăракан тап-тан ретлĕ шăлсем, сулахай питçăмартинчи пĕчĕк путăк, вĕçне кĕрен хăю янă вăрăм та тулли çивĕтсем... Пантелейшĕн вĕсем пурте çывăххăн, пурте илемлĕн курăнаççĕ, пурте çур шăршиллĕн туйăнаççĕ. Варвари те йĕкĕтĕн çирĕп те пиçĕ кĕлеткине, карттус айĕнчен тухса тăракан çырă çӳç пайăркине, çиçĕмле çиçекен кăвак куçне, тăрăхларах питне, тин çеç палăрма пуçланă мăйăхне, кăвакпа пĕветнĕ пир кĕпине, хура тăларан çĕлетнĕ йĕмне, тăхăр пушăтран тунă çăпатине курса çав териех савăнать-ши? Качча хăйĕнчен вĕçертсе аяккалла сирменнине шута илсен — хĕр чĕри те унпа пĕр юррах юрлать пек. Çавăн сассине ĕнерет Пантелей, хĕрӳлĕхпе хĕрнĕ çирĕп алла хыттăнрах та хыттăнрах пăчăртать. Хĕр те ун аллине çавнашкал хăватпах хĕстерет. Икĕ çамрăк чун çут тĕнче чĕлхипе сăмахсăр калаçать...

Нарт-нарт! турĕ те хуткупăс кĕрхи пĕвери кăвакал сассипе, тăрук шăпланчĕ.

— Прухăр, ма калама чарăнтăн? Кала ĕнтĕ. Юрлас килет. Ташласчĕ хăть тепĕр ташă та пулин... — ӳкĕтлеме пуçларĕç хĕрсем купăсça.

— Çимĕк вăййине пуçласа панă сире кĕçĕр, çитет сиксе, купăсçă ывăннă, — Прухăр вырăнне хурав пачĕ Перун Пимăнĕ. — Эй, кил-ха кунта, Пантелей!

Хĕре алăран вĕçертмесĕр тăракан Пантелей шӳтлесе илчĕ:

— Пĕччен е иккĕн? Хĕре туртса илĕр те...

— Кил, кил, сăмах пур. Пĕччен лайăхрах пулать.

Пантелей юлташĕсем умне васкамасăр пырса тăчĕ.

— Мĕн-ха?

— Çимĕк сăри ĕçме чĕнетпĕр, — хăлхаран пăшăлтатрĕ Пимăн.

— Пирĕн пата, — хушса хучĕ Прухăр.

— Хĕрсене пăрахса хăварсах-и?..

Сăмахне каласа пĕтерме памарĕç ăна юлташĕсем, вăр-вар ик хул хушшине хупрĕç. Ачаран пĕрле ӳснĕ тантăшĕсене мĕн чăрмантартăр-ха, мĕнле вăй тытса чартăр-ха хăйсем мĕн шут тытнине пурнăçламашкăн? Варварирен уйрăлас килмесĕрех тантăшĕсемпе таплаттарчĕ вара Пантелей. Каялла çаврăнса хĕре пуç сĕлтсе хăварасси çеç юлчĕ унăн.

Усламҫӑ Ҫитӑрӗсен килӗнче никам та ҫук. Вӗсем уявсене ялан Перунсемпе паллӑ тӑваҫҫӗ те, паян унта кайнӑ.

— Хамӑра улах пулать, — терӗ Прухӑр. Хӑй ҫав хушӑрах мӑн тирӗк йӑтса сакайне анчӗ. Кӗҫех вӑл унтан кӑпӑклӑ сӑра ӑсса тухрӗ. Сӗтел ҫине ӗҫмелли-ҫимелли тултарса лартрӗ.— Сӑхсӑхар та, пуҫлар кумпание.

Техӗмлӗ ҫӑра сӑрапа хутӑш смирновски эрех самаях пуҫ патне пычӗ пулас, каччӑсен чӗлхисем лӑнчӑрах сӳтӗленсе кайрӗҫ.

— Хамӑр юлташ пулмасан-и сана, Пантелей... Эх!.. — пӳрнине маччаналла тӗллесе кӑтартрӗ Перун Пимӑнӗ.—Тахҫанах ҫӳлти патшалӑха ӑсатмалла.

— Мӗншӗнне пӗлетӗн-и? — ыйтрӗ кил хуҫи.

— Ма пӗлместӗп, паллах, пӗлетеп. Мӗншӗн ку таранччен ҫапса пӑрахманнине те пӗлетӗп.

— Мӗншӗн?

— Вӑю ҫитмест. Халсӑр эс ман ҫумра, Пимӑн. Пустуй лӗпӗртетсе лариччен... Тав сана!

— Пустуй мар, Пантелей! — сӑра куркине сӗтел ҫине так! лартрӗ Пимӑн. — Миҫе хутчен каҫартӑм ӗнтӗ сана, мӗскӗне. Паянхишӗн вара... юлашки хут каҫаратӑп! Тек ан сӗкӗннӗ пултӑр Варвари ҫумне...

Прухӑр куркасене ҫӗнӗрен тултарчӗ.

— Эх, ҫав Вар Варварине, ӑна... — ӗнсине кӑтӑрт-кӑтӑрт хыҫса илчӗ вӑл. —Вӑйӑ картинче варкӑш ҫил кӑларса ташлакан вӑр-вара.., Ҫавӑн пиҫ хӑва пек авкаланакан кӗлеткине курассишӗн ҫеҫ, ҫавӑн йӗс шӑнкрав пек сассине илтессишӗн ҫеҫ каяс килет ман купӑс калама. Варвари пулмасан...

— Ак тата тепри сиксе тухрӗ ҫӗр тӗпӗнчен, — пӗҫҫине шарт! ҫапрӗ Пимӑн. — Тӗнчене ан култар-ха эс, лутака утаман. Мӗн, пукан ҫине тӑрса чуптӑвас тетӗн-им ӑна?

— Тути-мӗнӗ кӗҫӗтсен, хӑех пӗшкӗнет. Хи-хи-хи!

— Сан куласси! — тарӑхса кайрӗ Пимӑн, — Ман кунта чӗре вутпа ҫунать. Ярса пар-ха луччӑкӑн смирновскине. Чашлаттарам тепӗр черкке ӑшчике. О-оох! — Шӑрттан татӑкӗ хыпса чӑмласа ячӗ те вӑл Пантелей еннелле ҫаврӑнса ларчӗ. — Ырӑпа калатӑп сана пака. Хӑп Варваририен. Атте мана авлантарса хӑй вырӑнне хӑварасшӑн. Эпӗ пурпӗрех пуп пулатӑп. Варварие качча илсе унран пуп арӑмӗ тӑватӑп.

Пантелей та парӑнмасть:

— Ҫук. пуп пулаймастӑн. Халӑх турра ӗненме пӑрахать. Тӗн суя пулнине ӑнланса ҫитет. Совет влаҫӗ хӗсет сире. Ху-

патпăр сирĕн чиркӳсене. Кĕçех! Халăх хутла вĕренет. Ялĕпех çутта тухатпăр. Сирĕн те, Прухăр, шалчу тулчĕ-ха революци хыççăн. Эсир те лавккапа, арманпа сывпуллашрăр. Ман атте те тинех сирĕншĕн авмасть пилĕкне. Вăл та, эпĕ те, пурте ирĕкре халь. Варвари те. Пусмăрласа качча илеймĕн таса хĕре. Хăй кама кăмăллать, çавна савать. Çавнах — качча та тухать.

— Сана-им? — мăшкăлласа ыйтрĕ Прухăр.

— Мана-и унта, урăххине-и, куç курĕ, анчах... сана та, сана та качча каймасть вăл. — иккĕшне те кăкăртан тĕллесе каларĕ Пантелей.

— Курăпăр-ха унта кама качча илнине. Салтак ячĕ тухнине манар мар. Сан хăвăн хĕрлĕ влаçна сыхлама каймалла. Аçу хăй патне кавалерие чĕнсе янă çырăва вулаттартăн-çке. Кĕçех сывпуллашатăн та, ак, ялпа... Варвари пирĕн алăра тăрса юлать...

Пантелее Пимăн хăй умĕнче мăшкăл сăмахĕсемпе хăсса ларнăнах туйăнчĕ, тек вăл чăтма пултараймарĕ, тăчĕ те алăк патнелле таплаттарса утса кайрĕ, каялла çаврăнса каласа хăварчĕ:

Сире, паллах, Совет влаçĕ кирлĕ мар. Эсир шуррисене кĕтетĕр. Анчах та..., кĕтсе илеймĕр пурпĕр ĕлĕкхине! Эпирех çĕнтеретпĕр! Эпирех хуçа пулатпăр çак çĕр çинче. Пăчланатăр эсир халăх пушмакĕ айĕнче.

— Курăпăр-ха, халăх кама ытларах юратĕ, кама пуççапĕ, — шăлне йĕрсе юлчĕ пуп ывăлĕ.

Турпан Павăлĕ граждан вăрçине килти пĕртен-пĕр лашипе тухса кайсассăн, Пантелейсем нушине курмаллипех курчĕç-çке. Юрать-ха кӳршĕсем пулăшрĕç ака-суха тума. Салтак юрри юрласа чупма та урхамах кирлĕччĕ те ĕнтĕ... Çав вăхăтра пар лаша кӳлсе Перун Пимăнĕпе Усламçă Прухăрĕ çитрĕç.

— Атя, лар, вĕçтертĕмĕр хĕрсем патне, тутăр пуçтарма!

Тавлаша-тавлаша пĕрне-пĕри пайтах чĕре патне лартнă пулин те, çамрăклăх хĕрĕвĕ часах сĕвĕрĕлет çав. Юлташĕсен пулăшăвĕнчен ютшăнас темерĕ Пантелей. Вар Варсунĕн Варварийĕ те арча тĕпĕнчен вĕр-çĕнĕ пурçăн тутăр кăларса пачĕ. Çав çывăх тутăра салтак ачи çыхăра çиелерех кăларса пыма тăрăшрĕ.

Мăн урам ял халăхĕпе тулнă. Хурăнсăр Аслă уничерен хăйĕн ачисене вилĕмпе çĕнтерĕве хирĕç хурлăхлăн кăларса ярать. Салтак юрри кашнин чунне кĕрсе, чĕрине лăскаса ку-

çĕнчен вĕри куççуль юхтарать. Хĕрсен ушкăнĕнче, авă. Варвари тăрать, шурă тутăр вĕçĕпе хушăран куçне шăлса илет. Пантелей ун умĕнчен алă сулса иртрĕ. Уйрăлас килмест унран, пĕччен хăварас килмест ăна каччăн. Хĕрĕн те чунĕ салтак ăшĕнчех пуль... Анчах та...урапа çине хăпарса ларнă Пантелей аяккалла, инçенелле кайса кĕçех курăнми пулчĕ.

Пантелей ашшĕ çапăçнă çĕрех, Хевелтухăç фронтне, лекрĕç хурăнсăрсем. Павăл Турпанов разведка взводне ертсе пырать. Ывăлне вăл хăй патне илтерттерчĕ. Чăваш ачисем нумайччĕ. Фронтра кăларакан чăвашла хаçата эртелпе пухăнса вулатчĕç вĕсем. Дивизи начальникĕ Чапаев, тетчĕç. Паттăр командир пирки тем тĕрлĕ ырă халап çӳретчĕ. Анчах Пантелей ăна хăйне кураймарĕ.

Чапаев вилнĕ хыççăнхи кĕр кунĕсенче питĕ хаяр çапăçусем пуçланчĕç. Хĕрлисен те, шуррисен те нумай çухату пулчĕ. Тиф çавапа çулнă пек çулчĕ салтаксене. Пĕр çапăçу хыççăн ашшĕне Пантелей Урал çыранĕнчи чуллă çĕре пытарса хăварчĕ. Ана кĕçех ашшĕн взводне шанса пачĕç. Шурă казаксен Урал çарне çапса аркатнă хыççăн Турпановсем Днепр çывăхне поляксене турама çитрĕç.

Умри Киремет çăлкуçĕн имлĕ-симлĕ шывĕпе вăрçа каяс умĕн юлашки хут çăвăннăранпа Уралăн сивĕ шывĕпе, Каспи тинĕсĕн тăварлă шывĕпе, Днепрăн ăшă шывĕпе чӳхенчĕ чăваш каччи. Виçĕ хутчен аманчĕ. Вилĕме парăнмарĕ. Тĕрекленсе, пиçсе çирĕпленсе таврăнчĕ çамрăк командир тăван ялне. Сарлака кăкăрĕ çинче Хĕрлĕ Ялав орденĕ çиçет. Чунĕ юрлать. Чĕри кăкăртан сиксе тухасла тапать.

Виçĕ çул курман ачине Хурăнсăр хăйĕн Аслă униче алăкĕнчен хурлăхлăн кĕртсе ячĕ. Урамра шăп. Пурте вилсе пĕтнĕ тейĕн. Пӳртсенче выçлăх хуçаланать. Симĕс сĕлĕ çулĕ килрен киле вилĕм çавăтса çӳрет.

Пантелей масар енчен килекен çынсен мĕскĕн ушкăнне хуса. çитрĕ. Салтака курса, пурте чарăнчĕç. Вăл та тăчĕ, çывăх çынсене палларĕ: тăван-хурăнташĕсем. кӳршисем... Анчах мĕншĕн пĕри те çавар уçмасть-ха?

— Кама пытартăр?

Шăммипе тирĕ çине пир кĕпе уртса янă шуранка хĕрарăм сулкаланса çывхарчĕ те Пантелей мăйĕнчен уртăнса йĕрсе ячĕ:

— А-ах, шăллăм, таврăнтăн пать-ха, сывах эс. Паллаймарăн-им мана?

— Палласа илтӗм-ха та... Сире курнипе хама хам темле пулса кайрӑм-ҫке.

— Аттепе пӗрлех сана чиркӳре асӑнтартӑмӑр. Кивҫенле. Виҫӗ пӑт тырӑ памалла халь Ваҫҫили аттене. Выҫлӑх пулсан, пуп пуять тесе ахальтен каламан ҫав.

— Тӑхта-ха эс. Мӗнле капла? Мана? Мана аттепе пӗрле асӑнтартӑр-и? Мӗншӗн? Нимӗн те ӑнланмастӑп, — аккӑшне вӗҫертсе аллисене сарса пӑрахрӗ Пантелей.

— Эс вӑрҫӑра вилнӗ тесе самах тухрӗ те... Чӗрех-ха. Тавах турра сана тӗрӗс-тӗкел ҫавӑрса ҫитернӗшӗн.

— Кама кирлӗ пулнӑ-ши вара ку камит?

— Чухлама пултаратӑн. Ҫав Перунсемпе Усламӑҫсемех... Анне те ҫук ӗнтӗ тек.

— Анне?! Чӑнах-и? Аа-ахх!..

— Ҫапла ҫав, тӑлӑха тӑрса юлтӑмӑр. Эс аттене пытартӑм тесе ҫырнӑччӗ. Эпир халь аннене пытартӑмӑр. Виҫӗмкун куҫне хупрӗ. Вӗҫӗмсӗр аса илсе выртрӗ сана. Ҫулӗ вӑрӑм та, ӗлкӗрейменӗн пуль ҫав. Виҫӗ ҫула кӗтнине виҫӗ куна маларах ҫитейменӗн. Ах, шӑллӑм, анне те ҫуккӑ халь, атте те... Мӗнле пурӑнас. Ах-ах-ааа...

Кутамккине макӑракан аккӑшне хывса тыттарчӗ те Пантелей, урам тӑрӑх чупнӑ пек васкаса утрӗ. Масар ҫине ҫитсен, ҫӗнӗ вилтӑпри ҫине выртса, нихҫан макӑрманнине пӗрре чун пушаниччен макӑрчӗ. Тӑчӗ те, ӳсӗр ҫын пек, килнелле сулланчӗ. Вӑрҫӑран яла илсе ҫитернӗ ҫӗнтерӳ савӑнӑҫӗ те таҫта кайса кӗчӗ тӑлӑх чунӑн.

Тусанлӑ ҫулпа тӑрантас килет. Пантелейпа танлашсан, «Тпру!» тенӗ паллана сасӑ илтӗнчӗ. Лаша тӑпах чарӑнчӗ. Ҫӗре сиксе аннӑ Перун Пимӑнӗ тӳрех хыткан тӑсланкӑ аллине тӑсса пачӗ те:

— Таврӑннӑ ятпа саламлатӑп сана, — терӗ. — Хуйхи те пӗрлех килчӗ тата. Аннӳн тӑпри ҫӑмӑл пултӑр. Аттене калӑп, укҫасӑр-мӗнсӗрех асӑнтӑр ырӑ ҫынна. — Унтан, Пантелей хӑй ҫине мар, тӑрантас кӑрманӗнче питне тутӑрпа хупласа ларакан Варвари еннелле куҫне тӑрӑнтарнине сисрӗ те, сӗререх хушса хучӗ: — Ҫӗнтертӗмӗр апла тӑшмана...

Хуйхӑпа ҫилӗ капланӑвне кӑштах сирсе янӑ хыҫҫӑн, Пантелей шӑл витӗр сӑрхӑнтарчӗ:

— Ҫӗнтертӗмӗр. Анчах... сире мар. Сирӗнпе кӗрешмелле пулать-ха. Сахал мар.

— Ай-турух, эс орденпах килнӗ-иҫ!—мӑшкӑлласа тӑчӗ Пимӑн. — Пурне те пачӗҫ пуль ку Хӗрлӗ Ялава?

— Хěрлě ялав айěнчисем пурте тивěçлě ăна. Сан йышшисен вара... ун çине хăрах куçпа пăхма та намăс.

— Ай тур-тур, виçě çул курман — вăл, пур, виçě сăмах путлěн каламасть. Атя-ха хамăр пата, аннŷн виç кунхине асăнса, туй пулнин виç кунне паллă туса виç курка ěçер, турă калашле. Сăваплă пулар... Турра çилентерер мар.

Варвари чăтаймарě, тăрантас çинчен сиксе анчě те ялалла чупса кайрě. Пимăн лашине çавăрчě. Пантелей та кăрман çатанěнчен çакланма ěлкěрчě. Хăшăлтатса чупакан таркăнпа танлашсан, пěррех пушăпа туртса çапрě Пимăн Варварие. Лешě. çухăрса ярса, çěре тŷпех кайса ŷкрě. Пантелей чăтаймарě, пуп ывăлне мěнпур вăйран айăк пěрчинчен паклаттарчě те тăрантасран сиксе юлчě.

Тусан çинче йěрсе выртакан хěре Пантелей çěклесе тăратрě. кěпи çинчи тусанне силлесе тасатма пуçларě.

— Суять вăл, путсěр. Ых, чунилли!—йěре-йěре каларě Варвари. — Нимле туй та пулман. Нимле виçě кун та çитмен. Кěççепит! Çак виçě çул хушшинче пусмăрласах çитерчěç ěнтě Усламçă Прухăрěпе иккěшě. Эп санах кěтнě, Пантелей. Санах. Эс вилнě тесе каларěç те вěсем. . Ах. хамăр выçăпа вилетпěр. Виçěмкун, аптранă енне, çав усалсен серепине лекрěм. Чиркěве ěçлеме кěтěм. Шăллăмсем симěс курăк яшкипе шыçăнса кайрěç, анне вырăнпа выртать. Ах, турă, ăçта кайса чикес-ши пуçăма? Намăс сан умăнта. Эс пур-çке, пур. Вилмен. Мана Пимăн, катаччи чуптаратăп тесе, вăйпах лартса тухрě. Çилампах арăм тăвасшăн. Эп санах кěтрěм. Санах, Пантелей. Ěнен, эпě таса: сан умăнта та, турă амăшě умěнче те. Каçар эс мана, ухмах пуçа. Эй, турă...

Пантелей Варварие кăпка çŷçлě пуçěнчен ачашла-ачашла лăплантарма тăрăшрě.

Ěненетěп сана, шанатăп. чунăмçăм. Эпě хам та сан сăнарупа хăпартланса пурăнтăм çак çулсенче. Ăçта кăна çитермерě пуль вăрçă çулě, сан алтутрине çухатмарăм, пите шăлса илеттěмччě те унпа. эсě мана ачашланăнах туйăнатчě. Акă вăл, кур-ха, — йěкěт кěсйинчен вěт пиртен тунă тутăра кăларса кăтартрě. — Пěр кěтессине «П». тепěр кěтессине «В» тесе тěрленě.

Варварин хыткан пит-куçěнче тинех ăшă кулă палли йăлкăшса илчě. Çав вăхăтра вěсем патнелле тусан мăкăрлантарса тăрантас çывхарчě.

— Паянтан эс ман юлташ мар. Тăшман! Киремет тыттăр хăвна та, пулас арăмна та! Çавăншăн кěлтăватăп паянах,

Антихрист! — çухăрса иртсе кайрĕ ларкăч çинче саркаланса пыракан Пимăн.

Пантелейпе Варвари аран аяккалла сиксе ӳкме ĕлкĕрчĕç.

— Ан хăра урăх, Варвари. Халĕ эпĕ сан çумăнта ĕнтĕ. Яланах пĕрле, — терĕ хĕр çумнерех çыпçăнса тăлпан кĕлеткеллĕ кавалери командирĕ.

Ял историйĕнче пĕрремĕш мăшăр чиркӳре венчете тăмасăр пĕрлешрĕ. Пантелей Турпанов комсомолец Хурăнсăрта каччăсемпе хĕрсене хăй тавра пуçтарчĕ. Хĕрлĕ улахра вăхăт хĕрӳ иртет.

Пĕр каçхине Варварисен пӳртне Чулхулара суту-илӳ ĕçне вĕренекен Усламçă Прухăрĕ купăспа пырса кĕчĕ. Чăлха çыхакан, тĕрĕ тĕрлекен хĕрсемпе çамрăк хĕрарăмсем, çăпата тăвакан яшсем хăлхасене тăратсах Пантелее итлетчĕç.

— Çамрăксен коммунистла союзĕнче халĕ, — тет вăл, — çур миллион çын, эпир те, хамăр ялти ячейкăпа, пилĕксĕмĕр, çавсен ретĕнче. Пирĕн çулпуç Ленин çирĕммĕш çулта комсомолăн виççĕмĕш съездĕнче мĕн каланă-ха? Сирĕн, çамрăксен, коммунизм обществи тăвас пулать, тенĕ вăл. Çавăнпа кашни çамрăк çыннăн, кашни çамрăк хĕрĕн çав ĕçе хутшăнмалла. Пирĕн тĕп ĕç вара — пĕтĕм çамрăк ăрăва пĕлӳ парасси, воспитани парасси, тата ăна аталантарса пырасси пулса тăрать. Пур ĕçре те типтерлĕ, тăрăшуллă, кăтартуллă пулма, çĕнĕлĕхшĕн кĕрешме, мĕнпур йывăрлăха çĕнтерме, коммунизмла ăмăрту йĕркелесе яма, пĕтĕм ĕçе пĕр çĕре пĕрлештерме чĕнет Ильич. Эпир — малта пыракан ушкăн. Пирĕн пурне те çĕнĕлле тумалла. Апла пулсан, вĕренмелле, вĕренмелле, нумай вĕренмелле: кĕнеке вулама та, хут çырма та, тырă ӳстерме те, пӳрт-сурт тума та, çамрăксемпе ĕçлеме те. Пурнăç тума — коммунизм тума—вĕренмелле.

Алăкра тăрса итлесех пĕтерчĕ юлташĕн сăмахне Прухăр, унтан, купăсне сак çине лартрĕ те, кĕсйинчен хутпа чĕркенĕ канихветсем кăларса, хĕрсене валеçсе тухрĕ.

— Хĕрлĕ улах ачисене хĕрлĕ хула парни, — кулкалать хăй. — Мĕнле тĕп-тĕрĕс тăн пама пĕлет сире Пантелей. Чăнах та вĕренмелле пирĕн, хастар ĕçлеме, пуян пурăнма вĕренмелле. Çавăнпа сире, каччăсем, хам пата чĕнетĕп. Çитет çăпата калăпĕпе аппаланса. Мастерской уçатăп. Тир-сăран тăвăпăр, атă-пушмак ăсталама пуçлăпăр. Кооператив пулать. Çĕнĕ пурнăçăн çĕнĕ политики çапла тума хушать. Чухăнлăхпа выçлăхран сăмах-чĕнӳпе çăрăлса тухаймастăн. Япала кирлĕ, апат-çимĕç кирлĕ халăха. Унсăрăн нимĕнле коммунизм

та пулмасть. Нишлĕ коммунизм никама та кирлĕ мар. Пĕлетпĕр ĕнтĕ, хулара унта ялтинчен лайăхрах уçаççĕ куçа-пуçа.

— Революци пĕтрĕ-им вара пирĕн?

— Ленинах хушнă-ши çапла тума?

— Каллех усламçăсем пуç çĕклеççĕ-и?

— Çĕнĕрен тарçа кĕрĕшмелле-и?

Ыйту çине ыйту сиксе тухрĕ. Пантелей хăй пĕлнĕ пек, Прухăр хăй шутланă пек ăнлантараççĕ çамрăксене.

— Ан хăрăр, пире те çăмăллăх пулать-ха. Налук тӳлесе татнă хыççăн эпир те, хресченсем, ытлашши юлнă тырра-пулла, аш-пăша пасарта сутма пултаратпăр, — терĕ Турпанов.

Çутă пăч сӳнчĕ.

— Краççын шывĕ пĕтрĕ пулас, — хыпăнса ӳкрĕ Варвари. — Ямалли урăх çук. Ялĕпех сăрăхтарса пуçтарса килнĕччĕ. Эп хăйчикки тухса шырам-ха пӳртумне.

— Ак сана, çĕнĕ пурнăç, çутă пурнăç, ăçталла çул кăтартать—хăйчикки патнелле, — тесе кулкаласа Прухăр тĕттĕмрех купăсне хыпашласа тупрĕ те ял ачисем пĕлмен кĕвве калама пуçларĕ, çинçе сассипе вырăсла юрласа ячĕ:

*Ехал из ярмарки ухарь-купец,*
*Ухарь-купец, молодой удалец...*

Хăйчикки тупăнчĕ, анчах типĕтнĕ хăйăи пулмарĕ. Тĕттĕмре пуплекелесе пурте майĕпен килсене салана пуçларĕç.

— Мĕнле, килĕшетпĕр-и? — ыйтрĕ вĕсенчен Прухăр. — Хĕрупраççем, сире валли те ĕç тупăнать. Ман патра эсир шăпах Пантелей калана пек тăрăшса ĕçлеме, пĕтĕм ĕçе-хĕле пĕрлештерсе тулăх пурăнма вĕренĕр. Ленин ухмах мар. Вăл самана таппине туять. Паян эпир те, Усламовсем, кирлĕ иккен. Пирĕн суту-илӳ ĕçĕ те — çĕршыв çăлăнăçĕ. Юрлама та, ташлама та хамах верентĕп сире. Çĕнĕлле. Кăмăлăр пулсан — пырăр ыранах. Шухăшласа пăхăр.

Никам та ухутах Прухăр умне пырса тăмарĕ. Пантелей вара ăна çапла каларĕ:

— Ирĕклĕх сывлăшĕпе сывлакан çамрăксем, Прухăр, сан хыççăн утмĕç. Эс хăвăн суту-илӳ ĕçне хăвнашкаллисемпех ту. Вăл — коммунизм ĕçĕ мар, капитализм йышши япала. Эпир хамăр пуçланă ĕçех тăвăпăр. Паян тĕттĕме тăрса юлтăмăр пулин те, ыран пурпĕрех çутта тухăпăр. Вăхăтлăх нушине курас пулать, чăтас пулать.

Прухăр та парăнма шутламарĕ.

— Итле, тусăм, — терĕ лăпкăн, — эсĕ пĕртте йăнăшмастăн.

Парти политикине лайăх ăнланатăн. Анчах, асту, пире, революци вăйĕпе пусарнăскерсене, революци тунă ăслă-пуçлă çынсемех тепĕр хут хăйсем пуç çĕклеттерчĕç, пирĕн куçа эмел ярса çĕнĕрен уçрĕç. Пирĕн ума халĕ çĕнĕ хĕвел сиксе тухрĕ. Епле çутатать вăл Раççей çийĕн, э? Атте тăрса ларас пулсанччĕ... Продотряд çаракучĕ персе вĕлермен пулсан-и ăна... Совет влаçне вăл паян ун чухне памасăр тăнă вунă пăт тырăран çĕр вунă хут ытларах усă пама пултарнă пулĕччĕ. Çапла, çутă çуталать те сӳнет пирĕн умра, çуталать те сӳнет... каллех ялкăшса каять. Эх, епле!

— Мĕн кулянан-ха тата савăннă хушăрах- — тĕртсе илчĕ ăна Пантелей Турпанов.

Темиçе хут ассăн сывласа илнĕ хыççăн Прухăр сылтăм аллине юлташĕн хулпуççийĕ çине хучĕ.

— Эх, — терĕ вара, — пурнăçăм лайăхланасса шанатăп. Чулхула купцисем пĕтмен-ха. Тымарĕ çирĕп вĕсен. Аттене манмаççĕ. Ун ячĕпе мана пулăшаççĕ. Анчах... Суту-илӳпе пуянлăх хĕвелĕ çеç-çке ман умра. Пурнăç хĕвелĕ çутатмасть. Сан вара... сан, Пантелей, пурнăç хĕвелĕ те, телей хĕвелĕ те хăвпа юнашарах. Лашасăр, ĕнесĕр, çĕтĕк-çатăк пурăнатăн пулин те, манран эсĕ пин хут, мĕльюн хут пуянрах та телейлĕрех пек. Сан — Варвари пур.

— Мĕн, халĕ те манаймастăн-им? Чăнахах юрататăн-и вара эсĕ ăна? — кăсăклансах ыйтрĕ Пантелей.—Эп ку пустуй, йĕкĕлтесе кăна калаçать пуль тенеччĕ сана. Пимăн уншăн мĕнле çулăмпа çуннине пĕлетĕп-ха. Эсĕ вара...

Прухăр чăннинех калать иккен.

— Варварие курас тесех ятарласа килтĕм. Пĕрре пăхса илсе те пулин чуна кантарас килчĕ. Анчах... çутă сӳнчĕ. Турă çапла асап кăтартать ĕнтĕ мана. Эх...

Тĕттĕм каç. Варвари пӳртре. Прухăр çаврăнса утрĕ те купăсне туртса ячĕ.

Çав сасă илтĕннĕ пекех туйăнчĕ Турпан Пантелейне. Чăн та, хăлхана купăс сассиех кĕрет. Чуччу хăйклатнипе хутăш нăртлататъ те нартлататъ. Вăйă пĕтмен-мĕн. Лачакара вырттакан ватă çыннăн вăй пур-ха, тăн пур. Кунталла килекен çеç никам та çук. Ирĕксĕрех асаилӳпе хăпартланса çĕклеме тивет кăмăла.

Çĕнĕ пурнăç тăвасси çĕнĕ çăпата тăвасси мар иккен, Пăтранать, арканать, пĕтĕрĕнет тавралăх. Пĕтĕм çĕршыв ахлатать. Йывăр ăна. Мĕнле çĕклемелле, мĕнле майпа ура çине тăратмалла хаяр вăрçăсем хыççăн? Мĕнлерех уттармалла

нумай мĕльюнлă халăха социализм çулĕ тăрăх? Ленинăн коопераци планĕ майĕпен кĕртет-ха çĕршыв артерине. Капитализмран куçнă хаяр тапхăрта хулапа ял çыннин пултарулăхĕпе питĕ пĕлсе усă курмалла-мĕн. Çынна халĕ пĕрлешсе ĕçлеме те, патшалăхăн пĕчĕкрех предприятийĕсене тара илме те, хăйĕн хуçалăхĕнче тавар туса сутма та, лавкка-хупах тытма та ирĕк. Пултар çеç. Çав ирĕклĕхпе усă курса ĕнтĕ Усламçă Прухăрĕ ată-пушмак мастерскойĕ, лавкка уçрĕ. Революци хыççăнхи çуркунне Турпан Павăлĕсем татса янă ашшĕн Киремет çырминчи арман пĕвине çĕнĕрен пĕвелеттерчĕ.

Хурăнсăрпа Чулхула хушшинчи çула тапăртатсах такăрлать Прухăр. Купăс кала-кала юратнă юррине тăсать:

*Ехал из ярмарки ухарь-купец,*
*Ухарь-купец, молодой удалец...*

— Эс «ухарь-купец» мар, «Прухăр-купец» тесе юрла-ха малашне, — кулчĕ унран пĕррехинче Пантелей.

— Ма юрлас мар, юрлас. Кун пек тата вăйлăрах. Мĕн, эпĕ купца мар-им? Аттерен пурпĕр ирттеретĕп. Эх!

*Ехал из Нижнего Прухăр-купец,*
*Ухарь-купец, удалой молодец.*

Çавăнтанпа вăл ялта «Прухăр—ухăрь-купец» ят илчĕ. Кĕçех Чулхуларан майра хĕрĕ тупса килчĕ. Арăмĕ лавккара суту тăвать. Киремет çырминчи шыв арманĕ çĕрĕн-кунĕн авăрать, авăра шыв сиктерет, Прухăр енчĕкне укçа юхтарать.

Çĕнĕ политика вăйĕ чăн та хăйĕнне турĕ: ялпа хулана çывăхлатрĕ, рабочипе хресчен çыхăнăвне çирĕплетрĕ, çĕршыв тĕрекне вăйлатрĕ. Çав хушăрах социализм утти те малаллах шурĕ, капитализм палли те тепĕр хут сăмсаланчĕ. Иккĕшин хушшинче унчченхи пек мар урăхларах майлă хирĕçӳ-тытăçу хĕрсе çитрĕ. Прухăр та хăйĕн юррине юрлама пăрахрĕ. Турпан Пантелейĕсем ĕнтĕ çĕнтерӳ ялавне тата çӳлерех çĕклерĕç. Ун айне Усламçăсемпе Перунсем тăма килĕшмерĕç-ха.

Перун Ваççилийĕ хăй йӳтесе çитиччен ывăлне Шупашкара илсе кайса пачăшка вĕрентме ĕлкĕрчĕ, хыççăнах авлантарчĕ. Ахаль Пимăн мар ĕнтĕ вăл халь — Пимăн атте. Тăсланкă, вăрăм сухаллă, хулăн саслă пачăшкă. Тăрхала пичĕ, туртса тăснă пек, пушшех вăрăм курăнать.

Хушаматне кам панă-ши вĕсене? Ахăртнех, вырăс пупĕсем. Чăвашăн унашкал хушамат пулман. Пантелей каярахпа тин кĕнекере вуласа пĕлчĕ ун пирки. Перун вăл авалхи славянсен тĕп турри — çумăр, çиçĕм, аслати турри—пулнă-

мĕн. Ун сăнарĕ Илья-пророка куçнă. Христиансен шучĕпе, Илья-пророк пĕлĕтре вут-çулăмлă урапа çинче кĕрлеттерсе çӳренĕ. Хресченшĕн вăл çăлăнăç та, инкек кӳрекен те пулнă. Чиркĕве çӳрекен ял çынни унпа пуп урлă çыхăну тытнă. Пупа вăл ĕненнĕ, ун хăватне шаннă. Ваççили атте хыççăн ывăлне те ял çинче Илья-пророк тетчĕç.

Вак хуçалăхсене пĕрлештерме пуçланă çулхине Пантелей партие кĕчĕ. Колхозĕ ниепле те пĕр тĕвве тĕвĕленеймест. Пухăнать те саланать, пухăнать те саланать. Виççĕмĕш хутĕнче тин йĕркеленсе кайрĕ.

— Йăнăш çулпа утатăр эсир, — ихĕрчĕ Усламçă Прухăрĕ. — Йĕркеллĕ ĕçлесе пурнăç тунă вăтам хресчен вăйĕпе пĕрлешӳллĕ хуçалăх йĕркелесшĕн. Сирĕн хăвăрăн, çĕтĕк-çатăксен, мĕн пур? Мĕн, лаша патăн-и эс, Пантелей, колхоза? Ене-и? Кĕлет-сарай-и? Çерçи те çук сирĕн килĕнте. Пире хĕсесшĕн тата... Эх, чухăн хуçа. Мана кĕртесшĕн тата унта... Шиш. Сирĕншĕн тар тăкнă, сирĕншĕн мул пухнă пуль эп. Çу-ук, илеймĕр манран нимĕн те, хуçаланаймăр ман пурлăхпа.

Çамрăк председатель Турпан Пантелейĕ ăна чăнах та хăйсен çĕнĕ эртелне илесшĕн, унăн атă-пушмак мастерскойĕпе, шыв арманĕпе пĕтĕм яла усă куртарасшăн.

— Пурте пĕр вăя пухăнсассăн эпир никам çĕнтерейми çирĕп чăмăра пĕрлешетпĕр. Пирĕн колхоз пуян пулĕ, пурнăç тулăх пулĕ, — чĕнсе калать Пантелей.

— Çук, килĕшместĕп. Хăвăр туса пăхăр-ха малтан пирĕнни пек пуянлăха. Мĕн хака ларĕ вăл! Эпир ăна ак çак алăсемпе, ак çак пуçпала тунă. Памастăп такама, темле йăхтăр-яхтăра. Ман вăл, ман!..

Пĕр каç Хурăнсăрта пушар тухрĕ, Киремет çырми тулли шав кĕрлерĕ. Усламовсен атă-пушмак мастерскойĕнчен кăмрăкпа кĕл, шыв арманĕнчен чулĕ кăна тăрса юлчĕ. Айăплин вĕçне-хĕрне тупакан пулмарĕ. Хăйсемех çунтарнă-татса янă текен сас-хура ял хушшинче яланлăхах çирĕпленсе юлчĕ.

Турпановсем «Прухăр — ухăр-купеца» кулаксен шутне кĕрттермесĕр хура çавраçилрен çăлса хăварчĕç. Ăна Усламов ăнланасшăн пулмарĕ, пытанса пурăнакан шалти хаяр çиллине пусармарĕ, Перун Пимăнĕпе пĕрле Пантелее тавăрмалли çĕр те пĕр сăлтав шырарĕ. Вĕсене вăл Варварипе пурăнни пушшех çырлахтарма пултараймарĕ. Ун çумне тата пурнăçри хирĕçтăру саманчĕсем çĕнĕрен хушăнчĕç.

«Халăх ăстăнне урăлтаракан» сывлăш хумĕ Хурăнсăра

капланса килсен, Турпановсем ӑна вӗре-вӗре татах вӑйлатса ячӗҫ.

— Хупмалла чиркӗве. Ял хушшинчи тӗн сӗрӗмне сирсе ямалла. Чиркӳ ҫуртӗнче культура ҫурти ҫутса «Интернационал» юрламалла!—тесе пыр хыртарсах кӑшкӑрать Пантелей. — Парти сӑмахне, правительство хушнине итлер, хамӑрьялсем. Районтан килни ирӗк панӑ чухне атьӑр аркатар Перунсен ултав йӑвине!

Чиркӳ лаптӑкне пухӑннӑ халӑх ай кӗрлет, ай шавлать, тинӗс хумӗ пек пӑтранать. Пимӑн атте кӗлӗ кӗртнӗ чухнехи тумпа: аҫам пек анлӑ ҫанӑллӑ, ура пуҫне ҫитекен вӑрӑм стихарь тӑхӑннӑ, сулахай хулпуҫҫийӗ урлӑ ансӑр вӑрӑм лента ҫакса янӑ, пуҫӗ ҫине бархатран ҫӗленӗ тӑрӑхла калпак пусса лартнӑ, пилӗкне тутӑр ҫыхнӑ; аллинче — вӗтӗ сӑнчӑрлӑ пӑхӑр кадило, ҫунакан ладан шӑрши сӑмсана кӑтаклать. Пӗлтӗр аҫа ҫапса ҫунтарнӑ мӑн хурӑн ҫумӗнче тӑракан тӑсланкӑ пачӑшкӑ хура юпа пек хӑрушшӑн курӑнать. Вӑл, сассине тата хулӑнлатса, Турпан Пантелейне ҫӗнтересле мӗкӗрет:

— Турӑ чурисем! Ҫак сӑваплӑ ҫурта хамӑр асаттесен ашшӗсем турӑ сывлӑшӗпе сывлама туса лартнӑ. Ӑна христианство вӗрентӗвне пуҫласа янӑ пӗрремӗш чи аслӑ апостолсем Петӗрпе Павӑл ячӗпе светить тунӑ. Вӗсен сӑваплӑ чунӗсем халӗ те пирӗнтех. Турӑ аттемӗр вӗсене паян леш тӗнчерен ҫакӑнта антарчӗ. Вӗсем — пирте. Христос — пирте. Эпир турӑпа тавлашма ҫуралнӑ-и? Ун саккунӗсене хирӗҫлетпӗр-и? Вӗсенчен аслӑраххи кам пур-ши? Турӑпа ун саккунӗсене курайман, вӗсене кӳрентерекен антихристсене ан итлӗр! Шуйттан хушакан шухӑша хӑвӑрӑн чунӑртан хӑваласа кӑларӑр! Тӳсӗмлӗ пулӑр. Леш тӗнчери ҫутӑ пуласлӑх ячӗпе чӗнетӗп: турӑ керменне аркатса ҫылӑха ан кӗрӗр, ҫуралнӑ чухне турӑ панӑ туйӑма ан ҫухатӑр. Кам турра хирӗҫ тӑрать — ҫавна «хӑрушӑ суд» кӗтет. Шыва ҫак чиркӳре кӗнӗ турӑ чури тӗн керменне тискерле варалама чукмар йӑтса ан кӗтӗр ун алӑкӗнчен. Аминь! Аминь! Аминь! Христос ячӗпе, Петӗрпе Павӑл апостолсем ячӗпе кӗлтӑватӑп. Аминь...

Ян-н! янӑраса кайрӗ сасартӑк пуҫ тӑрринче пысӑк хӑрушлӑх ҫинчен пӗлтерсе мӑн чан сасси. Ян-н! ян-н! Кӗҫех ӑна пулӑшма вӑтаммисем, кӗҫӗнреххисем хӑйсен уйрӑм сассипе чӑнчанлатса-чӑнкӑлтатса васкарӗҫ. Халӑх, шӑп пулса, ӗмӗртен хӑнӑхнӑ ҫывӑх кӗвве тӑнласа итлеме пуҫларӗ.

Ян-н! Чӑн-чанн! Чӑнкӑлл-чанкӑлл-чанн! Мӗнпур хӑвачӗпе,

мĕнпур илемĕпе, мĕнпур янравлăхĕпе пĕр хăпартланса та, пĕр хурлнса та, пĕр тарăхса калаçрĕ чиркӳ ку таранччен хăйне юратса, хăйне шанса. хăйне ĕненсе пуççапнă, кĕлтунă çĕр çыннисемпе.

Пуçĕсене каçăртса çӳлелле пăхакан хресченсен куçĕ-пуçĕ чалхăрса кайнине, ушкăн майĕпен-майĕпен хухса пынине пăлханса сăнаса тăчĕ Турпан Пантелейĕ, чиркӳ лаптăкĕнче юлнă вун-вуникĕ арçын ниçталла та хускалманнине курчĕ те, ял Совет председательне Асат Петĕрне кăлт тĕртрĕ чавсипе:

— Пĕччен мар иккен-ха эпир. Авă безбожниксен-атеистсен отрячĕ. Пирĕн хыççăн вута та, шыва та кĕме хатĕр маттурсем. Камантă парасса çеç кĕтеççĕ.

— Тавай, камантлăр! — хушрĕ сăран тужурка тăхăннă район представителĕ.

Асат Петĕрĕ аллине сулчĕ те... Пурте тапранчĕç. Малта Турпан Пантелейĕ пырать. Пимăн атте, пăталанă Христос пек аллисене саркаласа, чиркӳ алăкне хупласа хучĕ.

— Пăрăн çул çинчен, ултавçă нӳхреп куç! — кăшкăрчĕ те Пантелей, пачăшкăна вăйпах аяккалла сирчĕ.

Пимăн аттен сылтăм аллинчи хĕресĕ çĕре шаплатрĕ. Çийĕнчех ăна Асат Петĕрĕ вĕр-çĕнĕ çăпатипе таптаса хăварчĕ. Пачăшкăн сулахай аллинчи кадилинчен ладанĕ юхса тухрĕ... Кĕлĕ çулăмĕ пăч сӳнчĕ.

— Ян-н! Чăн-чанн! Чăнкăлл-чанкăлл-чанн! Чăнкăлл-чанкăлл-чанн! Чăн-чанн! Чанн! — кĕрлет, шавлать çӳлте.

Ансăр пусма тăрăх çӳлерех те çӳлерех улăхрĕ Турпан Пантелейĕ. Темшĕн ăна çак пусма картлашкин вĕçĕ çуккă пек, вăл чăмăр пуçлă чиркӳ тăррине кăна мар, çӳл тӳпене, анлă уçлăха, леш тĕнчене çитиех тăсăлнă пек туйăнать. Нумай саслă янравĕ те кăтра пĕлĕтсем хыçĕнчен вĕçсе аннăн илтĕнет. Пантелей хăюллăн хăпарать. Акă, уçă шăтăк, акă, хăма урай, чансем, чан çапакан. Вĕрен вĕçĕсене икĕ аллипе те çавăрса тытнă Усламçă Прухăрĕ пĕрре сулса ярать те, ян-н! янăрать мăн чан, тепре туртать те хăй патнелле, чăн-чанн! туса илет, пилĕкĕнчен çыхнă вĕрене икĕ аллипе пусса карăнтарать те, чăнкăлл-чанкăлл-чанн! юрласа яраççĕ кĕçĕннисем.

— Чарăн!—кăшкăрчĕ Пантелей çумне хăпарса тăнă Асат Петĕрĕ. — Çитет минретсе халăха!

— Тархасшăн, тăхтăр кăштах, — йĕрсе ярасла ыйтрĕ чан çапакан. — Бах ку. Эпĕ вĕт Чулхулара та чан çапнă-çке. Пĕр вырăс вĕрентнĕччĕ. Тепĕр çаврăм çеç юлчĕ. Сывпуллашу кĕв-

ви. Итлӗр, ак...

— Янн-чӑн-чанн-чӑнкӑлл-чанкӑлл-чанн-чанн...

— Тем пахлатса тӑрать, тупнӑ пӑх-пах! — терӗ те Асат Петӗрӗ пӗчӗк пурттипе вӗрене качлаттарчӗ. Юлашки хут ян-н! туса мӑн чан шӑпланчӗ. Кач! тутарчӗ тепре. Чӑн-чанн! туса сассине татрӗ вӑтамми. Кач! Чӑнкӑлл-чанкӑлл-чанн! сывлӑша вӗҫсе ҫухалчӗ кӗҫӗн чансен уҫӑ кӗвви.

Касса ларнӑ вӗрен ҫаклашкисене вӗҫертсе аллисене вӗрсе илчӗ те Усламҫӑ Прухӑрӗ майӗпен пилӗкӗнчи вӗренне салтрӗ, унтан тин тарӑхуллӑ куҫӗнчен шӑпӑртатса юхса аннӑ куҫҫульне шӑлса типӗтрӗ.

— Ухмахсем эсир, — терӗ вара ҫӗрелле сурса. — Халӑх ӗмӗтне, халӑх кӑмӑлне касса татакансем. Ҫӳлти Атте те, ҫӗр айӗнчи аттесем те, ҫӗр ҫинче пурӑнакан этемсем те сире ку ҫылӑхшӑн нихҫан каҫармӗҫ. Ҫӗр чӑтайми усал ӗҫ тӑватӑр...

— Пӑрӑн пирӗн ҫул ҫинчен, Прухӑр — ухӑр-купец, — аяккалла тӗртрӗ ӑна Турпан Пантелейӗ. — Саншӑн усал пек туйӑнать пуль, пирӗншӗн — ырӑ ӗҫех. Ҫӳлтен хуішнӑ ӗҫ. Эпир коммунизм тӑватпӑр. Коммунизмпа тӗн вара пӗр варлӑ мар. Ҫавӑнпа чаратпӑр Пимӑнсене малашне халӑх хушшине усал сӗрӗм сарма.

— Сана-и, сана ҫиччас юсатпӑр! — юнарӗ Прухӑра ял Совет хуҫи. — Колхоза кӗместӗн эс. Пире пулӑшмастӑн. Единоличник — халӑх тӑшманӗ. Ҫӗпӗрсӗрех ҫӗртетпӗр ак сана...

Чиркӳ чанӗсене антарса района леҫсе панӑ хыҫҫӑн платниксем ӗҫе тытӑнчӗҫ. «Ҫылӑха-мӗне ҫухатнӑ» хресченсем чиркӳ пуҫӗсене пӑсса антарчӗҫ, ҫурта ҫӗнӗрен тӑрӑларӗҫ, шалта урӑхлатса сцена турӗҫ. Хурӑнсӑрта клуб уҫӑлчӗ. Турпан Пантелейӗ ӗмӗтленнӗ пекех, унта культура ҫурти ҫеҫ мар, вучахех ҫунма пуҫларӗ. «Интернационал» та, халӑх юрри-такмакӗ те янӑрарӗ. Ҫамрӑксем спектакль лартма пикенчӗҫ. Майӗпен хӑнӑхрӗ ял ҫынни унта ҫӳреме.

Ял Совечӗпе колхоз правленийӗ единоличниксене Масар тӑвайккине ҫӗр уйӑрса пачӗ. Авалхи тӗнпе пурӑннӑ чухне унта ял масарӗ пулнӑ, тет. Ялтан виҫӗ ҫухрӑм аякра, чуллӑ ҫӗр ҫинче, унччен курӑк ҫеҫ ӳстернӗ. Акӑ хайхи «вырӑнти Ҫӗпӗр нуши» тинех килсе ҫапрӗ Усламҫӑ Прухӑрне те. Йӗре-йӗрех. турра пуҫҫапа-пуҫҫапах уҫмалла пулчӗ вӗсен ҫӗнӗ ҫӗре, авалхи несӗлсен лӑпкӑ та сӑваплӑ вырӑнӗнче тырӑ акса ӳстермелле пулчӗ. Чухӑнлӑха тӑрса юлнӑ лавккаҫӑ, усламҫӑ ачи, ӗнерхи нэпман пурнӑҫ нушине Масар тӑвайккинче кӑшласа вӑл мӗн тути каланине туйрӗ.

Хăшĕсем чăтаймарĕç, ирĕксĕрех кĕчĕç колхоза. Усламçă Прухăрĕ çеç правлени еннелле утмарĕ, кĕлетки йăмшакрах пулин те, ăшчикĕ хаяр унăн, çирĕп кăмăллă вăл.

Турпанов колхозĕ вăй илчĕ, ял çыннисене ура сыртарчĕ, çăкăрлă турĕ, çĕнĕ пӳрт-çурт ларттарчĕ. Турпан Пантелейĕ вĕсемшĕн тур панă телей вырăнĕнчехчĕ. Çавăнпах пуль ăна куçранах «Пантелей — тур панă телей» тетчĕç.

Ним тума аптăранă Перун Пимăнĕн, чиркӳ хупăннă хыççăн, ирĕксĕрех колхоза кĕме тиврĕ. Унашкал прихутсăр тăрса юлнă пачăшкăсем Чăвашра сахал мар пулнă-çке. Епархи пурне те ĕç тупса парайман.

Вăтăр çиччĕмĕш çулта Перун Пимăнĕпе Турпан Пантелейĕн арăмĕсем пĕр кунтах ывăл çуратса пачĕç. Усламçă Прухăрĕн те арăмĕ кĕçех çăмăлланчĕ, упăшкине ывăл парнелерĕ.

Арман пĕвине колхоз темшĕн пĕвелемерĕ. Çырма тĕпĕ çеремленсе ларчĕ. Çыранĕсем тем сарлакăш. Киреметкасси енче, ĕлĕк Киремет уйĕ тенĕ вырăнта, тем пысăкăш усă лаптăк. Часавай юхăнса çĕрсе пĕтрĕ. Ăна юсаса тăракан тупăнмарĕ, ун патне парне йăтакан та сахаллансах пычĕ. Киремет хурăнĕ те ватăлса çĕре тӳнчĕ. Пантелей, аслă аслашшĕне Турпана асăнса, ун çумне тепĕр хурăн лартса ӳстерчĕ.

Киремет çырмине икĕ çыранĕпех тата хăйсен умĕнчи çерем лаптăкĕпех улмуççи ларттарчĕ Пантелей.

— Ку сад — çĕнĕ пурнăç сачĕ, хамăр ачасен ячĕпе лартнă сад пултăр, — хăпартланса калаçрĕ халăх умĕнче председатель. — Арман пĕвинчен тăварах, Киремет çăлкуçĕ тапса тăнă тĕлте, пĕве пĕвелĕпĕр.

Улмине тутанса кураймарĕ Турпанов. Вăрçă тухнă уйăхрах вăл фронта лекрĕ.

Турпанов майор нимĕç эшкерĕсен çĕрĕ çине хура тур ăйăрпа паттăррăн, çĕнтерӳллен пырса кĕчĕ. Унччен вара, тăватă çул хушшинче, мĕнле кăна вут-çулĕм витĕр тухса мĕнле кăна хĕн-хур тӳсме тӳр килмерĕ-ши? Хаяр тăшман та вĕлереймерĕ ăна, Перун Пимăнĕпе Усламçă Прухăрĕ ылханни те тĕп тăваймарĕ — Хурăнсăра чĕрех таврăнчĕ. Одер шывĕнче питне çунă хыççăн вăл хăйсен умĕнчи çăлкуç шывĕпе чун каниччен çăвăнчĕ. Анчах та тăван çĕр имлĕхĕ унăн ăшри вут-çулăмне сӳнтереймерĕ. Колхоз юхăнăç лачакине путнă. Киремет çырминчи сада юхăнтарса пĕтернĕ. Унта-кунта сыхланса юлнă хуçăк е хăрăк улмуççи тунисем чĕрене пырса тăрăннă пекех туйăнаççĕ Килте арăм вырăнпа выртать —

хĕрĕх пĕрремĕш çултанпах.

— Çыру çине йăлтах çыраймарăм, — шуранка пичĕ çине куççуль тумламĕсем шăратса кăларчĕ Варвари, — ах, сана кĕтни, Пантелей, граждан вăрçине шутласан, пĕтĕмпе çичĕ çул кĕтрĕм сана... Ун чухне эпĕ сывăччĕ, халĕ... Ура çине тăрса санпа юнашар ытакланса утăттăм, санпа ăмăртмалла чупăттăм, санпа урай кашти авăнмалла ташлăттăм. Çук çав... тем пăталарĕ... Юрать ачасем пур та.

— Ан кулян, чунăм, эпĕ пур халĕ, — арăмĕн пичĕ çинчи куççульне чуптуса тасатрĕ Пантелей. — Чĕрлĕн-ха. Ман хăватпа ура çине тăратăнах эсĕ, Варвари.

— Тăрасчĕ те çав, анчах... темле çав, — çăлăнăç телейĕпе йăлкăшаççĕ чирлĕ хĕрарăмăн хăмăр куçĕсем. — Ытла нумая тăсăлчĕ. Çынсем калаççĕ, упăшкăвах пĕтерчĕ сана, теççĕ. Ытла асрĕ çав, никама та уяса тăмарĕ, теççĕ. Чиркӳ хуптарчĕ, Усламçă Прухăрĕсене Масар тăвайккине хăваласа ячĕ, Киремет çырминче сад ларттарчĕ, Киремет çăлкуçенчен шыв мехлерĕ... тата тем те пĕр калаççĕ.

— Пустуй япала вăл! — алă сулчĕ Пантелей.

— Темле çав, чунăм. Эс итле. Перун Пимăнĕ сана, мана та ĕнтĕ, ылханса Шупашкар чиркĕвне кайсах ятарласа кĕлĕ тутарнă, тет. Пирĕн кил таврашне халĕ те тухатса тем те пĕр килсе пăрахаççĕ. Шухăшла-шухăшла пуç та арканса каять ĕнтĕ. Çавсен ылханĕ те çитрĕ пуль, киремет те тытрĕ пуль тетĕп. Тем парни те парса пăхрăмăр киремете. Юмăç карчăк та чĕнтертĕмĕр. Усси пурпĕрех çуккă-çке, Пантелей?

— Хытă шăннă пулас эс, кĕлеткӳне витĕрех илнĕ. Çавăн хыççăн аптăрарăм, тесе çырнăччĕ. Астăватăп.

Варвари сылтăм аллипе упăшкин тĕреклĕ хулпуççийĕсене хыпашларĕ, мăйăхлă питне ачашларĕ.

— Ара, вĕçекен çерçи ӳкетчĕ те... Тарла-тарла çĕр чаватпăр та кунĕпе, каçпа хытăркаса выртатпăр. Сăр тăрăхне çитеймерĕ вăл усал нимĕç, асапне кăтартса хăварчĕ. Юрать эп чĕрĕ-ха, вилекенсем те пулчĕç унта... Халь çапах, эсĕ пур та, чун юрланă пек. Виç тумлам эрех сыпнипех ӳсĕрĕлсе кайрăм. Тен, сана курнипе-ши?.. Эс юрланине хăçантанпа илтмен. Юрласа пар-ха хăвăн юратнă юрруна? Колхоз тунă çул хĕрлĕ улахра юрланине.

Пантелей пуçне çĕклерĕ, пĕчĕк пӳрт ăшчиккине пăхса çаврăнчĕ, кĕтесре ларакан çĕтĕк-çатăк купăсне асăрхарĕ, туртăнса ăна илчĕ те, ĕнерсе, калама пуçларĕ, хыççăнах уççăн юрласа ячĕ:

*Кӗмӗлтен кӗпер хывтарӑттӑм...*

— Пулӗ-ха, пулӗ малашне, пурте пулӗ, Пантелей, халь вӑрҫӑ чарӑннӑ, — лӑплантарчӗ арӑмӗ хурланса юрлакан упӑшкине.

— Ҫавӑншӑн ҫӗнтертӗмӗр ӗнтӗ, Варвари. Пуҫа усар мар-ха. Авӑ, ачасем килеҫҫӗ. Эх, ачамсем! Хыҫалта чупаканни, пӗчӗкки, Михала пуль-ха.

— Хӗрлӗ кӗпепе-и?

— Аха.

— Апла ҫав чарусӑр. Хӑвнах хывнӑ.

Яла тухсан, правлени патӗнче, Пантелей Перун Пимӑнне тӗл пулчӗ. Пимӑн сухалне каснӑ, кӗске мӑйӑх хӑварнӑ. Питҫӑмартийӗсем самай туртӑннӑ, сӑмси ҫумӗпе тарӑн йӗрсем палӑраҫҫӗ. Куҫӗ пушшех чееленнӗ. Чӗлхи ҫивӗчленнӗ, сӗрсе калаҫнӑ май, кашни сӑмахӗ ҫине пыл сӗрнӗ пек наркӑмӑш хурса пырать.

Фашист текен нимӗҫне хӑй йӑвинех леҫсе ятӑр пулать апла. Йытӑ пекех хаяр, теҫҫӗ те... Чӑнах-и? Куртӑн и хӑть пӗрне те пулин ху куҫупа?

— Каккуй йытӑ патӗнче унта, сирӗнтен пин хут хаяртарах,—кулса ячӗ Пантелей. — Хӗҫпе те турарӑм. карабинпа та шӗкӗлчерӗм. Йӑвине вара... пурпӗр аркатрӑм.

— Эсӗ, ачи, аркатма маҫтӑр-ха. Ай, маттур. Ха, орден ҫине орден... медалӗсем... Награда валеҫнӗ ҫӗрте пулнӑ пуль эс...

— Унтах ҫитеймерӗм те, анчах вилӗм валеҫнӗ ҫӗрте пулса савӑнтӑм вара, Пимӑн. Фашистсене сутрӑм-сутрӑм та ӑна, хама валли хӑварма мансах кайнӑ.

Пимӑн та чӑтаймарӗ, хулӑн сассипе урама янратса ячӗ:

— Ха-ха-ха! Ытла та чухӑн сутӑҫ апла эсӗ. Вилӗмсӗр тӑрса юлнӑ. Ха, уру та, аллу та вырӑнтах. Ҫынсем, хӑшӗсем, хӑрах урасӑр, чӑлах... Телей тупнӑ эс вӑрҫӑра.

— Эсир тата мӗн тупрӑр-ши ку вӑрҫӑра? Иртнинче лайӑх хӑтӑлса юлнӑччӗ, — тарӑхма пуҫларӗ Пантелей.

Перун Пимӑнӗ, тутине чалӑштарса, йӗрӗнчӗклӗн каларӗ:

— Турӑ панине. Сирӗн ҫапӑҫмалла пулнӑ. Пирӗн сире тӑрантармалла, тумлантармалла пулнӑ. Хамӑр выҫӑ тӑрса юлса йӑлтах фронта ӑсатса пурнӑтӑмӑр. Мӗн, начар усрарӑмӑр-им сире унта? Ҫимелли ҫитнӗ, ӗҫмелли ытлашшипех пулнӑ пуль? Итле, ҫӳлти турӑ кашнинех хӑй вырӑнне вырнаҫтарса тухнине ан ман. Сана хӗҫ тыттарчӗ, мана — ҫурла. Пӗр ӗҫех турӑмӑр-иҫ. Мӗн, кӑмӑлсӑр-им?

— Пит кӑмӑллӑ. Мана Турри шутсӑрах хисеплет. Граждан

вăрçинче те, хальхинче те алла хěç тыттарчě. Сире, сире... «Мана çурла тыттарчě», тесе ан епресе тăр. Çурла тытса курман-ха ку таранччен аллуна. Кладовщикра, унта... Лаша таканě туртса татмалли арçынсене, сире, вăрçă вăхăтěнче хěрарăмсем хушшинче хěртěнсе ашкăнма турă хушнă пуль ěнтě. Пěлетпěр-çке! Прухăр мěнле майпа салтакран çăлăнса юлнине те лайăх пěлетпěр. Чулхуларан таврăннă-и-ха вăл?

— Курман-и вара эсě ăна? Иртнě эрнерех килнěччě-çке. Турă хушнă ěçех тунă вăл та. Апат-çимěç базинче ěçлерěм, тет. Чутах пуççăр юлаттăмччě, тет. Нимěç хурчкисем пăрахса хăварнă кучченеç вěсен складнех кěрсе ўкнě, тет. Юрать çав вăхăтра вăл хулара пěр генерал арăмне ура тупанěнчен кăтăкласа выртрăм, тет. Вăт, пурте эпир пěр ěç тунă — вăрçă ěçě. Пире те, авă, медаль пекки пачěç. Патшалăх наградиех. Санне те, манне те пěр япаларанах шăратса тунă пек туйăнать.

— Пěр металранах, теççě. Анчах та...

— Пěлетěп эсě мěн каласса, — чарчě ăна Пимăн. — Пире эсě эпир вăрçа каяйманнишěн тěкесшěн, хăвăн орден-медаль нумаййипе мухтанасшăн.

— Тěрěс мар-им? Тылри, тěрěссипе, ялти йěкехўре эс. Медаль мар сана, ак çакна памалла пулнă та... — самăр чышкине чăмăртаса ун сăмси умнех тытса кăтартрě Пантелей.

Перун Пимăнě куç айěн пăха-пăха сăмаххисене çупа сěрнě пек сěрчě:

— Вăрçма вěреннě çыннăн ун вăрçасси ěнтě, алă кěçěтсех тăрать пуль çав. Çапăçса-тытăçса эсир унта ěçлеме те маннă, тем. Медаль тенěрен... Çитě-çке пире кунпала та. Тимěр татăкки хырăм туттиех мар. Патшалăх тăхăнтартнă кителў çěтěлсе пěтсен çакса та çўрес килмě-ха ак. Çăкăр кирлě халь, тумтир. Хирěлсе тăриччен кала, колхозах юлас тетěн-и?

— Аçта каятăп ěнтě эпě, çěр çынни. Правление ěç ыйтма килетěп.

— Э-э, çаплах пуль. Сěтел тулли ачу-пăчуна, çемçе кăрманти маткуна пăрахса хăварса каймастăн ěнтě. Вěсене пурне те ура çине тăратмалла вěт. Тăватă çул курманни Варварие те. Шăммипе тирě анчах юлнă, пичě шурçип пирри пекех пулса кайнă тенине илтнěччě те. Çўлти Турă курать çав вăл, пěлет Ана нихçан та ытлах кўрентерме кирлě мар. Пирěн ěнтě çěр çинче нуша куракансемшěн кěлтăвасси çеç юлать. Турă малашне те çаплах пулăшса пытăр сире, Пантелей...

Ял халăхě Турпан йăхěнчи паттăр çынна чăтăмсăррăн кěтнě иккен. Пантелее каллех председателе суйларěç. Колхоз хирěн-

че ҫăкăршăн кĕрешесси вăрҫă хирĕнче тăшманпа ҫапăҫасси пекех йывăррине туйса тӳсрĕ фронтовик. Пурте йăхтăр-яхтăр, нимĕн те ҫитмест. Арҫын вăйĕ сахал. Патшалăхĕ ыйтать: нумайрах тырă, ҫĕрулми, аш, сĕт...

Салтакра пĕрле ҫапăҫнă вырăс юлташĕ, подполковник, Турпанова Мускава чĕнчĕ. Вăл грузовик тупса пама шантарать. Лешĕ хушнă пекех хатĕрленсе тухса кайрĕ председатель тĕп хулана. Хăйпе пĕрле шофер илчĕ. Пĕр катка пыл, шăрттан, шăратнă ҫу ҫул уҫрĕҫ. Вĕр-ҫĕнĕ пек ЗИСпа ҫиҫтерсе ҫитрĕҫ Турпановсем яла. Ура ҫине майĕпен ҫĕкленекен колхозшăн виҫĕ тонна япала турттарма пултаракан автомашина юмахри пек ҫăлăнăҫ урапиехчĕ ĕнтĕ. Анчах нумая пымарĕ ку савăнăҫ. Председателе прокуратурăна чĕнтерчĕҫ. Хупасса хупмарĕҫ ăна, принуд парса, хăратса сехĕрлентерсе пĕтерчĕҫ. Кун хыҫҫăн райкомран пырсах председательтен кăларттарчĕҫ Турпанова.

Эх, мĕн тери пысăк ĕмĕтсемччĕ Пантелей Павловичăн. Киреметри сада ҫĕнетесшĕнччĕ. Ҫĕнĕ ферма ҫурчĕсем лартасшăнччĕ. Шкул тума вăрман кастарнăччĕ. Фельдшер пункчĕпе лавкка валли пурасем пураттарнăччĕ. Патшалăхĕ йывăҫне татах хытарчĕ. Кирпĕч-пĕрене вырăнне саман ятлă япала килсе кĕчĕ чăваш ялне те. Улăмпа тăм хутăшĕнчен хурăнсăрсем хĕртмен кирпĕч ҫапма пуҫларĕҫ.

Председательтен кăларнă хыҫҫăн Пантелей колхоз ĕҫне кашни кунах хутшăнать. Вĕсем ҫавракка пысăк шăтăка вĕтетнĕ улăмпа тăм яраҫҫĕ те, варринчи юпаран кăкарнă лашасемпе ăна ҫăраҫҫĕ. Ырхан янаварсем часах ывăнаҫҫĕ, вара арҫынсем, шăлавар пĕҫҫисене чĕркуҫҫирен ҫӳлерех тавăрса, хăйсем ҫăрма тытăнаҫҫĕ.

— Тур пулăштăр! — илтĕнчĕ ҫурăм хыҫĕнче паллана хулăн сасă. — Этем чурисене сăвап пултăр.

Ҫаврăнса пăхрĕ те Пантелей хăйсен ҫывăхне ҫитсе тăнă Перун Пимăнĕпе Усламҫă Прухăрне курчĕ.

— Хи-хи-хи! — кулса ячĕ Прухăр. — Ай лайăх япаларан тăватăр та коммунизм керменне. Саман самани те ҫитрĕ пать. Салам пултăр пурне те!

Пантелей чĕнмерĕ, малалла ҫăрчĕ. Ҫынсем тарăхса кăшкăрса пăрахнипе ĕҫсĕр аптăранăскерсем аяккалла шурĕҫ.

— Ҫав ҫĕлен-калтасем пĕтерчĕҫ сана. Ҫавсемех ҫăхав янă прокуратурăна...

Миҫе хутчен илтмен-ши Турпанов ҫав хĕрхенӳ сăмахĕсене. Акă, халĕ те кĕрсе кайрĕҫ вĕсем ун хăлхине:

— Çавсемех...

Пĕр çулхине уяр çанталăк çĕре-шыва типĕтсе лартрĕ. Уйри тырă-пулă хĕвел айĕнче çунчĕ. Аптăраса çитнĕ халăх авалхи йăлана аса илчĕ. Киремет çырминче çумăр чӳкĕ тума Перун Пимăнĕ пуп тумне тăхăнсах тухрĕ. Килĕрен çу, сĕт, кĕрпе, çăкăр пуçтарчĕç. Çырма хĕрринче така хуранĕпе пĕçерчĕç те пăттине кашнинех валеçрĕç. Пимăн чӳк кĕлли турĕ, ун хыççăн Киремет çăлĕнчен ăснă «çумăр чӳкĕн» шывĕпе çывăхра тăракансене сирпĕтрĕ, вара аллине хĕрес тытса пĕвене утса кĕрсе кайрĕ. Пурте ун хыççăн шампăлтатрĕç. Кĕменнисене шыва тыта-тыта печĕç. Çапла киремечĕ те, вырăс турри те арпашăнса кайрĕç кунта.

«Çырлах, вутăш, çырлах! Турă пире çумăр парах, тархасшăн парах!» — янăрать çырма туллин Перунов сасси.

«Илья-пророк çумăр çутарать! Илья-пророк тырăллă тăвать!» — тесе çухăраççĕ çыннисем.

Йĕп-йĕпе исленсе пĕтнĕ ял халăхĕ хавас кăмăлпа саланчĕ. Каçалапа чăнах та анăç енче пĕлĕт хуралчĕ, йăлт-ялт çиçсе. хăлтăртатса-кĕмсĕртетсе хăй çывхарни çинчен аякранах пĕлтерчĕ çумăр. Çӳпçерен тăкнă пек тăкрĕ; аслати çĕре кисретрĕ. Тăрнст! тутарчĕ те çывăхрах, Киремет йывăççи çумне лартнă Пантелей хурăнĕ çурăлса анчĕ.

— Ах, хăратăп-çке эп, Пантелей, — пăшăлтатрĕ типнĕ тутипе Варвари. — Эс вăрçăра чухне Киремет çăлкуçне аça çапнăччĕ. Халь хурăна.. Ытла пархатарсăр вырăнта пурăнатпăр-çке эпир...

— Ун пек мар-ха, Варвари, инкек-синкекĕ вăл пĕртте киреметпе çыхăнман. Хамăрăн аслă асатте чунĕ пире тытас çук. Эпир ăна усал туман, яланах ырăпа çеç асăнатпăр-иç.

— Пуç та арканса каять ĕнтĕ. Хамăн та ырлăх пулмарĕ те, санăн та хурлăхĕ пуçу çине пăрлă çумăр пекех çуса тăчĕ те. Тем те шухăшлаттарать... Вилĕмĕ те килмест-çке... Тем чухлĕ кĕл тăватăп... Сире нушалантарса пурăнатăп. Хĕле кĕрсен çирĕм çул çитет те эп çак усал чир тыткăнне лекни...

Тата çирĕм çул пурăнчĕ Вар Варсунĕн Варварийĕ. Сакăрвун пĕрремĕш çулхи çуркунне тин куçĕсене хупрĕ.

Масартан Турпан Пантелейĕ чи юлашкинчен тухрĕ. Тарăн шухăша путса пычĕ çӳллĕ, пĕкĕрĕлнĕ, кăвакарнă кĕреçе сухаллă старик. Ял çулĕ çине пăрăннă май çамрăклăх вăхăчĕ аса килчĕ. Шăпах çак вырăнта тĕл пулнăччĕ вăл Перун Пимăнĕ катаччи чуптарма лартса тухнă Варварие. Хĕре чарусăр аллинчен туртса илнĕччĕ... Акă, халĕ те...

Тусан мăкăрлантарса килекен çăмăл автомашина тăпах чарăнчĕ. Алăкран Пимăн йăраланса тухрĕ.

— Асатрăр апла. Йывăр тăпри çăмăл пултăр.

— Тавтапуç.

— Çылăхлă йăх сирĕн, Пантелей. Турпанран пуçласа — ачусем таранах. Киремет йăхĕ. Пурнăç йĕркине хирĕçле пыратăр. Турă панă телее таптатăр. Ял илемĕпе, Варварипе те, ырă кураймарăн. Ахалех сая ятăн Эх, манпа пурăннă пулсан-и вăл, нихçан нимĕнле киремет те тытмастчĕ ăна. Эпĕ çеç мар, Турă та каçармасть сана, антихриста. Хăвна та хăçан та пулин хутлатса лартĕ-ха. Тĕнче карти ăшĕнче унта пурте хăй вырăнĕнче. Юрĕ, Шупашкара çитсен ывăлăм ĕçлекен аслă чиркӳре çурта лартăп Варваришĕн.

— Ан чăрман. Чунĕ ун пурпĕрех санра мар — манрах. Çирĕм пĕрремĕш çулта ак çак çул çинче тăрантас çинчен анса тарнăранпах манпа юнашар утать. Курмастăн-им, халĕ те çумрах-çке Айта, вĕçтер хăвăн çулупа, Илья-пророк.

— Эх, Пантелей — тур панă телей... Чăнах та пур иккен Турри. Ман сăмаха итлерĕ. Пачĕ сана телей. Хĕрĕх çул савăнтрчĕ арăмран.

— Кай кунтан, ман çул çинчен! Тасал! Турă панă-и мана телей, халăх панă-и... Сан мĕн ĕç пур!

Руль умĕнче ларакан ывăлĕ вăрăммăн кăшкăртсан тин Перун Пимăнĕ мăкăртатса уйрăлчĕ:

— Аçа çапманскер... Киремет хутлатса лартманскер...

Киремет çырми хăй пурнăçĕпе пурăнать, хăй сывлăшĕпе сывлать. Атă айне пулнă чечек пуçне çĕклерĕ. Айлăмра уçă сывлăш капланса йăванать. Кăшт тăварах, тулса ларнă Киремет çăлкуçĕ, çиеле тапса тухасшăн тапăлтатать. Лачака этем кĕлеткине хăй ăшне хытăрах та хытăрах туртать. Турпан Пантелейĕ мекĕрленсе тепĕр хут кăшкăрчĕ:

— Эй, пулăшакан пур-ши!

Тĕттĕм тӳпене сутă сапса анăç енче çиçĕм ялтлатрĕ. Ватă çын кăшкăрнине илтнĕ пекех, кĕç сасси тӳпе тăрăх вĕçсе килчĕ: халтăр-р... Хăй тĕнчепе, тĕнче унпа калаçнăнах туйăнчĕ çак самантра Пантелей старике. Хăлхара çаплах чӳччу, купăс, çамрăксен сасси. Варварипе иккĕшĕ çурçĕрччен чуччу ярăннăччĕ тахçан.. Тахçан... Миçе çул çуккă ĕнтĕ вăл. Саккăр çеç-и? Нумай та мар пек, анчах Пантелейшăн... ĕмĕр тăршшĕ пекех. Юлашки вăхăтра вăл арăмне ялан садра курать. Варвари улмуççисем хушшинче чупать пек. Кулать, аллинчи улмипе илĕртет Хăй патне чĕнет. Пантелей çумĕнчех Пимăнпа

Прухăр та аллисене хĕрлĕ улма еннелле тăснă..

Вăранса каять те Пантелей, аптăранă енне, арăмĕ çăтмахах лекнĕ пуль тесе те шухăшласа илет. Паян пушшех куç умĕнчен каймасть вăл. Çакăнта, хăйсем лартнă садрах, йăпанса çӳрет, Пантелей юррине юрлать:

*Ултă куçлă çăлсем таврашне*
*Улгă улмуççи йывăççи лартăттăм...*

Хăй ултă ача çуратса ӳстерсе хăварма пултарнине пĕлтеретши ку? Пурте сывах, пурте çемьеллĕ. Пĕри тĕп килте юлчĕ, ыттисем саланчĕç. Кĕçĕнни, Михали, ытларах ăша хыптарчĕ. Райсовет хуçи вăл. Виçĕмкун çеç колхозра пулчĕ. Тĕлĕнтерсех пăрахрĕ. Унăн ачи, коммунист, район пуçлăхĕсенчен пĕри, ялта чиркӳ уçтарчĕ. Халăх ыйтать имĕш. Община йĕркеленĕ, тет. Перун Пимăнĕн Мирунĕ пачăшка килчĕ. Çĕнĕрен культура керменĕ лартрĕç те клуб тăррине пăсрĕç. Елĕкхи пек, каллех икĕ çаврака пуçлă чиркӳ капланчĕ Хурăнсăр варринче.

— Куртăн-и, каллех уçăлчĕ чиркӳ! — пуçне каçăртса пăха-пăха çухăрчĕ Усламçă Прухăрĕ. — Асат Петĕрĕпе иксĕр мана вăрçăччен Бах композитор музыкине каласа пĕтерме памарăр. Хальхинче чараймăр! Асат Петĕрĕ тахçанах хăйĕнне тупрĕ, леш тĕнчере тамăкра айланать пуль-ха. Сан... сан та влаç çуккă тек. Виличчен пурпĕр янраттарса юлатăп чиркӳ чанĕсене. Çав сасса илтнипе чăтаймасăр чĕрӳ çурăлса кайтăр мар-и сан...

Тĕнче тепĕр майлă çаврăнса кайнă пекех туйăнать Пантелей Павловича. Хăй çулĕпе тĕп-тĕрĕс пыракан унăн кĕçĕн ывăлĕ чиркӳ уçтарнипех çырлахмасть, колхоза та салатма ирĕк парать. Пĕрисем фермăна, теприсем бригадăна арендăна илеççĕ. Масар тăвайккинчи пĕтĕм çĕре Усламçă Макарĕ тара илнĕ...

Партпухура хытах каларĕ çав Турпан Пантелейĕ:

— Ак çак алăпа тунă колхоза салатма памастпăр! Çын çитмен çĕрте, тен, кирлех те пуль вăл, аренда тени. Анчах та пирĕн вара—ял тулли халăх. Ма мăшкăллатăр вĕсенчен? Ма йĕркеллĕ ĕçлеттерместĕр вĕсене? Ма çав сысна ферминчен тислĕк шывĕ юхтарма чармастăр? Куçпа курсах навус ăшне путмалла мар ĕнтĕ. Колхозах вăйлатмалла. Вăл пирĕн халăх тĕрекĕ пулнă. Кооператор, арендатор... хăйшĕн, хăйĕн хырăмĕшĕн, хăйĕн интересĕшĕн çеç çунать вăл. Уйăхне пиншер, çĕршер пиншер, миллионшар тенкĕ ĕçлесе илесси çинчен çеç çунаççĕ вĕсем. Хаçачĕ-журналĕ, телевидени-радивĕ вĕçĕмсĕр çав укçа хурчĕсене чапа кăларассишĕн ĕрлешет. Эх, хисеплĕ коммунистсем, юратнă тăванялсем, коллективизм вăйне, патрио-

тизм хăватне пĕтерсе хамăрăн совет ушкăнлăхĕн кăшăлне аркататпăр вĕт. Усламçăсем пуç пулса тăрсан, мĕн курăпăр-ха? Çавăрттарар-ха пуç мимисене лайăхрах...

— Эсир пурнăçран юлнă, Пантелей Павлович. Сирĕн вăхăтри мар халь, Пантелей мучи. Эсир, ятарласа парти программи йышăнсах, коммунизм пеккине те туса пăхрăр, анчах халăха ытлă-çитлĕ пурнăç туса параймарăр. Сирĕн хут коммунизмĕнчен макулатура купи çеç тăрса юлчĕ. Эпир халĕ революци тăватпăр, çĕнĕлле социализм, Ленин хушнă пек социализм тăватпăр...

Колхоз председателĕ, Асат Петĕрĕн ачи, Çимун, çапла лĕпĕртетни ăна тарăхтарсах ячĕ. Нивушлĕ вара вĕсем çĕнĕ пурнăç туман? Уншăн икĕ вăрçăра çапăçнă — çĕнтернĕ. Колхоз тунă — ял халăхне çĕкленĕ. Пĕтĕм чун-чĕрене парти ĕçĕшĕн панă. Акă халĕ вĕсене, ватă коммунистсене, пурнăç обозĕнче хăварасшăн. Ай-яй, сарă тутасем, çаракутланса сцена çинче сикнипех, урса кайса шуйттан ташши ташланипех, пыра хыртарса ухмаха тухса каясла микрофон умĕнче мĕкĕрнипех, пĕтĕм йăхтăр-яхтăра халăх пуçĕ тăрне хăпартса лартнипех пулмĕ-ха йĕрке. Чи малтан çирĕплĕх, йĕркелĕх, ăнланулăх, идейăлăх кирлĕ. Тăрăшса ĕçлес вырăнне кунĕн-çĕрĕн пухăнса шавласа çухăрнипе перестройка тени те сывлăша вĕçме пултарать. Улшăну, çĕнетӳ... Тĕнче те, этемлĕх те, уйрăм çын та вăл ялан улшăнура — вĕçĕмсĕр çĕнелӳре. Пĕри ватăлать — пĕтет, тепри аталанать — çĕнелет. Паянхи йывăрлăх, паллах, пирĕн шăл витмелли япала мар. Сирĕн, çамрăксен, малалла ямалла эпир ку таранччен мĕн туса панине. Сакăрвун пиллĕкмĕш çулчченхине пылчăка таптамалла мар, çав çулхи апрельти Пленумран тин çĕнĕлле социализм тума тытăнмалла мар. Мĕн пуррипе çырлахса, эпир мĕн тунине çĕнетмелле. Анчах... ытла вĕçĕмсĕр шăл йĕрместĕр-ши эсир, ытла çав тери мухтанса шавламастăр-ши, ытла çăмăлттайла улăштарасшăн мар-ши эсир халăх пурнăçне? Тем, ĕрĕхме пуçланă ăйăр чăнкă тăвайккирен ӳхĕрсе хăпарса каяймасть-ха... Ай-яй, пире обозра хăварасшăн. Туса пăхăр-ха хăвăр эпир ку таранччен мĕн-мĕн тунине... Мĕн тухĕ...

Пухуран тылă витĕр тулласа кăларнă пек çемçелсе тухрĕ Турпанов. Хытă пăлханнипе унăн кĕлетки сив чир силлесе пăрахнă чухнехилле чĕтрекен пулчĕ, ура вăйĕ лăштăрах кайрĕ. Киремет çырмине ансан, çавăнпах пуль яка пĕрене çинче тытăнса тăраймарĕ. «Ах, ку шуçланчăк пурнăçа...» — тесе калама çеç ĕлкĕрчĕ.

Вырт халĕ шăпланса. Чуччу та вăхăт шутлама пăрахрĕ, хуткупăс та макăрмасть, яш-кĕрĕм те шăплăх кĕтесĕсене саланнă пуль... Çиçĕм çеç çуттăнрах та уçăмлăрах ялтлатать. аслатийĕ хыттăнраххăн та хăрушăраххăн ахăрса тĕнчене кисретет... Çав шавра тахçан, çамрăк чухне хăлхана кĕрсе юлнă кĕмĕл сасă уççăнах илтĕнсе кайрĕ:

— Чан-н! Чăн-чанн! Чăнкăлл-чанкăлл-чăнкăлл-чанн!!!

II

Михаил Пантелеевич Турпанов Шупашкартан нихçан та ырă кăмăл çĕклемĕпе таврăнман. Кам та пулин çуната хуçатех. Ытла тĕлĕнмелле-çке республикăна ертсе пыракан хăшпĕр пуçлăхсенчен? Этемле пуплес чухне пĕрмай йытăлла вĕреççĕ. Вырăнĕсем çавăн пек-ши? Çыннисем çавнашкаллисем пухăннă-ши? Йĕрки çавнашкал-ши? Тараватлăн, шăкăл-шăкăл, уçăмлăн калаççан, хавхалану такам чĕрине те ăшăтса çунатлантарĕ. Пыра хыртарса, мекĕрленсе çухăрнине итленĕ хыççăн, паллах, тарăху туйăмĕ çеç вăйланать, курайманлăх сĕмĕ çуралать. Паян та...

Парти обкомĕн пленумĕнче чиперех итлесе ларчĕ. Пĕрремĕш секретарь докладра вĕсене икĕ хутчен ырласа асăнчĕ.

Ял нуши-терчĕшĕн çунсах хумлă-хумлă хура-хăмăр çăра çӳç сăрланă пек кăвакарса ларчĕ ĕнтĕ, çавраκа çирĕп питçăмартисенче йĕрсем тарăнланчĕç, нерв системи те хушăран ахальтенех алхасма хăтланмасть пуль. Ял çынни çĕр çинче хуçа пулса савăнтăр, тырă-пулă ӳстерсе, аш-какай туса çĕршыв халăхне тăрантартăр, çутçанталăк панă ырлăхпа телей курса пурăнтăр — пĕртен-пĕр çак тĕллевшĕн вăй-хала хĕрхенмесĕр, вăхăта шеллемесĕр ĕçлет Михаил Турпанов райсовет пуçлăхĕнче. Ялсене асфальтлă çулпа çыхăнтарассишĕнех ĕмĕрне вунă çул чакарчĕ пуль. Пĕр йĕрпе тăсас пулсассăн вĕсене, шăпах Шупашкара кайса килмелĕх — икçĕр аллă çухрăм. Кашни колхозра пĕр-пĕр завод е фабрика цехĕ уçассишĕн хăшкăлнине аса та илес килмест унăн. Мĕн чухлĕ пуçлăхпа тытăçман-ши? Хуланалла туртăнакан çамрăксене кăштах тăллама пулăшаççĕ-ха вĕсем. Çапах ялшăнах, колхозшăнах хыпса çунмаççĕ-çке предприяти хуçисем? Цех уçнипех çырлахаççĕ. Социаллă аталану çулне нихăшĕ те уçасшăн мар. Ялти йӳнĕ ĕç вăйĕ вĕсемшĕн мĕн ырлăх мар! Турпанов вара çав заводсемпе фабрикăсен укçи-тенкипе колхозсенче клубсем, больницăсем, ача сачĕсем, магазинсем тутарасшăн, çулсем юсаттарасшăн. Тĕрĕссипе, халĕ вĕсем ял çыннисене колхозран шутсăр çăмăл меслетпе туртса илчĕç. Çирĕп планпа ĕçлекен

рабочи колхоза пурпĕрех пулăшаймасть-çке. Хĕрсĕр е каччăсăр тăрса юлнă хăшпĕр ялсемшĕн çеç усăллă пек çак йĕрке. Михаил Пантелеевич шучĕпе, ял индустрине урăхларах аталантармалла. Хресчен хăй çĕрĕ çинче çитĕнтернĕ çимĕçне колхозра сутма хатĕрлесе çитертĕр. Консерв цехĕсем, ытти пĕчĕк заводсем лартмалла, тĕрлĕрен артельсем уçмалла. Хаклă апатçимĕçе йăлтах хулана ăсатса çуррине çĕртсе яма, юхăнтарма памалла мар. Коопераци юхăмĕпе аренда хутшăнăвĕсем вăй илнĕ тапхăрта шăпх çаксем ытларах усă пама кирлĕ пек. Вĕсем хăйсем çапла тăвасшăн та. Районта патока завочĕ пур. Вăл колхоз территорийĕнче. Мĕншĕн колхоза памалла мар ăна? Кăçалтанпа висĕ хуçалăх çыннисем çĕре, техникăна, пурлăха тара илчĕç. Патшалăх пулăшнипе кăна айланкаласа пыраканскерсем, малашне хăйсен вăйĕпе çăкăрлă пуласшăн. Анчах тĕп хула кабинечĕсенче тырпул ӳстерекен çĕнпалкавçăсем ялхуçалăхне пăтратмалли çĕнĕ йышши алтăр шутласа тупнă. Çав алтăрпа пăтратса вĕсем колхоз-совхоз хуранĕн тĕпĕнчи тутлă çăмаха ытларах ăсса илесшĕн курăнать. Экономика, укçа, хăйхаклăх шавне республика çийĕн çилтăманла çĕклесе, чылай хуçалăха хăйсен шантару ылтăнĕн хăйăрĕпе шăлса лартма та ĕлкĕрнĕ. «Кукуруза», «Рапс», «Çĕрулми», «Ясмăк», «Чĕкĕнтĕр», «Купăста», «Çырла», «Кăмпа», «Вăрлăх» ятлă наукăпа производство системисем туса хунă. Вĕсене вунвунпилĕкшер ученăй ертсе пырать-мĕн. Колхозсемпе совхозсен çав системăсен кантурне укçа хывса тăмалла. Районти агрокомбината та пар, хуçалăх расчечĕпе ĕçлекен системăсене те... Ял çыннин каллех хыр хăйи кăшласа лармалла пулать-и?

Пĕр пуçлă бюрократи çуртне аркатмасăрах юнашар çĕнпалкавçăсен вунă пуçлă керменĕ çĕкленчĕ. Ай хăпартаççĕ ялхуçалăхне, ай вĕçтереççĕ çӳлелле... Çĕнĕрен-çĕнĕ алтăр, çĕнĕренçĕнĕ кермен тупăнать хресченшĕн. Хутаçĕ çеç тулмасть унăн, хытса, çĕтĕлсе пырать.

Çак ыйтусем пирки шухăшласа тăнран каять вара Турпанов. Чăтаймасть те, канашлу-семинарта е пленум-пухура пулемет пек тăкăртаттарса илет. Çук, паян калаçаймарĕ вăл, сăмах ыйтнăччĕ, черечĕ çитмерĕ.

Пленум хыççăн, яланхи пек, «пĕр виç минутлăх» тытса хăварнă тăнкурăкра Чăваш премьерĕн заместителĕ ăна бюрократ пушшипе питрен сисĕмлех çатлаттарчĕ.

— Пирĕн хисеплĕ Михаил Пантелеевич район Советне ертсе пыракансенчен чи ватти, вунă çул ытла тăрмашать ĕнтĕ,

çапах эпир мĕн-мĕн хушнине ним пăркаланса тăмасăр тӳрех итлеме вĕренсе çитеймерĕ-ха. Çĕнĕлĕх тапхăрĕ те, революцилле шухăш улшăнăвĕ те витересшĕн мар унăн хулăн тирне. Акă, эпир ялхуçалăхне нихçан пулман çĕнĕлĕхсем кĕртсе пыма тăрăшатпăр. Вăл пире ура хурать. Хăйсен районĕнчи пĕр хуçалăха та наукăпа производство системисене кĕрттермерĕ. Эпир çав вăхăтрах татах та çĕнĕ системăсем йĕркелесшĕн, сăмахран, «Колорадо нăрри» система. Мускав ученăйĕсене чĕнесшĕн. Пĕтĕм малашлăх халĕ пирĕн — çав системăсенче кăна. Ялхуçалăхне наука шайĕнче ертсе пыма пĕлмелле ăна...

Чăтса пулмарĕ, каçару ыйтсах иксе тăчĕ те Турпанов хăвăрт-хăвăрт каласа хучĕ:

— Çынна вĕрентме питĕ лайăх. Пĕрре колхоза е района кайса хăвăрăн туса пăхасчĕ мĕн те пулин. Институт пĕтернĕренпех çĕр çинче чаваланатпăр-ха эпир, эсир вара... практика вăхăтĕнчисĕр пуçне... ялта ĕçлесе курман. Комсомол, парти, Советсен ĕçĕ... Система, тетĕр. Çапла, пурнăç системи питĕ меллĕ пулса пырать сирĕн — вĕрентӳ системи. Ман сĕнӳ пур. «Колорадо нăрри» система тăватпăр, терĕр. Ку питĕ лайăх япала. Ертсе пыма килĕшетĕр-и ăна хăвăр? Эсир çапах та — наукăсен кандидачĕ, министр. Вăт, пулса пăхăр нăрă министрĕ, пĕтерсе тĕп тума пулăшăр-ха хресчене çав тăшмана, вара эсир чăн-чăн ялхуçалăх паттăрĕ пулăр. Атту кабинетран тухмасăрах икĕ орден, виçĕ медаль илтĕр: пилĕкçуллăхсене ăнăçлă вĕçленĕшĕн те, хĕллехи тапхăрта выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессипе паттăрлăх кăтартнăшăн та...

Премьер заместителĕ çакăн хыççăн хĕремесленсе кайсах шалкăм çумăрĕ тăкрĕ Михаил Пантелеевич пуçĕ çине, чĕринчен тĕллесех наркăмăшлă сăнăсем печĕ.

Питĕ пăлхануллă иртрĕ Турпановшăн пĕчĕк канашлу. Ун хыççăн хура «Атăлĕ» çине ларчĕ те вăл Шупашкартан, такам хăвалană пек, çĕмренле тухса вĕçтерчĕ.

Виççĕмĕш çул ĕнтĕ вăл шоферсăр пурăнать. Руль умĕнче яланах хăй. Машинăна çăмăллăн тытса пырать. Обком пленумĕнчи хĕрӳ калаçу, премьер заместителĕ лĕпĕртетни тата иртнинче тăван килĕнче пулни хутăшса пуçра пăтранчĕç.

— Эсир тĕрĕс мар ĕçлетĕр-ши, ывăлăм, е эпир ĕлĕкхи пек чаваланма манса кайрăмăр çак çĕр çинче, йăлтах аптрамалла, —куçран витĕр пăхса ытарлăн каларĕ ун чухне ашшĕ, Пантелей Павлович. — Кĕçех тăхăрвунна çитетĕп. Курманни юлмарĕ пуль. Паян та ытлашши хĕпĕртесех сикмелли çук. Хаçат-

па радио шав çĕклесен те... халăх кăмăлĕ хуçăкрах. Уçă мар. Тем çитмест. Кĕрхи нӳрĕ çанталăк пек.

Шоферта ĕçлекен пиччĕшĕ, машинине кил умне тăратса, пӳрте васкаса кĕчĕ те ашшĕн сăмахĕсене тăп чарăнсах итлесе тăчĕ, вара шăллĕ хуравлама ĕлкĕриччен шакăртаттарса хучĕ:

— Мĕн вăлтмалли унта. Эпĕр айăплă-и? Эпĕр, хушсан, çӳлтен чип-чипер йĕркелесе пырсан, тем тума хатĕр. Алăра пĕр ĕç пирĕн. Эсир вара... Ан çиллен те, шăллăм, ытла улпутланса кайрĕç пуçлăхсем, халăхран уйрăлчĕç. Халĕ те, перестройка вăхăтĕнче те, çавах-çке. Хуçа пулнă та — пуçа касăртнă. Пуçне хăйĕнне арпа çеç тултарнă-ха — пурпĕрех хывăх вĕçтерет. Хывăхпа хырăм тăранать-и? Хăйсем пĕрмаях шăлĕсене йĕреççĕ. Шăлйĕрен вăл, тем тесен те, çăмăлттай çын. Унашкалли яланах хăй халăхпа пĕрле пулнă пек, халăхшăн тăрăшнă пек кăтартать, кут хыçĕнче вара... хăйшĕн, хăйĕн çемйишĕн, тăван-юлташĕшĕн çеç тăрмашать. Хăйсене—тĕшши, халăха—хывăхĕ. Эх, пирĕн тăрăх пĕтĕм Чăвашĕпе кĕрленĕ вĕт, атте?

— Çапла пулмасăр. Вăрçăчченех эпир ура çине тăнăччĕ... Халĕ ӳкес пек сулланатпăр...

— Районĕ те, колхозĕ те пирĕн хӳрене юлчĕç. Йăлтах пуçпа ĕçлеме пĕлмен пуçлăхсем пĕтереççĕ. Патшалăхĕ укçине лавĕ-лавĕпе тăкать пуль пирĕншĕн, эпир вара.. Паянхи çак пăтăрмахшăн эсĕ те айăплă, шăллăм, эсĕ те...

Михаил Пантелеевич пиччĕшĕпе ашшĕне таварса каламалли витĕмлĕ сăмах шырарĕ, пуç хултăрчне çавăрттарчĕ-çавăрттарчĕ те кулса ячĕ:

— Ку сăмахпа хырăм тăранмĕ. Сĕтел хушшине ларар-ха часрах. Атту иртенпе çăвара çăкăр тĕпренчĕкĕ яман. Тӳрех семинартан. Канашлуран канашлăва çеç ярăнса çӳретпĕр. Агропром комитечĕ пире эртелпе пухса пĕрмай çаран çулма, тырă вырма, тислĕк тăкма, юр тытма тата тем тума та вĕрентет. Паян хамăр яла, авă, пӳрт тума вĕренмешкĕн килтĕмĕр. Пĕтĕм республикипех. Мĕнле пек, э? Эсĕ, пичи, мана мар, ав, çавсене, шупашкарсене, ятла.

— Эп сире пĕрлех пĕр пушăпа çатлаттаратăп, — пиччĕшĕ хăвăрт аллисене çуса, шăллĕпе юнашар сĕтел хушшине вырнаçрĕ, арăмĕ лартса панă турилккене ун умнерех шутарчĕ.

— Этем çăкăрпа çеç тутă мар тенине те тахçантанпах пĕлетпĕр ĕнтĕ, — кăххăмлатса илчĕ çав хушăра ашшĕ. — Тĕрĕс, канăçлăх та, чун кантармăш илем-силем те кирлĕ çынна хăй вăхăтĕнче. Анчах чи малтан... çынна, эппин, çăкăр-тăварах,

аш-пăшах кирлĕ. Пурте, ав, тӳрех алла кашăк тытасшăн. Çăкăр пур — пурнăç пур. Çук та — эс ху та çук тĕнчере. Хамăр хырăма тăрантармалăх та туса илейместпĕр ăна, пурнăç пуçламăшне, ылтăнпа улăштарса ют çĕртен сĕтĕретпĕр. Намăс мар-и? Эх, тем çăраççĕ, тем пăтратаççĕ, тем эксперименчĕсем тăваççĕ ялхуçалăхĕнче.

— Çук, шăллăм, улшăнмасть лайăх еннелле пурнăç: хресченĕн те, рабочин те. Акă, тутанса пăх-ха çак кăлпассине. Шупашкарта черет тăрса туянтăм паян. Киловĕ тăхăр тенкĕ. Пĕрер-икшер татăк лекет ĕнтĕ пире. Кĕпĕртеттерсе ярăпăр та, алю, ыран каллех туян. Мĕнпе? Пилĕк тенкĕ ĕçлесе илеетĕп-иха кунне е ĕçлесе илейместĕп те. Аш-пăш çеç мар, стройматериалĕ те, пурте капашсăр хаклă пирĕншĕн, ял çыннишĕн, укçа çитмен çыншăн. Мăнтарăн хули çыннисем те «хут таткипе» тăранса пурăнаççĕ. Ашĕ, кăлпассийĕ, сахăрĕ, кĕпе çумалли порошокĕ, супăнĕ — талонпа... Кĕçех çак сывлăша сывлама та, çак çĕр çине пусма та талон кирлĕ пулать пуль, тупата. Кам айăплă-ши уншăн.

Пиччĕшĕпе ашшĕн сăмахĕсем Михаил Пантелеевич чĕрине йĕппе тирнĕ пекех ыраттарчĕç. Ылтăн хакĕпе танлашакан кăлпасси татăкĕ те пыра ларчĕ. Район пуçлăхĕсенчен пĕриçке вăл. Апла пулсан, çĕнетӳ тапхăрĕн паллисем район Совечĕн ĕçĕнче халăха савăнтарма пултараймаççĕ-ха.

Тăван Хурăнсăрта кăна мар, районти е ытти çĕрти çĕршер ялта пулса иртме пултарать кунашкал калаçу. «Кам айăплăши уншăн?» текен ыйту ăна çеç мар, ытти пуçлăхсене те, çав шутра Чăваш премьерĕн заместительне те, такам та тӳрĕмĕнех пама пултарать. Ку калаçу мĕншĕн аса килчĕ-ха? Ахальтен мар. Вăл — тĕрĕс калаçу, пурнăç калаçăвĕ. Çавăнпах пуль куçранах каларĕç ăна. Çĕршыв пăтранăвĕпе аталанăвĕнче вăл чăнах та ку таранччен ял çынни умĕнчи парăма татайман-ха.

Çак шухăш ăна ялалла туртрĕ. Шоссерен пăрăнса вăл Хурăнсăра тӳрĕрен тухма шутларĕ. Каллех ашшĕпе, пиччĕшĕпе чун каниччен пуплес килчĕ унăн. Калаçмалли вара нумай. Хăйсен ял Совечĕн сессийĕнче пулса иртнĕ тавлашу та асран каймасть.

Патшалăх çĕрĕ Советсен аллинче пултăр. Ял Совечĕ вара ăна усă курма колхоза тара патăр. Кирлех пулсан — уйрăм çынсене те. Нумай çуллăха. Çĕршывра амалнă çак шухăша хурăнсăрсем те ăнланнă пек. Анчах... пурте пĕрешкел мар. Унăн ашшех урăхла чуптарать урапине.

— Пилӗк çуллăха, вунă-çирӗм çуллăха çӗр каса-каса илесшӗн халь хăшпӗр пуçтах çынсем. Нумай кирлӗ вӗсене. Ыттисенчен ытларах. Пуян пурăнасшăн. Укçа миххипе вылясшăн Усламçă Прухăрӗн ывăлӗ Макар та, авă, ял çӗрӗ çине кӗлеткипех хăпарса выртасшăн. Масар тăвайккинчи аллă гектара алла çавăрса илчӗ. Вунă çул хушши пуять те ӗнтӗ унпа, кайран... пăрахать. Çапла вакласа пӗтерӗпӗр-ши вара эпир вăтăрмӗш çулсенче пӗр çӗре пуçтарнă, халӗ лайăх пусăçаврăнăшӗ туса çитернӗ колхоз çӗрне? Нивушлӗ пуçа каялла çавăрса лартрӗç пирӗнне? Малалла пăхса мар, суккăр куçпа каялла пăхса утатпăр вӗт, тăвансем! Эсӗ, Михала, хамăрьялсене арендăпа астарса йăнăш тăватăн. Пирӗн колхоз ахаль те вăйлă. Эх, эпир купаланă çурта тӗпрен ишӗлтерсе питӗ пысăк йăнăш тăватăн. Вуншар çул çирӗп ларнă вăл çурт. Унта çӗнӗлле пурăнма вӗреннӗ, хăнăхнă ял çынни. Пӗр çемьене чăмăртанса çирӗпленнӗ. Пăсмалла мар ăна, юсаса çӗнетмелле çеç. Ун вырăнне кашни хăй тӗллӗн çурт лартма тытăнсан... Кашни хăй хырăмӗшӗн çеç ăшталанма пуçласан... Темле асарписер ку. Туршăн та, патшалăха аялтан хăлтăклакан ăнланмалла мар усал вăй. Çын хыççăн ан сик, Михала. Тем хушакан та пулнă пулӗ те... Пуçпа шухăшла малтан. Итле мана, ваттине...—шывланнă куçӗсене шăла-шăла калаçрӗ Турпанов.

Ашшӗне ун паян курмаллах, лăплантармаллах ăна. Ахаль те тарăхса, вӗчӗхсе ывăнчӗ пуль. Тăвайкки хӗрне çитсессӗнех вӗсен ялӗ Хурăнсăр куç умне ывăç тупанӗ çинчи пек тухса выртать. Йăмраллă урамсем çырма тăрăх тăвалла чӗпчӗррӗн тăсăлаççӗ. Шифер, хӗçтимӗр витнӗ пӳртсем хушшинче чиркӳ пуçӗсем, çӳллӗ тата лутрарах йӗпсисем çинчи хӗрессем йăлтăртатса илчӗç. Ял çав тӗн ӳкерчӗкӗсӗр çур ӗмӗр ытла пурăннă. Кăçал вăл каллех пӗлӗтелле кармашрӗ, кивӗ никӗс çинчи тымартан чӗрӗлчӗ. Уншăн Перуновсем пуçӗпе тăчӗç. Халăх çӗр çине хывнă авалхи никӗсе хăех хăй пӗлнӗ пек çӗнетрӗ. Колхоз та халăх хывнă никӗсех. Пурнăç никӗсне хывтараканӗ Пантелей Павлович Турпанов та уншăн пуçӗпе тăрать. Ăна та тӗрев парса пулăшакансем пур. Анчах... сахалраххăн. Çамрăксем—кооперацишӗн, арендăшăн. Çӗршыв çийӗн йăсăрланакан тӗтре вӗсене ытларах чыхăнтарать-ши? Çав тӗтре хыçӗнче йăлтăртатакан ылтăн тӗслӗ укçа антăхтарса ярать-ши? Е халăхӗ, илӗртнӗ кимӗ çине ăнланнă-ăнланман кӗрсе ларса, çӗнӗлӗх хумӗ çинче ярăнма юратнăран-ши?

Масар тăвайккинчен анаталла йăрлаттарса анать хура «Атăлпа» райсовет ӗçтăвкомӗн председателӗ Михаил Панте-

леевич Турпанов. Тем аса илсе сулахаялла, юман ращи еннелле ытларах пăха-пăха илчĕ вăл. Усламçă Прухăрĕсен, единоличниксен, çĕрĕччĕ авалхи масар лаптăкĕнче... Унтан та, кунтан та шырлансем тăсăлаççĕ халĕ çырма тĕпнелле. Çул хĕррипе те. Сиссе те юлаймарĕ Михаил Пантелеевич, машина чалăшса, чалăшса, ишĕлекен тăпрапа юхса, юхса анчĕ те... хытă тăм çине хырăмпа тăнклатса ларчĕ. Сулахай чĕркуççи чăтма çук ыратса кайрĕ. Машина сулахай енĕпе шырлан хĕррине выртрĕ, сылтăм ураписем сывлăшра çаврăнса тăчĕç. Турпанов мекеçленсе сылтăм енчи алăкран тухрĕ те çĕре сиксе анчĕ, анчах ура чиксе килнипе айлатса илчĕ, уксахлакаласа тавралла пăхса çаврăнчĕ. Пĕччен халлĕн тухасси пирки шухăшламалли те çук. Хĕвел те, авă, «Ирччен!» тесе кулнăн, кӳршĕ ял хыçне паппа тума кĕрсе выртрĕ. Унăн çакăнтах çĕр каçмалла-ши? Шухăшларĕ-шухăшларĕ те, багажникран кĕреçе кăларса, çĕр чавма пуçларĕ, ывăнса çитсен, çерем çине ларчĕ. Ял енчен «Москвич» килнине курсан, савăннă пек те пулчĕ.

— Салам, Михаил Пантелеевич! — машинăран тухса ун патнелле çывхарчĕ Усламов, шултра та сайрарах шăлĕсене сарлакан кăтартса епрерĕ:—Çĕр юхан-суранне сиплетĕн пать? Çапă вырăнне патшалăх машинипе усă куратăн-ха апла. Эрозие хирĕç кĕрешмелли кунашкал çĕнĕ меслете шупашкарсем вĕрентсе ячĕç-им?

Турпанов тăрса ăна алă пачĕ.

— Мĕн шăл йĕрен! Пулăшасчĕ. Айта пĕрле чаватпăр. Иккĕн икерчĕ çиме те лайăх, теççĕ.

— Сĕтел хушшинче çеç лайăх вăл. Васкатăп. Ман Канаша çитсе çĕвĕçе лартса килмелле. Ял инçе мар вĕт. Трактор илсе кил те...

— Тен, персе хăваратăн мана ял пуçне çитиччен?

— Каçар, Михаил Пантелеевич. Пулăшаймастăп. Çĕвĕç кĕтет. Кĕрĕк çĕлемелле. Хăвах пĕлен. Ман вĕт оборот тумалла. Начар ĕçлесен, эпĕ те çак шырлана, сулнăка, сирпĕнсе юлатăп..

Çӳлтен анакан «Жигули» вăрăммăн кăшкăртрĕ, кĕçех çитсе те чарăнчĕ. Алăк чӳречинчен тăрхала питлĕ, лаптак сухаллă Мирун атте пуçĕ курăнчĕ.

— Сывлăх сунатăп! Мĕн кампанийĕ тăватăр? — ыйтрĕ Перун Пимăнĕн ачи. — Турă пулăштăр.

— Турă вырăнне эсĕ ху тухса пулăш-ха. — чĕнчĕ Турпанов. Кĕреçе пур-и?

— Кĕреçи пур та, анчах... вăхăт çук, Михаил Пантелеевич. —Кĕллеваскатăп-çке. Пĕрле илес, вырăнĕ те тупăнмасть. Епархи хăнисем, арăм... Эпĕ унта. ялта, камран та пулин калаттарăп. Килсе кăларса парĕç ырă çынсем. Эй, Турă, васпати! Çӳлти Атте усалтан сиртĕрех сана...

Пĕр машини анаталла, тепри тăваллла ӳхĕрчĕç. Турпанов пăхмарĕ те вĕсем еннелле, кĕреçене алла илчĕ те ĕçе пикенчĕ.

Чуллă-тăмлă çĕре кĕреçе çĕççи аран илет. Ĕшентерчĕ. Чавмалли нумай-ха. Айлăма уçă сывлăш капланчĕ. Каç чатăрĕ майĕпен тавралăха хупласа пычĕ. Чиркӳ тăрри аран çеç курăнакан пулчĕ. Ял çийĕн электрицă çути ялкăшрĕ. Вăхăтпа шутласан, халиччен пулăшу килмеллех. Ахăртнех, пуп никама та калаттарман.

«Эх, хамăрьялсем, пĕрле ӳснĕ тантăшсем. Чунсăрсем. Çынна инкекре пăрахса хăварма юрать-и çапла? Кашни хăйшĕн çунать: пĕрин çĕвĕç патне васкамалла, теприн — каçхи кĕлле. Пĕрле чавнă пулсан, эртелпе тахçанах кăларнăччĕ ĕнтĕ машинăна. Анчах... пĕрин те кăмăл пулмарĕ. Каçа хирĕç пăрахрĕç те хăварчĕç Масар тăвайккине. Кула-кулах. Мăшкăлласах».

Хыçалти ларкăч çине хăяккăн кĕрсе ларчĕ те вăл шухăша путрĕ.

Куç умĕнчен тантăшĕсем вĕлтĕртетсе чупса иртрĕç. Ăçта васкаççĕ вĕсем? Аха, Михала хăй те вĕсемпех. Уроксем хыççăн, сумкăсене киле пăрахса хăварчĕç те, ялтан тухса чупрĕç, ывăнсан, утса кайрĕç.

— Саншăн каллех пĕçерккĕ лекет ĕнтĕ пире, — терĕ тутине тăсса Макар.

— Мĕншĕн? Аттешĕн-и? — куçне хĕсерех пăхса ыйтрĕ юнашар пыракан Михала.

— Паллах, аçушăн, — хыткан питне сăтăрса илчĕ Мирун.— Пантелей пичи колхоза кĕртнĕ пулсан, Макарсем халь нуша курас çук. Пирĕн атте те кăшт ĕççенех: «Ах, çав Турпан Павăлĕн ывăлех пĕтерчĕ пире», тет.

Михала та çулташĕсене ăнлантарма тăрăшать:

— Ан суй! Макарсен ашшĕ колхоза хăй кĕмен. Единоличник вăл. Çавăнпа сире колхоз пулăшмасть. Сан аçу ав, Мирун, пуп пулнă. Чиркӳ хупăнсан, колхоза кĕнĕ-çке вăл, ма Макарсен ашшĕ кĕмен тата? Кам айăплă?

— Пĕлместĕп кам айăплине, — терĕ салхуллăн лутра Макар. —Атте çавах кураймасть сире, Турпан йăхне «Пирĕн телее Турпан киремечĕсемех туртса илчĕç» тесе вăрçать.

— Мана та санпа ҫӳретесшӗн мар килтисем, Михала, — пӗлтерчӗ Мирун.

— Ан ҫӳрӗр апла. Шкулта та пӗрле ан ларӑр, вӗренме те ан вӗренӗр.. Пымастӑп та сирӗнпе...

Мирунпа Макар хыҫала тӑрса юлнӑ Михалана ик енчен ҫавӑтрӗҫ те тусанлӑ ҫулпа малалла вӗҫтерчӗҫ. Кӗпер урлӑ каҫсан тӑвалла хӑпарма йывӑр. Ҫутра Усламҫӑ Прухӑрӗсен ҫӗрӗ. Хуппа картласа тунӑ, улӑмпа витнӗ лупас ҫумӗнче Прухӑрпа арӑмӗ ясмӑк кӑкласҫӗ.

— Тур пулӑштӑр! — терӗ ҫывӑха ҫитсен Мирун.

— Тавтапуҫ, ачамсем. Ак ҫакӑнта, хамӑрпа юнашар тӑрӑр,— чӗнчӗ вӗсене Макар ашшӗ. — Михалана каллех илсе килтӗрха апла...

— Ах, ҫав ашшӗн чӗлхине ӑна! — вӑрттӑн юнарӗ упӑшкине Чулхула майри. — Ача-пӑча мӗн пӗлет вӑл. Пирӗншӗн вӗсем айӑплӑ-и? Килех, кил, Михала, пӗрле ӗҫлӗпӗр.

Турпан Пантелейӗ тӑрантаспа ҫӳретчӗ. Пӗррехинче Михала, ашшӗ кӑнтӑр апачӗ хыҫҫӑн ҫывӑрса кайсан, хура-тур лашапа Масар тӑвайккине кӗрлеттерсе ҫитрӗ.

— Сире пулӑшма килтӗм! — савӑнса пӗлтерчӗ вӑл. — Тӑварса кӳлӗр плугне.

Ҫӗрне сухаласа пӗтернӗ хыҫҫӑн, каҫ пулттипе, Михала килне кайма тухрӗ.

— Тем пекех пысӑк спаҫипӑ сана, ачам, — тав турӗ ӑна Прухӑр.—Аҫуна та мухтав. Ак ҫак шӑмӑ ани ҫинче усранӑшӑн. — Шит тӑршшӗ шурӑ шӑмӑ татӑккине аллинче сиктеркелесе илчӗ те вӑл шӑл витӗр сӑрхӑнтарса каларӗ: — Авалхи несӗлсен юлашкийӗсенчен тырӑ ӳстерсе ҫӑкӑр ҫитернӗшӗн.

Прухӑр пиччӗшӗн сӑмаххисем пирки яла ҫитичченех шухӑшласа пычӗ Михала, ача ӑнланӑвӗпе пурпӗрех вӑлтса каланин тупсӑмӗн вӗҫне тухаймарӗ. Хӑранипе пушшех чӗтреме ерчӗ. Ашшӗ ӑна, лаша вӑрласа тарнӑшӑн, премӗк-канихветпе кӗтсе тӑманнине пӗлет-ҫке. Хӗрхенес килчӗ унӑн Усламовсене. Ҫӗрне туртса сухалаҫҫӗ, туртса сӳрелеҫҫӗ те... Йӑлтах алӑ вӗҫҫӗн тӑваҫҫӗ. Ытларах Макара шалккӑ пек. Кутран пушӑ е хулӑ лексен те халӗ вӑл ӗҫне тунӑ ӗнтӗ — колхоз лашипе тусне пулӑшса панӑ...

Турпанов машинӑран тухрӗ, хӑй сисмесӗрех раща еннелле пӑхса илчӗ. Усламҫӑ Прухӑрӗсен ани пулнӑ тӗлте темле вӑйсӑр ҫутӑ йӑлтӑрт-йӑлтӑрт туса туххӑмрах сӳнчӗ. Ҫынсен чунӗсем ҫӗр айӗнчен тухса пӗр-пӗринпе юмахлаҫҫӗ, сӑваплӑ вырӑн вӑл, тетчӗҫ ялта ӗлӗкрех Масар тӑвайккинче ҫавнашкал ҫутӑ

курăнсан. Шăмăран тухакан фосфор çути пулнă-ши вăл? Мĕн-ши? Анчах, халĕ те, темле, çанçурăм çӳçенсе кайрĕ Турпановăн. Акă, каллех йăлл-йăлл туса туххăмрах пăчланчĕ. Эх, хăшпĕр çынсем унта кайма хăраса тăратчĕç, Усламçăсен вара ирĕксĕрех тырă-пулă, çĕрулми-пахчаçимĕç акса-лартса ӳстермелле пулнă масар çинче. Выçă вилес килмест вĕт çыннăн! Хаярри питĕ хаяр хăтланнă та ĕнтĕ патшалăх йĕркине пăхăнасшăн пулман хресченсемпе, мĕн тăвăн, вăхăчĕ çавнашкал килсе тухнă.

Эхлетсех чаврĕ Турпанов. Урапасем çаплах çĕре перĕнмесçĕ-ха. Хытах пусăрăнса ларнă иккен. Ывăнса çитсен, çерем çине ларчĕ. Сулахай урана хытах çаптарнă пулас, чĕркуççи тĕлĕнче малтан сурнă пек çеçчĕ, майĕпен вăл çунма, талккăшпе ыратма пуçларĕ, шыçса кӳпшекленсе пырать авă. Пусма та йывăрланчĕ. Шалтан тем чикет. Куçа хупса та пăхать вăл, пурпĕрех умран çухалма пĕлмест Усламçă Прухăрĕ. Аллинчи шăмă татăккине сиктерет те сиктерет.

Ял енчен чан сасси вăйсăррăн вĕçсе килчĕ. Тин таçта кайса кĕчĕ Макар ашшĕ. Ун вырăнне сухаллă, яштака кĕлеткеллĕ, çап-çамрăк Мирун тухса тăчĕ. Каçхи кĕлĕре мар вăл, Саратов хулинче, Революци площадĕнче, шурă кăвакарчăнсем хушшинче.

Вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн вĕсен çулĕсем уйрăлнăччĕ: Макар суту-илӳ техникумне, Мирун музыка училищине, Михала ялхуçалăх механизаци институтне вĕренме кĕчĕç.

— Эс кунта, Саратова, мĕнле майпа лекнĕ? — тĕлĕнсе алă пачĕ Михала хăйсен ял ачине курсан. — Юрлама килмерĕн пуль те... Сассу вăйлăччĕ.

Перун Михали ача чухнехи тусĕ çине ытарлăн пăхса илчĕ те: — Каласан, кулса вилмелле, — терĕ. — Эсĕ пĕлетĕн, Шупашкара эпĕ хамăн чун туртнипе, анчах атте-анне ирĕкĕсĕр, вĕренме тухса кайрăм-çке. Аран-аран кĕркелерĕм. Эпĕ купăс, баян мĕнле каланине хăвах астăватăн. Училищĕре баян класне лекрĕм. Вĕренетĕп çапла музыка ăсталăхне. Каçпа Атăл çыранне тухатпăр. Хĕр... купи-купипе. Пединститут хĕрĕсем тӳрех паллă: хăйсем мĕн вĕренеççĕ — çавăн çинчен пакăлтатаççĕ. Пир тĕртекенсем тумтирĕпе уйрăлса тăраççĕ. Ушкăнăн-ушкăнăн акăшсем пек юхаççĕ тăвалла та анаталла. Ялтан килнĕскерсем, ютшăнчăкрах çав. Ман хамăн та хăюлăх çитмест кампа та пулин паллашма. Турă курчĕ пулас, ман ума та тăпах çитерсе тăратрĕ пĕр пикене. Эс ĕненес те çук камне

— Питĕ чаплă çын, пĕр-пĕр пысăк пуçлăх хĕрĕ-и? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Михала.

— Чаплинчен те чаплин хĕрĕ. Шупашкарти Введенски собор настоятелĕн, аслă пупăн, эппин, кĕçĕн хĕрĕ.

— Чăнах-и? Мĕнле майпа паллашрăн?

— Шутламан-туман çĕртен. Хамăр патра концерт кăтартнăччĕ. Унта хула çыннисем яланах çӳреççĕ. Эпĕ икĕ ари янраттартăм: «Игорь кнеç» оперăран. Вĕçĕнче ман паталла кăпка сарă çӳçлĕ, тутине хĕретнĕ, чăп-чăмăр питлĕ, ытарлă кĕлеткеллĕ хамран лутрарах пĕр чиперкке тăклаттарса пырать. Лара, Лариса пулатăп, терĕ аллине тăсса. Хăйпе пĕрле уçăлса çӳреме чĕнчĕ. Вырăсла-чăвашла хутăш калаçать хăй. Ăна ман баритон питĕ килĕшнĕ. Утсан-утсан Атăл тăрăх, йывăçсем хушшипе çӳлеллех хăпарса кайрăмăр. Хайхискер собор тĕлне илчĕ те тухрĕ мана, шала та кĕртсе кăтартрĕ. Хорта юрлама чĕнчĕ. Пуçăм та арпашăнса кайрĕ вара майĕпен. Килĕшрĕм. Акă, Ларăпа юрлама пуçларăмăр. Хĕр мана ашшĕпе паллаштарчĕ. Эп тахçанхи пуп ачи пулнине пĕлсен, вăл тӳрех каларĕ: «Сан, ачамккă, аçу ĕçне малалла тумалла, ун çулĕпех утмалла, унсăрăн каçарма çук пысăк çылăх пулĕ таса Турă умĕнче».

— Малалла мĕнле?

— Кун хыççăн ялта аттепе анне мана алă çинче çĕклесе çӳременни çеç! Хайсем клуб еннелле пăха-пăха сăхсăхаççĕ: «Аттеçĕм-турă, эсĕ пирĕнпех, ывăлăма пулăшнăшăн сана ĕмĕр-ĕмĕр тав...» Ман пуçа йăлтах çавăрса ячĕç. Пăрахмалла пулчĕ музыка училищине.

— Ан калаç. Чăнах-и? Музыкант пулаттăнчĕ вĕт? Ялта мар, таврара пирĕн пĕр вĕреннĕ купăссă çук. Эх, яла таврăнса музыка шкулĕ уçаттăнччĕ. Ухмах эс...

— Итле, Михала. Пурччĕ ман малтанах унашкал шухăш. Хăвах пĕлетĕн, турра эпĕ ачаранах ĕненмен. Тен, ăна атте хăй те ĕненмест. Мана çапла туйăнать. Хăнăхнă йăла çеç пуль тетĕп. Пионера, комсомола кĕтĕм. Килтен çакса янă хĕресе мăй çинче курнă-и эсĕ манне хăçан та пулин?

— Асăрхаман.

— Ăна эпĕ хапха алăкĕн çурăкне хĕстерсе хăвараттăм та пӳрте кĕнĕ чухне çакаттăм. Çав Ларăпа ашшĕ пуçа минретсе яман пулсанах... Килĕшрĕм вара тĕн шкулне вĕренме каймашкăн?

— Тĕн шкулне? Семинарине-и? Ан култар-ха.

— Чăнах, Михала. Ларăпа пĕрлех килтĕмĕр. Вăл чиркӳ хо-

рĕн дирижĕрне вĕренет. Регент пулать.

— Эсĕ тата кам пулатăн семинари хыççăн?

— Священник.

— Пуп. апла. Сухаллă ултавçă-и? Турра ĕненмен, тетĕн. Суятăн. Ĕненнĕ. Пионер та ячĕшĕн, комсомолец та ячĕшĕн пулнă эс. Умра çăтмахри пек ырă пурнăç çути курнă-курман училищĕпе те, комсомол билечĕпе те çăмăллăнах сывпуллашнă.

— Турă никама та хăй тĕллĕн шухăшлама чармасть, Михала. Мана халь эс хуть ултавçă, хуть те мĕн те, халь тин эпĕ хамăн ĕмĕтрен пăрăнмастăп. Пупсенчен халăх ĕмĕрĕпех кулса пурăннă пулин те, хăй пурпĕрех чиркӳ еннелле туртăнать.

— Халăх-и? Уйрăм çынсем туртăнаççĕ, те.

— Çук, халăх. Халăх ăсĕнче вăл Турă ĕненĕвĕ. Кайса кур-ха эс, чиркӳсенче тĕн уявĕсем вăхăтĕнче кăна мар, ахаль чухне те халăх çапса хĕстернĕ пекех. Апла-тăк, халăх тем ыррине, темле чун уççине кĕтет пуп сăмахĕпе кĕллинчен. Тен, пуп тĕрĕссинех те каламасть пуль, анчах, ман шутпа, нихçан та улталамасть вăл. Мĕншĕн тесен священник, çынсен ыйтăвне тивĕçтерсе, вĕсене ăнлантарса ĕнентерме çеç тăрăшать. Халăх кăмăллă юлать унпа. Апла-тăк, кирлĕ çын вăл пурнăçра. Халăх пусĕнче, пусĕ тăрринче тăракан асамлă çын. Ултавçă тесе эс мана ан кӳрентер...

Анлă лаптăкра калаçса çӳренипе вăхăт иртни те сисĕнмерĕ, хырăм выçса кайрĕ, ӳпке-пĕвертен пĕçернĕ вĕри пĕчĕк кукăльсене пилĕкшер илсе çирĕç те хыççăн çăкăр квасĕ ĕçсе ăша кантарчĕç.

— Сан хăвăн ĕçсем мĕнле пыраççĕ, Михала?

— Аванах. Вĕренетпĕр. Çĕр ĕçне. Тĕрлĕрен машинăсене. Ялти трактористсем валли кĕнеке куçартăм. Чăвашла лайăхрах ăнланмалла пултăр тетĕп-çке. Ăсталăха ӳстермелли курс е шкул пекки уçатăп каникулта. Вĕсемпе пĕрле ĕçлес килет.

— Эсĕ ĕнтĕ, аçу пекех, çĕртен уйрăласшăн мар.

— Мĕн, тĕн сывлăшĕпе тăрантаратăн-им халăхна? Çăкăр кирлĕ ăна, чи малтан — çăкăр. Сан çук турру мар, сан пуш сăмахху мар—хырăм тутти кирлĕ. Эсир çынна çĕртен уйăрасшăн, çӳлти патшалăхри ырлăхпа çырлахтарасшăн. Эпĕ вара ăна çĕр çинчех телей кăтартасшăн. Акă, пĕр тĕслĕх. Икĕ улмуççи тейĕпĕр. Пĕри чанккама хунаса ӳссе кайнă—улми çук. Теприн улми йăтăнса анас пек шăкăри, тураттисем çĕр çумне çитиех усăннă. Хăшĕ усăллăрах?

— Паллах, панулми нумаййи.

— Çапла çав. Çĕр усăллине хăй çумнерех туртать, усăсăр-

рине — хăвалать. Иксĕмĕрĕн те ҫавнашкалах. Эсĕ — сывлăшра, эпĕ — ҫĕр ҫинче. Эсĕ — хăмпă, эпĕ — ҫимĕҫ. Халăх пуҫĕ тăрринче тăрса эсир ун ҫине пушă сăмах купи ҫеҫ купалатăр...

— Юрĕ, эпир тавлашса вĕҫне-хĕрне ҫитеймĕпĕр, — терĕ Мирун Перунов. — Опера итлес килет-и?

— Кăштах ăнкартма пуҫларăм-ха. Кунта килнĕренпе кайкаласах тăратăп. Паян та хавасах пыма театра,—килĕшрĕ Михала. — «Иван Сусанинччĕ-и» унта, а?

— Ҫавă. Глинкан ылтăн-ахахĕ. Эпир Ларăпа кашни вырсарникун пулатпăр опера театрĕнче.

— Сире семинарире ҫирĕп тытаççĕ-и? Мĕнле, йывăр-и вĕренме?

— Ай-яй, музыка училищинчипе танлаштарсан, — тĕрме. Ирĕке ямаççĕ. Канмалли кунсăр пуҫне, хулана та тухма май ҫук. Вĕренмелли питĕ нумай. Тем те пĕлес пулать.

— Пирĕн те мăй таранах-ха вуламалли, занятисене хатĕрленмелли. Пăшкаса ҫеҫ ларатăн.

— Эсир пурпĕрех ирĕклĕ ҫынсем. Пирĕн — уйрăм йĕркеҫке — пăхăну-итлӳ йĕрки. Пиллĕк ҫурăра, акă, ирхи кĕлĕ пуҫланать. Саккăрта — ирхи апат. Сĕтел хушшине лариччен те, кашăк хурсан та кĕлĕ тумалла. Тăххăртан иккĕ ҫурччен уроксем. Кăнтăр апачĕ хыççăн хамăр тĕллĕн уроксене хатĕрленетпĕр, пăхăнса пурăнма, аслисене итлеме хăнăхатпăр, унтан хорта юрлатпăр. Каҫхи апат тĕн кĕнекинчи пĕр-пĕр текста сасăпа вуланипе иртет, каҫхи кĕлĕ те... Вунпĕрте пĕр харăс сывăрма выртtараççĕ.

— Салтакри пекех апла сирĕн.

— Темле, унта пулса курман.

— Эп те Ҫара кайман та, кинора курнипе ҫынсем каланă тăрăх ҫапла пек. Мĕн вĕрентеççĕ вара?

— Тем те. Пĕрремĕш класа вĕренме кĕнĕ чухне славян чĕлхипе такăнмасăр вулама пĕлмеллеччĕ тата вырăсла пĕр йăнăшсăр ҫырмаллаччĕ, унсăр пуҫне ҫирĕм ытла кĕлĕ пăхмасăр каламаллаччĕ.

— Пултартăн-и пурне те?

— Паллах. Унсăрăн мана илместчĕҫ те. Лара ашшĕ ай-яй лайăх экзамен тыттарчĕ Шупашкарта. Хăй вăл Загорскра академи пĕтернĕ. Аслă, пултаруллă ҫын. Унччен Хусанта философи вĕреннĕ, тет. Мана кунта малтан училищĕре вĕренни нумай пулăшрĕ. Музыка пирĕн мĕн вĕренсе тухиччене ӳлансхи предмет шутланать. Бассене епле аталантараççĕ, пĕлесчĕ сан! Вырăссен авалхи юрă йĕркине питĕ лайăх пуҫа хыват-

пăр. Грексен, еврейсен авалхи чĕлхине, славянсен чиркÿ чĕлхине, латынь чĕлхине, вырăс тата е акăлчан, е нимĕç, е француз чĕлхисене вĕрентеççĕ. Тĕн предмечĕсем, истори, философи... Тĕн предмечĕ вара — çынлăх, тимлĕх, кăмăллăх туйăмĕсен чăнлăхĕ.

Чĕркуççи туртса килнипе айлатса илчĕ те Турпанов ура çине тăчĕ, кăштах çĕр чаврĕ. Урапасем тинех лаклатса анса ларчĕç. Машина тÿрленчĕ, тухасса вара... Ял енчен Турамăш çырми тăрăх чиркÿ чанĕн сасси ян та ян туса вĕçсе килет. Çиçĕм çиçнипе тавралăх çуталса каять те пăч тĕттĕм пулса ларать. Аслати авăтнă сасă Масар тăвайкки çумне çитсе çапăнать. Тĕнче хăй сывлăшĕпе сывлать, хăй чĕлхипе калаçать, хăй кăмăлĕпе савать, хăй хăвачĕпе ташлать. Çĕрпе пĕлĕт хушшинчи этем те çав ырлăх-хурлăхпа уйрăлми çыхăнура явăнать. Кашни çын çав çыхăнура хăй уйрăм тĕнче — ăнланса пĕтме çук тĕлĕнмелле субъект. Пĕри никам ирĕкĕнчен килмен тата никама пăхăнман чăнлăхшăн кĕрешет, тепри этем ăстăнĕнче кăна палăрса тăракан юхăма юхтарать.

Мĕн калать-ши, мĕне ĕнентерет-ши çак вăхăтра Хурăнсăр чиркĕвĕн пупĕ Мирун атте Турра ĕненекенсене? Çынлăх, тимлĕх, кăмăллăх туйăмĕн чăнлăхне-ши е çÿлти патшалăх ырлăхĕн пулăмĕсене-ши?

Саратоври тĕлпулу хыççăн нумай шыв-шур юхрĕ. Михаил Пантелеевич тăван ялне инженер пулса таврăнчĕ. Питĕ савăнăçлă самантчĕ. Пурнăç экзаменĕ машинăпа трактор станцийĕнче пуçланчĕ. Сормовăран чăвашсене пулăшма килнĕ Давыдов инженер уншăн пĕрремĕш вĕрентекенĕччĕ. Пултарулăха курса, ăсталăха асăрхаса сĕнчĕ-ши çак пархатарлă вырăс хăй кайнă чухне ăна тĕп инженера лартма — калама хĕн, анчах пилĕк çул вăл çав çăмăл мар вырăнта ĕçлерĕ. МТС хыççăн РТС директорĕ те, «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕн управляющийĕ те пулчĕ. Çирĕм çул техникăпа аппаланса, вунă çул район Советне ертсе пырса халăхшăн усăллă ĕçех турĕ-ши вăл?

Перун Пимăнĕн Мирунĕ Сратовран священник ятне илсе килчĕ. Шупашкар—Чăваш епархийĕнче этем кăмăлĕн, чунĕн тасалăхĕшĕн, ирĕклĕх сывлăхĕшĕн кĕлĕ туса халăхшăн усăллă ĕçех турĕ-ши?

Мирун атте пĕррехинче Турпанов патне ятарласа пычĕ.

— Нумай пулать сана курманни, Михаил Пантелеевич, — сĕтел хушшинчен тухса хирĕç утса пыракан пÿлĕм хуçине си-

рĕп аллисемпе ыталаса илчĕ Перунов. — Тур пулăшса пытăр йывăр ĕçунта.

— Турри пулăшать-ха вăл, Мирон Пименович, хамăр кĕлĕ тума пĕлсен, — кулкаласа илчĕ Турпанов. — Анчах пĕлсех çитерейместпĕр курăнать. Итлесшĕнех те мар пулас вăл тата пире, антихристсене.

— Мĕн калаçатăн, Михаил Пантелеевич! Эсир те, эпир те çав этемсемех.

— Çапли çаплах та, анчах шухăш-кăмăлĕ урăхларах-çке. Эпир — атеистсем. Эсир — теистсем, тĕнчене тытса тăракан пĕр Турă çеç, тетĕр. Марксизм-ленинизмпа теологи хушшинче епле пысăк уйрăмлăх. Тĕн вĕрентĕвне эсир йăлтах урăхла майлă тĕпчетĕр.

Тăваткал çăра сухалне якатса илчĕ те Мирун атте лăх-лăх кулса ячĕ, вара ялтăшĕ çине куç айĕн пăхса васкамасăр каларĕ:

— Сирĕн вĕрентӳпе пирĕн вĕрентӳ хушшинче унта тарăн хушăк çук. Тĕн ĕмĕр-ĕмĕр çынна тăрăшса ĕçлеме, харпăр хăйĕн тивĕçне чĕререн туйса тăма, усаллăха хирĕç кĕрешме, пĕрпĕринпе юлташлă, туслă, тăванлă, тӳрĕ кăмăллă, сăпайлă, таса пулма, çемьене çирĕплетме, ĕçкĕрен пăрăнма вĕрентсе пынă. Коммунизм тăвакансен мораль йăли-йĕркинче те йăлтах пур вĕт çаксем?

— Тĕрĕс. Пур. Вĕсене чăн та этемлĕхĕн воспитани арчинчен, ылтăн арчинчен, пĕлсе илме тăрăшнă. Вĕсемсĕр епле пултăр-ха, ара.

— Вăт çапла çав. Эпир те, чиркĕве пынă халăха этемлĕхĕн ырă енĕсене таса тытмашкăн вĕрентсе, коммунизм ĕçнех тăватпăр мар-и? Тĕн шкулĕ, тĕн дисциплини чи малтан мĕне вĕрентет-ха? Чун тимлĕхне. Кăмăл вашаватлăхне. Çыннăн пурнăçĕ вара çав тĕкĕсем çинче тăрать. Çын хăйне тĕнчере курма пултарсан, вăл ыттине те çав сăнара курма вĕрентет. Çапла тăватпăр та эпир. Турăш çине çеç мар, çынна хăй çине те пăхтаратпăр. Пурнăç тĕкĕрĕ куç умĕнче пултăр уншăн. Ун çине эпир те ачашшăн таса кăмăлтан пăхар, вăл та пирĕн çине çавăн пекех пăхать, пире ĕненет, шанать. Ĕненӳ вăл темле çирĕп япалана та витĕрех шăтарать. Тăнласах итлетĕн-и эсĕ мана, Михаил Пантелеевич, е ытахальтен çеç?

— Питĕ кăсăкланса итлетĕп. Хамăра витерсе çунтарнине куçпа курса çак хăлхапа итлетĕп.

— Çапла вăл, тусăм, халăх ăстăнне хĕрлĕ кĕнеке çӳлĕкĕсемпе пусарма хăтланни уссине парсах пĕтерейменрĕ сире. Эсир,

атеистсем, ăслă калаçатăр, тĕне, Турра, халăхăн авалхи йăли-йĕркине хирĕç тем тĕрлĕ майпа та кĕрешетĕр. Мĕн чухлĕ вăхăт, укçа-тенкĕ, материал çухататăр. Анчах уссийĕ... чĕрне хури чухлĕ те çуккă. Мĕншĕн?

— Мĕншĕн çук? Пур.

— Тĕрĕс мар. Пустуй, сывлăша пушăлла пени çеç. Мĕншĕн тесен эсир халăха ялан ултталатăр. Тăнла, эпир мар, эсир... ултталатăр. Сăмах паратăр — пурнăçламастăр. Тем те шантаратăр — ырăлăх кӳрейместĕр. Кирлĕ чухне — чунтан пулăшмастăр. Юратмастăр эсир çынсене. Хăваршăн, хăвăр ырлăхшăн, хăвăр пурлăхшăн чи малтан ытларах çунатăр. Çын нуши хумхантармасть сире. «Çавăншăн хытăрах кĕрешмелле те, çавна пурнăçлассишĕн вăя шелемелле мар та, çав чикке çитессишĕн ăмăртмалла та...» Вĕсене ăнăçлă вĕçленĕ хыççăн аслă пуçлăхсем умĕнче кăкăра çапса мухтанмалла: эпĕ турăм! Йывăр ĕçпе лутăрканнă çыннăн йĕркеллĕрех пурăнас та, кăмăллăн канас та, уççăн савăнас та килет пуль. Анчах вăл çав ырлăха час-часах кураймасăр юлать. Тарăхать, вĕчĕрхенет, никама шанми, ĕненми пулать. Этемлĕх туйăмĕ, çынлăх çитмест сирĕн бюрократи керменĕнче. Эпир çын çине йăлтах урăхла пăхатпăр. Унăн ăшри туйăмне лăпкă юхăмлă туйăмпа вăратса çĕклентерме пĕлетпĕр. Пире тĕн шкулĕнче çапла вĕрентнĕ. Ырă кăмăллăх, хĕрхенӳлĕх çитменни, вĕсене тивĕçлипе хаклама пĕлменни сире кăна мар, пире те, тĕн çыннисене, хăй вăхăтĕнче нумай кансĕрлерĕ. Ку енĕпе вара çынсемпе ĕçлемелли нумай. Патшалăх ватă-вĕтĕ, чирлĕ-сусăрланнă çынсем валли нумай ырлăх туса парать. Социаллă пулăшу пур пек курăнать çиелтен пăхсан. Анчах та шаларах кĕрсе кайсан этемĕн çав танмарлăх чăтлăхне, унта хĕвел çути ӳкменни тӳрех паллă. Хĕвел çути — кăмăл тути — çитмест çав çынсене. Чиркӳ çакна чи малтан асăрхарĕ, инкек-синкек, йывăрлăх тӳсекенсем патне хăйĕн ырă кăмăллă аллине тăсрĕ. Эпир те районти больницăна, ватăсен çуртне тата интернат-шкула хамăр май килнĕ таран пулăшасшăн. Вĕсен хуçисене каласа ăнлантарăр, пире хирĕçлесе ан тăччăр.

— Кун пирки шухăшласа пăхăпăр. Кăмăл турамĕ никамшăн та ытлашши пулмĕ. Ай-яй, епле тăн парать вăл, духовенство çынни, райсовет пуçлăхне, э? Кам та пулин итлесе ларас пулсан-и пирĕн калаçăва... Сире лартас тейĕç ман вырăна, Мирон Пименович.

Перунов йăлл кулчĕ, çăра куç харшисене пӳрне вĕçĕпе тĕккелесе илчĕ.

— Район хуçи пулаймăпăр, унта коммунист кирлĕ. Советсен ĕçне хутшăнтарсан пире, тем пекехчĕ. Аслă Совета суйланчĕç-ха пирĕн Сăваплă Патриархпа чиркĕвĕн икĕ иерархĕ.

— Архимандритсем-и?

— Çапла. Архиепископсемпе священниксем патне те черет çитессе шанатăп. Иксĕмĕре, сăмахран, пĕр округран район Совечĕн депутачĕ пулма кандидата тăратсан, мĕн тăватăн?

— Халăх кама суйласса çеç кĕтетĕп. Унăн шухăш-туйăмĕ, унăн шанăçĕ, унăн хакĕ.

— Çапла пулмалла та. Патшалăхран уйăрнă пулин те чиркĕве ăна обществăран уйăрма май çук, мĕншĕн тесен пурте эпир — совет çыннисем. Кĕлĕ тума, турра ĕненме никама та чарман. Халăха нихăçан та икĕ пая уйăрмалла мар — турра ĕненекенсемпе ĕненменнисем хушшине хирĕçӳ юпи çапмалла мар. Пĕрле, пĕр çĕре сурмалла пирĕн. Вырăс православи чиркĕвĕн Сăваплă Синочĕ вĕрентнĕ пек, пĕр ĕç тумалла пирĕн. Миршĕн кĕрешме, халăхра йĕрке тума. патшалăх умĕнчи тивĕçе совеç хушнă пек чыслăн пурнăçлама чĕнмелле, ĕнентермелле халăха. Ман шутпа, вăл пурнăç çĕнелĕвĕ пĕр япаларан кăна килет — этемĕн чун-чĕре çĕкленĕвĕнчен, кăмăл-туйăмĕ тасалса пынинчен. Пĕр-пĕрне пулăшмаллах пирĕн. Хамăр ял общини ыйтнине пурнăçламаллах. Чиркӳ ĕçне чармалла мар. Пушарниксене, санэпидеми тухтăрĕсене эсир юриех тиркешме хушнă пуль? Христианство пин çул тултарнă ятпа ял халăхне панă Турă парнине хăйĕн патне çитерме чарса тăнăшăн сире, тем тесен те, çылăх пулать. Хăрамастăр-и?

— Чипертерех калаç-ха эс. Вĕсен — хăйсен ĕçĕ. Мана итлемеççĕ. Эпĕ хушма та шутламан.

— Апла-ха. Юрĕ. Çапах та, кала-ха пĕр суймасăр. Тарăхнă вĕт эсĕ ман çине?

— Тарăхнă. Эпĕ çеç мар, районти, ялти, чылай çын чунтан тарăхнă клубран чиркӳ тутарттарнăшăн.

— Паллă, сирĕн ытларах ĕçлемелле пулчĕ мар-и? Эпир халăхăн шалти туйăмне вăратса çил-тăвăл çĕклемен пулсан, Хурăнсăр çыннисем паян кун та чаплă Культура керменĕ кураяс çукчĕ. Икĕ пысăк ĕç тума пултартăмăр эпир. Община çирĕпленчĕ, хăйĕн суртне каялла туртса илчĕ. Унта кĕçех çурта çутăлĕ, унта кĕçех чан сасси янăраса кайĕ..

— Чан-н! Чăн-чанн! Чăнкăл-чанкăлл-чанкăлл-чăнкăлл-чанн!.. —килсе кĕрет халĕ, унтанпа çур çул иртнĕ хыççăн, Турпанов хăлхине чиркӳ янравĕ. Çиçĕм ялтлата-ялтлата, аслати хăлтăртата-хăлтăртата илет. Вăйлă çумăр çывхарать пулас. Ыратни-

не чӑта-чӑта чавать райсовет ĕçтӑвкомĕн председателĕ. Тухасшӑнах вал çак çĕр тыткӑнĕнчен. Моторне тапратса кĕрлеттерсе пӑхрĕ. Машина малалла куçма шутламасть-ха. Руль çине пуçне хучĕ те вара шухӑша кайрĕ. Усламов аса килчĕ. Канашран тахçанах таврӑнчĕ пуль ĕнтĕ вӑл. Юриех кунтан, тӳрĕрен, тухмарĕ вĕт, тавра çулпа çирĕм икĕ çухрӑм çаврӑнчĕ ĕнтĕ. Бензинне хĕрхенмесĕрех. Ма килес мар-ха çакӑнтан?

Кӑçал Усламов ун патне темиçе те çитрĕ.

— Тусӑм, Михаил Пантелеевич, — йӑлӑнчĕ вӑл тилĕлле,— самана улшӑннӑ чухне пулӑш мана. «Çĕнĕ пурнӑç» ятлӑ кооператив йĕркелесшĕн.

— Мĕн тӑвасшӑн-ха?

— Тир-сӑран тӑватпӑр. Атӑ-пушмак, кĕрĕк, çĕлĕк çĕлетпĕр. Маçтӑрĕсем те во! мĕнлисем пур. Аллӑ иккĕн. Ирĕк парсамӑр?

Усламов, суту-илӳ техникумĕнчен вĕренсе тухсан, райпотребсоюзра база хуçи пулнӑччĕ. Ялхуçалӑх институтĕнче заочнӑ вĕренсе инженер-экономист дипломне илчĕ. Сахал мар çавӑрттарчĕ суту-илӳре. Ултав серепинчен çăмӑллӑнах майлашӑнса тухса шӑвӑнчĕ те колхоз председателĕнче ĕçлесе пӑхрĕ. Патшалӑхран укçа кивçен иле-иле курӑмлӑ япаласемех тума пултарчĕ. Юлса пыракан колхоза тӑвалла туртса хӑпартнипе, обществӑлла çурт-йĕр нумай лартнипе, ялта водопровод тунипе палӑрчĕ районта. Ӑста организатор, пуçлӑ экономист, чӑннипех хресчен чунлĕ шухӑшлавçă ĕнтĕ Усламçă Прухӑрĕн ачи. Анчах темле шабашниксемпе çыхланса кайса мĕнпур пек тунӑ ырлӑхне тикĕтпе вараласа хучĕ. Суд таврашĕ пулмарĕ. Хӑтӑлчĕ. Тĕп бухгалтер, тĕп экономист, тĕп инспектор... Ӑçта кӑна çитмерĕ-ши вӑл çакӑн хыççăн. Пур çĕртен те хӳрине вараласа, анчах капкӑна хĕстермесĕр шӑвӑнса тухать. Питĕ хĕрӳллĕн тытӑнать Усламов пур ĕçе те. Çынсене тӳрех тĕлĕнтерсе пӑрахать. Пуçлӑхсем те ӑна ырлама пуçлаççĕ. Хӑйĕн пурнӑç ырлӑхĕн карти умне çитет те вара, ултав алӑкне яриех уçса ярать. Кама та пулин чике тӑршшĕ лартмасӑр чунĕ канмастех унӑн. Черетлĕ ĕç хӑйне услам пама тытӑнсан, çăварне хӑлха таранах карса ахӑлтатать. Тĕп тĕллевĕ, ĕмĕчĕ çавӑ çеç. Халĕ акӑ вӑхӑчĕ вĕсем валли шӑпах вырӑнлӑ килсе тухрĕ. Нэпмансен тымарне пулӑхлӑ шĕвек йӑкӑртатса юхса анчĕ те, йӑхĕсен йывӑççисем çĕнĕ папка кӑларма пуçларĕç, вырӑнӑн-вырӑнӑн ахӑрсах ешерсе чечекленсе кайрĕç. Усламçă Прухӑрĕн Макарĕ те район çийĕн кӑна мар, республика тулашне çитиех сарса ячĕ çăмлӑ аллисене.

— Мĕн, илтмерĕн-им, Михаил Пантелеевич?! — тепĕр хут

хыттӑнрах ыйтрӗ Усламов. — Бизнес тӑвасшӑн.

— Илтрӗм-ха, хӑлхасӑр мар. Анчах... шухӑша кайрӑм. Ачи эсӗ питӗ тавҫӑрулла, хӗрӳ, сана ҫавнашкал интереслӗ ӗҫ кирлине пӗлетӗп. Самана вӑхӑчӗ хӑех тӗл килтерчӗ пуль сана кооператси юхӑмӗпе. Иксӗр те пӗрне пӗри йӑлл кулсах алӑ патӑр.

— Мӗн хӑрана пек турткалашса ларатӑн тата? Махинатор мар эпӗ, комбинатор ҫеҫ. Ӗҫ юррине ҫыхӑнулла пӗрлештерме килӗшӳллӗ янраттарма пултаратӑп. Честнӑй усламҫӑ, пӗр сӑмахпа каласан, совет кооператорӗ. Сире социализм тума пулӑшакан. Пӗлетӗн-и, патшалӑха пиртен мӗн чухлӗ пулӑшу пулать? Хамӑр республика бюджетне ҫулталӑкра виҫӗ миллион услам пама палӑртатпӑр. Халӗ тир тутарма мӗн чухлӗ ҫын Хусана йӑкӑртатать. Малашне ман пата, йӳнӗрех хакпа тутарма, ҫӗлетме, ҫӳрӗҫ. Заказ халех мӑй таран. Мастерской лартма ҫӗр лаптӑкӗ тата стройматериал кирлӗ. Пире ирӗк парӑр ҫеҫ, ыттине хамӑрах майлаштаратпӑр. Тупата, ялта хамӑр шутран ача сачӗпе коммуналлӑ мунча лартса паратӑп. Лавкки те хамӑрӑн пулать.

— Аҫунтан вунӑ хут та ирттеретӗн капла эсӗ, Макар Прохорович. Ҫакна пӗлесшӗн. Кала-ха, Шупашкарта кӗрӗк кооперативӗпе мӗншӗн ӑнмарӗ сан? Панкрута тухмарӑн пуль те?

Усламов пуҫа пӑркаласа кулса ячӗ те ҫамкине шаккаса кӑтартрӗ:

— Ҫак ӑс кутамккине мӗн тума туса панӑ-ши мана аттепе анне? Панкрут пулма-и? Ҫу-ук. Ку таранччен ҫут пӑр ҫине ҫара куҫпа ларса курманччӗ-ха. Эпӗ ҫавӑрттарнӑ укҫа миххисем чухлӗ эсӗ, тем тесен те, хӑвӑн кантурӑнта хут купи ҫавӑрттарса курманах. Итле, ман унта ательене пӑхӑнмаллаччӗ. Хӑвах пӗлетӗн, Усламҫӑ Макарӗ ирӗке юратать. Хӑй хуҫа пуласшӑн.

— Саккунӗ пур та ӗнтӗ, хирӗҫлеймӗп, ыйтӑвне ӗҫтӑвком ларӑвне кӑларӑпӑр. Мастерской тума вара халлӗхе май ҫук. Титула кӗртмелле малтан. Унта вара, ҫав списокра, сан объектусӑрах тем те пур. Тӑхта. Хӑвӑн пултарулӑхна кӑтарт. Эсӗ хӑвах тем те ҫавӑрттарма пултаратӑн. Миххи-михxи укҫупа перкелеш. Выля. Вилсен, пурпӗрех пӗрле илсе каяймастӑн.

— Виличчен ырӑ курса юлас. Маншӑн хӗпӗртесе, атте хӑйӗн ӗмӗрне тӑстӑр. Масар тӑвайккинче ясмӑк яшки ҫинине астӑватӑн-и?

— Халӗ пулсанччӗ вӑл. Акмаҫҫӗ вӗт нихӑш колхозра та.

— Колхозсем акмаҫҫӗ-тӗк, эпир акатпӑр. Колхозран тара

илнĕ аллă гектар çĕр çинче, хамăр кооператив çынnисемпе, ясмăк та, хуратул та ӳстеретпĕр, утар туса вĕлле хурчĕ ĕрчететпĕр, пĕве пĕвелесе пулă хуçалăхĕ йĕркелесе яратпăр. Пире хамăра та, колхоза та, патшалăха та усă пулĕ. Сан аçусем, «ссылкăна ярса» алăпа сухалаттарсах тыpă ӳстерттеретчĕç пире унта. Вилмерĕмĕр эпир те. Чĕрех юлтăмăр. Сатту халĕ хамăр тара кĕрĕштеретпĕр çынсене. Колхоз хамăра тара парать. Трактор, лаша тата ыттине те туянатпăр та... Халăха пуйтаратпăр. Халăхшăн тăрăшатпăр. Çынна ăна ирĕклĕ ĕçлеме, суту-илӳ тума, ирĕклĕ пурăнма, ирĕклĕ туйма майсем туса памалла. Паянхи самана пире хăй алă тăсса парать. Тавах çав ырă чунлă этемсене.

— Ан кӳрен те эс, Макар Прохорович, парти уçнă çул пурпĕрех сан çулу мар. Такăнатăн эсĕ унта, пурпĕрех вĕçне çитиччен чупса тухаймастăн. Сан вăй-хăвату, сан чăтăмлăху çитмест патшалăх палăртнине пурнăçламашкăн. «Çĕнĕ пурнăç»... Ятне пĕлсех панă-ха. Эпир мар, эсир тăватăр пать çĕнĕ пурнăça. Пире ĕнтĕ хаçачĕ-журналĕ, телевиденийĕ-радиовĕ мĕн кăна каласа вăрçмасть-ши? Йăнăш çулпа пыратпăр иккен. Ленин кăтартнă çулран пăраннă пулать эпир. Ирĕклĕ кооператорсен социализмĕ тин пуçланать...

— Так, так, шухăшлаттарать-ха апла. «Кооператоци çинчен» çырнă статйинче мĕн каланăччĕ-ха Владимир Ильич? Астăвас-тăн-и?

— Эс, мĕн, мана экзамен тыттарма килтĕн-им? Пĕлетпĕр. «Строй цивилизованных кооператоров при общественной собственности на средства производства, при классовой победе пролетариата над буржуазией — это есть строй социализма», — шакăртаттарса пачĕ Турпанов вырăсла.

— Ленин çĕршыври мĕнпур çынсене кооператива пĕрлештересси çинчен аса илтерсе тăнă. Мĕне пĕлтерет вăл? Эппин, производствăпа суту-илӳрен пуçласа йăла службисем, наука, культура, искусство тата тем таранах — пĕтĕм общество пурнăçне çав юхăма кĕртсе ямаллине пĕлтерет. Эпир вара ирĕксĕрлесе колхозсем тунă та, халăхран укçа шăйăрса илмелли потребительсен кооперацине ячĕшĕн йĕркелесе янă та... «социализм турăмăр!» тесе трибуна умне тухса тĕнче илтмелле кăшкăрнă. Производство пурлăхĕ çинчен Энгельс мĕн каланине те, социализмăн тĕп шухăшĕ пирки Ленин мĕн вĕрентнине те маннă.

— Эсĕ пролетариллĕ патшалăх малтанлăха кăна производ-

ство пурлăхĕпе пуç пулса тăма пултарни çинчен Энгельс каланине аса илтĕн-и?

— Паллах. Майĕпен çав пурлăхпа хуçа пулма пăрахса Ленинăн коопераци шухăшне пурнăçа кĕртнĕ пулсан-и? Производство пурлăхĕ халăх аллине куçнă пулĕччĕ, вара классен экономика никĕсне аркатмалли майсем ытларах тухса тăратчĕç, пролетариат пуç пулса тăрас май та кирлех марччĕ. Коопераци ĕçне ушкăнпа демократи никĕсĕ çинче ертсе пыратчĕç пуль. Пĕрлешсе пурлăх-ырлăх тăвакансем вара хăйсен вăйне, пурлăхне, ĕçне никама та ярса илтермĕччĕç.

— Кооперацин ушкăн интересĕнче кашни çын интересĕ тивĕçле шайра пулмаллине аса илтересшĕн ĕнтĕ эсĕ.

— Тĕрĕс. Пĕтĕм халăхпа патшалăх интересĕнче уйрăм çын интересĕ тĕтрелле курăнать. Кооператорсен вара... уçăмлăн. Хамăн интерес мана, умри шанăçа курса тăнипе, «Çĕнĕ пурнăç» кооператива халăх интересĕсемшĕн, патшалăх интересĕсемшĕн тухăçлă, усламлă тытса пыма вăй парса тăрать. Усламçă пулма пĕлес пулать, Ленин каланă пек, культурăллă усламçă пулма пĕлмелле. Суту-илӳ ĕçĕ вăл—чăн-чăн искусство пек çепĕç те туртăмлă ĕç.

— Эсĕ кунта чееленетĕн. Сан «Çĕнĕ пурнăçу» патшалăха вăй илтермелли кооператив мар. Вăл — хăвна пуйтармалли фирма. Патшалăх урлă ертсе пырас пулсан, чăнах та эсĕ калани пурнăçланмалла. Халĕ кунта сирĕн хăвăрăн интересĕрсем малта. Ĕненместĕп, шанмастăп эпĕ унашкал кооператорсен малашлăхне.

— Ывăннă эс пĕр çĕрте ĕçлесе. Вырăн улăштармалла сан. Вунă çул хушшинче сан чунна бюрократи чирĕ кĕшĕкласа пĕтернĕ. Вĕрен хамран ĕçлеме, пурăнма. Куç хальтерех урăх ĕçе. Унсăрăн пурнăç сана хăех аяккалла сирсе хăварать. Авă епле шăлать вăл халĕ çĕршывра партипе Советсен ĕçĕнчи бюрократсене! Вăраннă халăх хăйне валли ирĕклĕх сывлăшĕ шырать. Авă, хамăр ялта уçтартăр вĕт чиркӳ, нимĕн те тăваймарăр. Вырăнти власçем пулăшнипех çĕршывра икĕ пине яхăн çĕнĕ приххут хушăннă, терĕç. Акă, хамăр ялтах кооператив та уçтаратăр. Мирон Пименович та ял халăхĕшĕнех ĕçлет, Макар Прохорович та... Эсĕ те — Михаил Пантелеевич. Халăха пуп та, кооператор та, райсовет ĕçтăвкомĕн председателĕ те кирлĕ.

— Кирли — кирлех пуль, анчах... кам — мĕншĕн. Эсир çынсене пăтрататăр. Пирĕн вĕсене пĕтĕçтермелле. Эсир улталатăр. Пирĕн тĕрĕслĕх тупса ĕнентермелле. Эсир шантаратăр.

Пирĕн туса памалла. Пирĕн патах утать халăх. Ытларах. Пирĕннех пур ĕçе те йĕркелесе ертсе пымалла, пирĕннех халăх ырлăхĕшĕн кунĕн-çĕрĕн тăрăшмалла. Мĕншĕн тесен пĕтĕм влаç — Советсен аллинче. Сирĕн алăра мар. Сирĕн сăмах пылак, çул —шуçлак. Пирĕн сăмах, йӳçĕ пулсан та, тĕрĕс, пирĕн çул, тумхахлă пулсан та, пурпĕрех тĕрĕс çул. Унпа утакан халăх нихçан та такăнмĕ, кирлĕ çĕрех çитĕ. Пирĕн çулсем вара... ачалăхра пĕр пулнă пулин те, майĕпен юпленсе, уйрăлса кайрĕç. Кашниех уйрăм çулпа утатпăр, кашниех уйрăм шухăш-кăмăлпа пурăнатпăр. Пĕр чĕлхе тупаймăпăр нихçан та. Иксĕре те пулăшма пултарнă таран пулăшрăм. Пулăшас та çук та. Чунĕ çавнашкал ĕнтĕ пирĕн, Турпансен... Хамăр интереса халăх интересĕпе, патшалăх интересĕпе улăштарнă та...

— Эсир — коммунистсем. Сирĕн çапла пулмалла та. Хăвăр чуна партие патăр пулсан, хăвăр та унран мĕн илмеллине илнĕ-çке.

— Кала-ха, мĕн?

— Ят илнĕ. Пĕлетĕн-и, ят! Сан яту çапах та маннинчен хытăрах янăрать: районта та, республикăра та. Аçун та ячĕ мĕнлерех: «Пантелей — Тур панă телей». Халăх панă ят. Вăйлă.

— Хăвăрăн начар-им? «Прухăр — ухăр-купец» тесе хăвăнтан та кулатчĕç ача чухне. Халĕ ĕнтĕ...

— Лайăх хушаматах ман та. Мухтанмалли ятах. «Илья-пророк» тени те вăйлă вĕт, э? Перун Пимăнĕн Мирунĕ Турă хăвачĕпе ял клубĕ çине аслатиллĕ çумăр çутарса мĕнле сӳнтерчĕ культура вучахне? Сиссе те юлаймарăр. Хăвăрах пулăшрăр çав вучах вырăнне çурта çутмашкăн. Мирон Пимăнч Шупашкарти хваттерĕнчен тăван ялне автомашинăпа çăмăллăн вĕçтерсе çитет те, тум улăштарса, Мирун атте пулса тăрать. Халăх ăна пуççапать. Вăл—ялта, чиркӳ общининче чи хисеплĕ çын. Парти политикине ăнланатпăр-ха, лайăхах. Халĕ, хула çыннисене яла таврăнма мĕнпур майсем туса панă ылтăн тапхăрта, пирĕн мĕншĕн юлас-ха пурнăç чуппинчен? Тăван ял илемлĕхĕ пире те туртать.

— Эсир, ачисем, пултаратăр-ха. Темле юхăм, темле çĕнĕлĕх чуппи çумне те хутшăнма-çыпçăнма, ун вăйĕпе усă курса юлма пĕлетĕр. Турă пани пурах сирте.

Ашшĕ пекех çемçен хи-хи-хи! тесе кулса ячĕ Усламов.

Аçтан илтĕнет-ха çав сасă халĕ те. Михаил Пантелеевич радио янă-çке. Такам темле постановкăра питĕ тăрăшсах кулать. Ăна илтес мар тесе вăл приемника чарса лартрĕ. «Нивушлĕ тухаймăп? — шухăшларĕ вăл çирĕппĕн. — Шырлана

анса кайнă тесе пуçа усас мар. Ял кулли пулма çуралман. Лармалла мар çак тапăра. Чавмалла, çул уçмалла, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн те пулин малаллах куçмалла. Паянах аттепе курса калаçса район центрне çитмелле. Ирпе ирех райком секретарĕ чĕнет. Ял ыйтăвĕпе. Вĕсен çирĕп малашлăх палăртмалла, пурнăç таппипе пымалла. Район халăхĕн пурнăçне танатана кĕртсе ӳкермелле мар...»

Анчах та халлĕхе хĕпĕртемелли сахалтарах-ха. Председатель куçĕ умĕнчен хĕрӳ пурнăç ӳкерчĕкĕсем вĕлтлетсе иртрĕç. Район ялхуçалăхĕн пурлăхпа техника никĕсĕ иртнĕ çулсенче палăрмаллах ӳсрĕ темелле. Ку пĕр енчен савăнтарать те, тепĕр енчен... хурлантарать те. Ялхуçалăхне нумай укçа-тенкĕ хывнă ĕнтĕ, анчах унпа туллин усă курса пĕтерейменççĕ. Çĕршыв ĕнси çинче сăрă хурт пек ларма хăнăхнă колхозсен пуçлăхĕсем патшалăх ырлăхĕпе усă курса та аталанса юласшăн мар. Ялхуçалăх продукцийĕ сутнăшăн пустуй нумай хушса тӳлени вĕсене ĕçченлĕхе мар, юлхавлăха вĕрентет. Пурпĕрех тупăш пур-çке вĕсен, пурпĕрех укçине те, премине те малта пыракан хуçалăх пуçлăхĕсемпе специалисчĕсен шайĕнчех илеççĕ те. Çĕнетӳ тапхăрĕ çак танмарлăха пĕтерменшĕн сӳрĕксене ылхансах вăрçас килет Турпановăн та. Чĕрепе туять çак танмарлăх хурне, анчах пĕрре çавăрттарса янă та кăлтăрмача Мускавра, çаврăнать те çаврăнать вăл пушăлла. Патшалăх укçине начар хуçалăхсене ĕçлемесĕр парса пĕтерни тырпул тухăçне те, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине те ӳстерме пулăшмасть, вĕсен хăйхаклăхне çеç хăпартса ярать. Колхозсем аш-какай туса илессине чакарнă-и, сĕт сахалтарах суса илеççĕ-и, тырпул начар ӳстереççĕ-и — кашни çавнашкал тĕслĕх пиччĕшĕн сăмахĕсене аса илтерет: «Эп сире пĕрлех пĕр пушăпа çатлаттаратăп». Çав хуçалăхсем кая юлнишĕн, паллах, вăл та, райĕçтăвком председателĕ, айăплă. Вĕсене пулах çынсен сĕтелĕ тулли мар.

Хуçалăхсем вăраххăн аталанни, çынсем укçа-тенкĕ сахал ĕçлесе илни, пурăнма, ĕçлеме, канма тивĕçлĕ майсем çукки ял халăхне хуланалла тартать. Тĕпленрех шухăшласа пăхрĕç те вĕсем — тĕлĕнчĕç. Юлашки вунă çул хушшинче районти ялсенче халăх йышĕ пилĕк пин çын е вунпилĕк процент чакнă. Ĕçлекенсен йышĕ хухать. Вунсакăр çултан пуçласа çирĕм тăвата çула çитиччен кашни пин хĕрарăм пуçне пин те тăватçĕр арçын тивет. Хăрушă цифрăсем вĕт кусем! Уяр кун аслати авăтнă пекех янăрарĕç вĕсем сессире. Çыншăн, унăн пуласлăхĕшĕн ытларах та ытларах тăрăшмаллине, унран хак-

лăрах та кирлĕрех ĕç халлĕхе районта çуккине палăртрĕç депутатсем.

Шухăшлать те тĕплĕнрех Турпанов, чăн та, район Совечĕ, унăн ĕçтăвкомĕ, ял Совечĕсем ялсен социаллă аталанăвне вăхăтра кирлĕ хак паман. Колхозсенчен çуллен ытларах та ытларах продукци ыйтнă, ял çынни мĕнле сывлăшпа сывлать, мĕнпе савăнса пурăнать — халăх нушисем хыçала тăрса юлнă. Районти аллă сакăр ялтан вăтăрĕшĕнче медицина пункчĕ çукки те, ача сачĕсене тĕп усадьбăсенче кăна уçни те, пӳртçурт лартма пулăшманни те, çынсене, уйрăмах хĕрарăмсене, çулталăк тăршшĕпех ĕçлеме услови туса паманни те, комплекслă йышăну пункчĕсем ячĕшĕн кăна уçни те, вунултă ялта магазин çукки те, клубсемпе культура çурчĕсен чăн-чăн культура вучахĕ пулса тăманни те, фермăсенче ал вĕççĕн ĕç хуçаланни те пĕрлех пулăшаççĕ ĕнтĕ çамрăксене тăван вырăнпа сывпуллашма. Халăхра иккĕллĕ шухăш çуратма та çак пăтăрмахсемех пулăшаççĕ пуль çав.

«Сăмахпа каласа та, пысăк саспаллисемпе çырса та «Пирĕн тĕллев — коммунизм!» тесе вĕçĕмсĕр чĕнетĕр, çав вăхăтрах хăвăр пире илĕртӳллĕ çулпа пуш кутамкка çактарса çаруран, выçă хырăмпа уттаратăр. Хăçан улталама пăрахатăр халăха?» — ним вăлтмасăр куçранах каларĕç Турпанова иртнинче пĕр яла пуху ирттерме кайсан. Пухăвне кивĕ лаша витинче ирттермелле пулчĕ. Мĕн тавăрса калăн ĕнтĕ çакăн хыççăн вĕсене.

«Механизаци ĕмĕрĕнче фермăра алăпа ĕне суса ларма, çĕклемпе апат йăтма, кĕреçепе тислĕк хырма ухмах мар-ха эпир, хулана кайсан çич сехет ĕçлетпĕр те савăнса кулса çеç çӳретпĕр». «Гектартан вуник центнер тырă илнипех хырăма тăрантараймасть пирĕнне колхоз, халĕ Сталин вăхăтĕнчи мар, нуша капкăнĕ лартман пирĕн ума, укçа ытларах кирлĕ, хула çеç халлĕхе пире тивĕçтерет» «Çӳç вăрăмланса кайрĕ, сухал пупăнни пек, телевизора темле юсаттармалла». «Йышăну пункчĕ йышăнмасть çав пире, ăна эсир ялшăн мар, отчетшăн, хăвăршăн уçнă пуль». «Çăкăр сутмаççĕ, кирпĕч, хĕçтимĕр таçта туянмалла...»

Мĕн чухлĕ çивĕч ыйту параççĕ ялта. Йăлтах — ĕçпе йăла ыйтăвĕ. Пурте — вырăнта татса памаллисем. Татса параканни е татса парас текенни кăна таçта. Паянах тивĕçтермелли те, ыран тумалли те пур вĕсем хушшинче. Сăмахран, фермăсенчи ĕçе çăмăллатма пулмасть-ши? Кашни колхозра çуртйĕрпе коммуналлă служба йĕркелеме кам тытса чарать? Ял

Совечĕсен территорийĕнчи экономикăпа социаллă аталанăвĕн пилĕкçуллăх планĕсем тăрăх лайăхлатса пымалла-çке халăх пурнăçне. Анчах... камăн? Кам уншăн ответлă — çавăн. Вăл шутра — Михаил Пантелеевичăн та.

Социаллă ыйтусемпе йăла сфери ĕнтĕ вăл халĕ чи малти вырăна тухса тăнă. Ахальтен мар районти агропромышленность комплексне аталантарма уйăрнă укçа-тенкĕн утмăл процентне çавăнта каймалла. Çав виçĕ миллионпа хуçалла усă курма пĕлмелле çеç. Район Советĕнче ăна председательпе пĕрлех ытти явапла çынсем те лайăх пĕлеççĕ, анчах... Ял çыннисене тивĕçтерсе тăрассин шайĕ пурпĕрех хуларинчен начартарах пулса пырать. Палăрмаллах пĕчĕк вăл. Ял çине çавçавах авалхилле пăхаççĕ.

Тем тĕрлĕ йышăну та пур темелле ĕнтĕ ял çыннин пурнăç шайне çĕклес тĕлĕшпе. Вĕсем пурнăçланса пыманни çеç ун умне чаркăç хыççăн чаркăç кăларса тăратать. Вĕсене сирсе яма е вĕсем урлă сиксе каçма пултараять-и-ха паянхи ял çынни? Çак ыйтусем тăнран яраççĕ Турпанова. Ун пек чухне вăл эртелпе, халăхпа калаçать, канашлать. Вырăна тухса çӳренĕ хыççăн çурт-йĕр тăвас ыйту пур çĕрте те çивĕч пулнине курса-туйса ăнланчĕ. Çавăнпа райĕçтăвкомра «Çурт тума çăмăл-и?» ыйтупа тĕлпулу ирттерчĕ. Харпăр хăй валли çурт тума тытăннă çынсемпе строительство материалĕ уйăрса парассишĕн яваплисем хушшинче усă калаçу пулса иртрĕ. Ку мероприяти мĕн чухлĕ те пулин пулăшу парасса шанать вăл.

Çĕнĕ çурт-йĕр лартасси — хăйне майлă проблема. Çав вăхăтрах пушанса юлнă пӳртсемпе усă курасси — тепĕр йышши проблема. Виççĕр çирĕм пилĕк пӳрт шутласа кăларчĕç унашкаллисене районĕпе. Татса памаллах Советсен ку ыйтăва та.

Пĕчĕк ялсем районĕпе çурри ытла. Вĕсен аталанăвне халĕ райĕçтăвкомра уйрăмах тĕп вырăна хума шутлаççĕ. Çапах та пушă пӳртпе пĕчĕк ял проблеми — район проблеми кăна мар. Пĕтĕм республика, Раççей проблеми вăл. Пуçпа тарăннăн шухăшламасăр çӳлтен хушса, ирĕксĕр йышăнтарса ял пĕрлĕхне аркатма пуçланă аслă пуçлăхсен пысăк йăнăшне халĕ ăспа кăна юсама пулать: кашни ялта ферма, машинăсен паркĕ, клуб, магазиҥ, йышăну пункчĕ, ача сачĕ, фельдшер пункчĕ уçмалла; кашни яла асфальт сарнă çулпа çыхăнтармалла; кашни ял çынни çине этемле, хресченле пăхмалла.

Социаллă танмарлăха халăх хушшинчен, çумкурăкне тымарĕ-мĕнĕпе тăпăлтарса кăларнă пекех, тасатмалла. Çапла шухăшлать, çав майпа тăрăшать те çав Михаил Пантелеевич

çĕршыв пурнăçне çĕнетӳ аслатийĕ кĕмсĕртеттернĕ вăхăтра. Çав аслати сассинче хăйĕн сассийĕ те пуррине, çил-тăвăлра çуначĕ тĕрекленнине туять-ши? Çĕнетӳ çуначĕ ытти çынсен те ан усăнтăрччĕ, çирĕплентĕрччĕ тесе мĕн-мĕн тумаллине куллен палăртать.

Унăн хăйĕн яланах мĕнле те пулин интереслĕрех, çĕнĕрех, йывăртарах ĕçпе аппаланас килет. Ачаран хăнăхнăран-ши ку? Чун-чĕринче ашшĕ-амăшĕ çав сӳнми кăвара чĕртсе хăварнăран-ши? Ачалăх шаймăклăхĕ халĕ те асрах. Ак çакăнта, умри çырмара, Усламçă Макарĕпе Перун Мирунне хисте-хистех Пĕрремĕш Петĕр флотилийĕ пек сулă флотилийĕ тутарнăччĕ. Хăй мĕн шутланине, мĕн ĕмĕтленнине унăн темшĕн-çке ыттисене те тутарас килет, çав шухăшпа нумайрах çынсене хавхалантарса чĕртес килет. Çав кăмăлпах этнографи музейĕ, картинăсен галерейи уçтарчĕ, тăмран савăт-сапа тăвассине йĕркелесе ячĕ, çил арманĕсене юсаттарчĕ. Шупашкарта «Шыв арманĕ» опера курнă хыççăн унăн ĕлĕкхи пек шыв арманĕсем çавăрттарас шухăш та çуралчĕ.

Анчах та ăна лăпкăлăх ытамĕнчен ниепле те хăтăлайман пуçлăхсемех тăнран ярасçĕ. Çав чир вĕсем хушшинче ытла та шала кайнă. Вăл мĕнпур интереса кăшлать. Сӳрĕклĕхпе мăранлăх кăшăлĕнчен чи малтан пирĕн хамăрăн хăтăлса тухмалла, ун хыççăн халăха та уçă çул çине кăлармалла. Лăпланса ларма май çук, ĕçлемелле, çĕнĕлле ĕçлемелле, тесе вĕрентет те çав вăл хăйсене пăхăнакансене...

Лар халь лăпкăлăхпа сӳрĕклĕх, мăранлăх лачакинче. Асат Петĕрĕн ачи, колхоз хуçи, çаврăнăçуллăрах пулнă пулсанах, Масар тăвайккине шырлансем çисе каяс çукчĕ. Куç курмасть-ши çĕр суранне? Пурнăçлас килмест-ши мĕн хушнине? Турпановсем е шупашкарсем килсе пӳлсе парасса кĕтеççĕ-ши?

Чавать, чавать Турпанов... Тӳпе ик еннелле çурăлса кайнă пек çуталать те, пуç тăрнех хăватлă вăй халтăртатса анать. Пĕшкĕннипе уçăлса кайнă пилĕке йĕпе пăрçасем шапăрр çитсе çапăнчĕç. Уксахласа утса çаврăнчĕ те вăл машина тавра, руль умне кĕрсе ларчĕ, хăватлă мотора кĕрлеттере пуçларĕ. Акă, тинех тапранчĕ! Унтан каллех ларчĕ. Улаттара-улаттара кăларчĕ те «Атăла», ывăнса çитнĕскер, çамки çинчи тарне аллипе шăлса тасатрĕ. Çумăр витререн тăкнă пек чашлаттарать. Тата мĕн амакĕ пулчĕ? Пăх-пах-пах турĕ те мотор чарăнса ларчĕ. Стартер çине пусса хăйăклаттарса пăхрĕ, çук, тапранмасть. Пăхса илчĕ те малалла, зажигани уççине сулахаялла пăрса хучĕ. Бензин стрелки нуль çинче ташлать. Хы-

тă пăлханнипе вăл Шупашкарта бензин ярса тухасси çинчен вуçех маннă иккен.

Çутçанталăк алхасать, пурнăç ташлать. Выçă «Атăл» вырăнтан тапранаймасть, унăн аманнă хуçи вăйсăр халпа тимĕр читлĕхре тул çутăласса, пулăшу килессе кĕтсе ларать. Çумăр чарăнсан та çуран утас пирки шухăшламалли те çук. Шыçнă чĕркуççи хутланмиех пулса ларчĕ.

Ялт! çиçрĕ те çиçĕм, çав самантрах хăнăхнă шавра çывăхрах, тăварах тăррăнст! тутарчĕ. Çĕр кисренсе илчĕ. Масар тăвайкки тăрринче, тĕттĕмлĕхе çурса, мăн çурта çутнă пек çутă йăлкăшрĕ. «Аçа çапрĕ. Усламçă Прухăрĕн йăмрине», — вĕлтлетсе илчĕ пуçра. Ăна вăл, хăйсене çавăнта çĕр касса панă хыççăн, лартнăччĕ. Турпанов лайăх астăвать пĕччен йывăç мĕнле асаппа ӳснине. «Юнашарах — юман ращи. Мĕншĕн вăрмана мар, уйрăм ларакан йăмрана тĕллерĕ-ха аçа? Вăл унта кирлĕрен ӳсменрен-ши? Пĕр-пĕччен, тăлăххăн ларнăран-ши? Çапрĕ те çунтарчĕ. Пĕтерчĕ. Вăрман вара юлчĕ. Вăрман кашлать. Вăл — вăйлă. Унăн пĕр-пĕр йывăçне аçа çапсан та ытлашши паллах мар. Те пĕлсех, те аташса алхасать çутçанталăк вăйĕ... Пурнăçра та çавнашкалах пуль çав. Халăха нимле вăй та хуçаймасть. Пĕччен çын, Усламов йышши, ун çумĕнче пурпĕрех хăçан та пулин пурнăç аçи айне пулса çунса каять», — тесе шухăшларĕ Михаил Пантелеевич тăвайккинчи мĕскĕн йывăç юлашкийĕ еннелле пăха-пăха илнĕ май.

Хыçалтан темле вăй пырса çапнипе машина майĕпен малалла куçма пуçларĕ. Руле тем чухлĕ пăрчĕ Турпанов, анчах ниепле те машинăна итлеттерейменрĕ. Çӳлтен юхса анакан çумăр шывĕ ăна каялла çавăрса айлăма çитерсе лартрĕ. Вăйсăр тимĕр купине тата ун ăшĕнчи халсăр этем çурине ялтăр-р çутатса пăхать те çӳлти Хăватлă вăй кăмăллăн халтăртатса кулса ярать.

Турпан Пантелейĕ çиçĕм çиçсе ямассерен куçне хупать. Хăлхара аслати сасси кĕрлет. Пуç çине, кĕлетке çине, мăшкăлланă пекех, Илья-пророк пĕлĕтрен чашлаттарса шыв тăкать. Умра, акă, тем кĕрлеме пуçларĕ. Куçа уçса пăхрĕ те вăл çиçĕм çуттинче, хăй патнелле капланса килекен хăватлă вăя асăрхарĕ. «Пĕве татса кайнă пулас», — шухăшласа илме ĕлкĕрчĕ старик.

— Пулăшăр! — хăйăлтатса тухрĕ вăйсăр сасă чĕре тĕпĕнчен.

Шыв пуçĕ кĕрлесе, сысна лапăркине тасатса çывхарать, акă

вăл Киремет çырминчи лачака танатине лекнĕ çынна вăйлă таппипе çĕклерĕ те малалла çавăрттарса кайрĕ, арман пĕви пуçне çитсе çапăнса, ăна çӳлелле ывăтса хăварчĕ.

Усламçă Çитăрĕсем ĕлĕк тарăн та сарлака çырмана çĕр хăпартса вăрăм пĕвеленĕ пулнă. Пĕве пуçĕ халĕ те дамба пек тăсăлса выртать. Ун çийĕн çул тунă. Çав çулпа çамрăксем чупса анаççĕ.

— Çын. Çын выртать!

— Кам-ши?

Электрицă хунарĕпе çутатса пăхрĕç.

— Турпан Пантелейĕ...

— Чĕрех-ши?

— Куçне уçрĕ...

Ватă çын тăрасшăн пулчĕ, анчах хускалнă-хускалман айлатса пуçне çĕрелле усрĕ.

— Атьсем. Ырă çынсем. Тархасшăн, пулăшăр... — пăшăлтатрĕ тути.

— Çиччас, çиччас. Акă, йăтатпăр та...

— Тăхтăр-ха кăштах, — терĕ Турпан Пантелейĕ вăйсăррăн.

— Мĕн пулчĕ? Мĕскер-ха тата?

— Сулахай кăкăр кĕсйине чиксе пăхăр-ха, тархасшăн. Хамăн алă çĕкленмест. Пур-ши? Вырăнтах-ши?

— Мĕн? Укçа-и? — тесе пĕри пиншак кĕсйинчен çут хутпа чĕркенĕ пĕчĕк хĕрлĕ кĕнеке туртса кăларчĕ.

— Укça мар... Партбилет...

— Çакă-и? Çутат-ха эс лайăххрах! Аха... Парти билечĕ, номерĕ... Турпанов Пантелей Павлович, 1900 çулта çуралнă, партие 1930 çулта кĕнĕ...

Йĕкĕт вулакан сăмахсене итлесе выртакан сивĕпе шăнса хытăрканă ватă коммунистăн куçĕсем чăл-чăл чĕрĕлчĕç.

— Пур-ха апла, юрать, тавах Турра. Вырăннех хурăр. Çумрах-ха апла партбилет. Пур-ха, пурнатпăр-ха. Вилместпĕр...

Масар тăвайкки еннелле иртсе кайнă çумăрăн аслати сассийĕ ватă çын сăмаххисемпе хутăшса янăрарĕ.

Киремет çырми кĕрлет, Киремет çырми чĕрĕ сасăпа шавлать.

1989 ç.

✦

# Тымарсăр юрату

## КАЛАВ

Библиотекăна ĕнер илсе килнĕ çĕнĕ кĕнекесене пăхма тесе алăк патнелле утма пуçланăччĕ çеç Крутов, тул енчен такам шаккани илтĕнчĕ. Вăл хăйне хирĕç кĕрекен Лина умĕнче тăп чарăнчĕ, сиссе те юлаймарĕ... тутине хĕрарăм тути пĕçертнипе каялла чакрĕ.

— Салам, Макçăм, — терĕ Лина ăна ыталаса. — Ан чĕтре, ан хăра, çисе ямастăп, арăму валли те. колхоза валли те хăваратăп. Чулхуларан Вăрманкаса таврăннăранпа сан куçунтан çакнашкал хирĕç тăрса пăхмалли çук. Паян ятарласах Тарăнвара килтĕм.

Максим Максимович лăпланчĕ те Линăна сĕтел çумĕнчи пукан çине алăран çавăтса кайса лартрĕ, пĕр вăхăт ун куçĕнчен шăтарасла пăхрĕ. Сăнĕнчен ватăла пуçланă çамрăк хĕрарăмра вăл ыйтуллă кăмăл туйăмĕ пуррине сисрĕ.

— Пире, Макçăм, ĕмĕр пĕрле пулма турă çырнă пуль.— аллинчи улăм шлепкипе хулăн кĕнекине юнашар пукан кĕтессине хучĕ Лина.—Çулсем ялан пĕр çĕре тухаççĕ: юнашар.

— Чукун çул пек-и? — терĕ Крутов. — Рельсиссем юнашарах. анчах — яланах уйрăм.

— Никам та пырса тĕкĕнмесен, паллах, пĕрлешеймеççĕ. Иккĕн икĕ енчен хирсен...

— Апла хуçăлаççĕ вĕсем, Лина, никама кирлĕ мар хурçă татăкĕсем çеç пулса юлаççĕ.

— Тепĕр хут шăратсан вĕсене. рельса тусан, каллех чукун çул хывма юраççĕ-çке? — Максим Максимович куçĕнчен ыйтуллăн пăхрĕ вăл.

— Вĕсенчен вара урăх япала пулать.

— Хурçă — хурçах ĕнтĕ, унăн паллăлăхĕ пурпĕрех улшăнмасть. Пирĕн те.

— Эх, Лина, Лина, — хĕрарăма пуçĕнчен шăлса илчĕ те Крутов чÿрече умне кайса тăчĕ, — ăнлантăм сана, юратăва та тепĕр хут шăратса çĕнетме пулать тесшĕн ĕнтĕ эсĕ.

Лина утмăлтурат чечекĕллĕ кĕпине чĕркуççи çинчен çĕклеса майларĕ, çара ÿтне хупларĕ, пуçне каçăртса çивĕтне хыçалалла ÿкерчĕ, мăччаналла пăхса, Максим Максимовичран ыйтрĕ:

— Эсĕ ху тата: «Парти ĕçĕпе çыхăнтăм та, хĕрарăмсене вуçех мантăм, тап-таса, турă пек çылăхсăр», тесшĕн пуль-ха.

Крутов чĕнмерĕ. Лина вара хурланса малалла каларĕ:

— Тап-таса тесшӗн-и? Ҫук! Мӗншӗн Тарӑнварта ман ҫуралнӑ куна ман ҫумра ирттертӗн? Мӗншӗн Чулхулара, эпӗ майран уртӑнсан та, тӗртсе ямарӑн? Мӗншӗн паян та алӑк умӗнче кӗтсе илтӗн? Эпӗ чуптунине те хирӗҫлемерӗн? Пӗлетӗп эпӗ сана... эсӗ мана юратма пӑрахманнине... куҫунтанах ӑнланатӑп. Ҫавӑнпа халӗ мана хирӗҫ пӑхма хӑратӑн. айӑккӑн ҫаврӑнса тӑтӑн. Пӗл: эпӗ те сана юратма пӑрахман, пӑрахмастӑп, нихҫан та! Эсӗ ман чӗрери чи вӑйлӑ, чи хӗрӳ, чи юратнӑ арҫын. Шӑрантӑр юрату, пурнӑҫ хуранӗнче шӑрантӑр пирӗн юрату. Саншӑн эпӗ урӑх ҫын пулин те, маншӑн эсӗ ҫав Макҫӑмах, хӑмӑшсен юррине итлесе анкарти хыҫӗнче тупнӑ юратӑвах. Ҫуралнӑ кун эсӗ мана нихҫанхинчен туйӑмлӑ ыталарӑн, ман ҫумма пӗрремӗш хут ҫыпҫӑнтӑн. Паян та манӑн ҫуралнӑ кун...

Максим Максимович ӗсӗклекен Лина умне пырса тӑчӗ, ӑна тытса ыталамах шутларӗ, анчах вӗриленнӗ ҫанҫурӑмне вӑхӑтра сивӗтсе хытарчӗ, сӗтел хушшине хӑвӑрт кӗрсе ларчӗ, ҫамкине ывӑҫ тупанӗсемпе хупларӗ, пуҫне ҫӗклемесӗрех:

— Чӗререн саламлатӑп. Лина, — терӗ Крутов, — анчах халӗ манӑн сан валли утмӑлтурат ҫыххи ҫуккӑ-ҫке, каҫар ӗнтӗ. Паян эпӗ сана хамӑн ӑшӑ кӑмӑла ҫеҫ парнелеме пултарӑп. Паян эпӗ сан мар — каччӑ мар...

— Ҫӗкле-ха пуҫна, Макҫӑм, — ачашларӗ Лина ӑна. — Пӑхха ман ҫине? Эпӗ паян хам та улӑхри чечек вӗт — утмӑлтурат чечекӗ? Юри сан пата хӗр чухне Тарӑнварта тӑхӑннӑ кӗпепе килтӗм. Ҫавна та сисмерӗн-и? Аса та илмерӗн-и? Эпӗ паян сан кӑмӑлупа ҫӑвӑнасшӑн. Макҫӑм, эсӗ темшӗн кирлӗ мана. Сансӑр ҫунатӑп. Пӗлетӗн-и, туятӑн-и ҫавна? Паян эпӗ... Кӗтетӗп. Ҫуралнӑ кун-ҫке ман. асту ҫавна, ан асаплантар. Юратӑва шӑратас килет, хуҫӑлнӑ хурҫӑ рельсӑна шӑратнӑ пекех. Ҫӗнетес килет, санпа пӗрле ҫӗнетес килет пурне́ те́...

Пиҫиххи ҫумне хӗстернӗ чечеклӗ пӗчӗк тутӑрӗпе куҫҫульне шӑлса илчӗ те Лина пуҫне сӗтел ҫине ӳкерчӗ. Максим Максимович пӳлӗм тӑрӑх каллӗ-маллӗ утрӗ, кам та пулин килсе кӗресрен те шикленчӗ, телефон шӑнкӑртатнине те хӑлхана чикмерӗ, каллех хӗрарӑма лӑплантарма пуҫларӗ:

— Эх, Лина-Мина, шеллетӗп эпӗ сана. Ытла та ҫӑмӑл, ҫемҫешке япаларан пулнӑ иккен сан юратӑву, ӑна Тит Милов шӑратрӗ, офицер шӑратрӗ, тата...

— Ан кул манран!—шывланнӑ куҫӗпе тарӑхса пӑхрӗ Лина. Пӳлӗмре пӗр хушӑ ҫын сасси илтӗнмерӗ.

— Ҫапла. Лина, — терӗ ассӑн сывласа Крутов, — каччӑпа

хĕр чухне тĕл пулнă пулсан та, эпир халĕ урăх çынсем, чукун çул рельссисем пекех, нихăçан та пĕрлешейменĕпĕр. Каçар мана тĕрĕссине каланăшăн. Сана та манман эпĕ... Çапах... арăмах юрататăп. Маруç умĕнче айăпа кĕрес шухăш çук. Килĕшмĕ тек пире унашкал хăтланни. Лăплан. Упăшкунах кĕтсе ил. килет вĕт вăл отпуска, кĕçех...

Çак сăмахсене чăтаймасăр Лина ура çине сиксе тăчĕ, тайăлса, тайăлса алăк патнелле утрĕ, унтан каялла çаврăнчĕ; пукан çинче выртакан улăм шлепкипе кĕнекине васкавлăн пырса илчĕ, пӳлĕм хуçине пуç тайрĕ:

— Тавтапуç ырă кăмăлушăн, Максăм. Сан умăнта ухмахлантăм, чуна уçса патăм. Йышăнмарăн мана. Кăмăлна та парнелемерĕн. Тин пĕлтĕм, хытнă сан чуну, авă, сĕтел çинчи çав пуçлăхăн тимĕр кĕлетки пекех. Пурăн, хăвăн çирĕп идеюсемпех пурăн. Пурăн, хăвăн чипер арăмупах пурăн... Манăн пурпĕрех Максăм пур. Максимка! Санăн юну вылять унра. Манăн çеç мар вăл — санăн та! Сансăрах, чăн-чăн ашшĕсĕрех, упăшкасăрах, суя ашшĕсĕрех, уявлăпăр çуралнă куна...

Сĕтел хушшинчен сирпĕнсе тухнă Крутова хирĕç Лина шывланнă куçпа пăхса тăчĕ-тăчĕ те, чăтаймарĕ. пуçне ун кăкăрĕ çине хучĕ:

— Мĕншĕн тарăн тымарсăр юрату пулчĕ-ши ку пирĕн?..

✦

Хакě 40 пус

Индекс 73987

Библиотека «Ялава» № 3 (99)

ДОРОГОЮ ОТЦОВ

На чувашском языке

Редактор П. К. ЛЬВОВ
Тех. редактор О. Н. ВОРОБЬЕВА

Учредитель — издательство Чувашского рескома КПСС

Сдано в набор 24.12.90. Подписано к печати 13.02.91.
Формат 70х100$^{1}/_{32}$. Объем 3,7 уч.-изд. л. Заказ № 5463
Тираж 10.000. Цена 40 коп. За пределами республики 45 коп

Типография издательства Чувашского рескома КП РСФСР
428019, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.